

# ЯЛАВ

№ 11 НОЯБРЬ 1954



**«ОКТЯБРЁН МАЛТАНХИ КУНĔСЕМ».**

Г. К. Савицкий художник картинин фрагменчĕ.

**ЖУРНАЛ ХУПЛАШКИН ПЕРРЕМĔШ СТРАНИЦИНЧЕ: «Совет влаçĕ мир çинчен кăларнă пĕрремĕш декрет».**

А. Сегал художник картининчен.

**ХУПЛАШКАН ТАВАТТАМĔШ СТРАНИЦИНЧЕ: Улатăрти пăравуссем юсакан заводри слесарь-автоматчик Михаил Гущарин. Вăл нумаях пулмасть 1959 çулхи производство планне тултарнă.**

Н. Матюхин фотоÿкерчĕкĕ.

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

# ЯЛАВ

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЮЗĔ УЙĂХРА ПĔРРЕ КĂЛАРАКАН
ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂПА ОБЩЕСТВĂЛЛА-ПОЛИТИКĂЛЛА ЖУРНАЛ

№ 11 (107)
НОЯБРЬ
1954

# ПĔТĔМ ХАЛĂХ УЯВĔ





Аслă Октябрь уявĕн кунĕсенче ăçта пăхан унта — хĕрлĕ ялавсемпе транспарантсем, партин Центральнăй Комитечĕн чĕнĕвĕсем, диаграммăсемпе плакатсем, Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин руководителĕсен портречĕсем. Пур çĕртен те хĕрлĕ хăмач çине çырнă «37» цифра курăнать. Каçхине вăл, электричество хунарĕсемпе йăлтăртатса, кĕрхи тĕттĕм çанталăка çутатать. Çак цифра совет Российинче Аслă Октябрь революцийĕ пулнăранпа вăтăр çичĕ çул çитнине кăна мар, ирĕклĕ те телейлĕ пурнăçпа пурăнакан совет халăхĕ вăтăр çичĕ çул хушшинче тунă çитĕнӳсене кăтартса парать.

Кăçал совет çыннисем Октябрь уявне нихçанхинчен те тухăçлăрах ĕçлесе кĕтсе илчĕç. Вунă уйăх хушшинче промышленность продукцийĕ, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 12 процент ытларах туса кăларнă. Ялхуçалăхĕнчи çитĕнӳсем те пысăк. Ноябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне колхозсемпе совхозсем государствăна тырă памалли тата сутмалли плана 100,1 процент тултарчĕç. 17 миллион та 430 пин гектар халиччен сухаламасăр выртнă çĕрсене сухаланă, çерем уçнă.

Эпир совет государствин тулашри мирлĕ политикин çĕнĕ çĕнтерĕвĕсемпе чунтан савăнатпăр. Çĕр чăмăрĕ çинче совет халăхĕн шанчăклă тусĕсем йышлансах пыраççĕ.

Пирĕн социализмла Тăван çĕршыв вăтăр çичĕ çул тултарчĕ. Вăхăт малалла шăвать. Аслă Октябрь шурăмпуçĕ—коммунизм патне чĕнекен çутă шуçăм çултан-çул хăватлăрах ялкăшса çуталать.

## ЯЛЙЫШĂМСЕНЕ

Георгий ЕФИМОВ

Ялйышăмсем! Çулла хĕвелпелен
Тăван хире тухаттăрччĕ куллен.
Уй-хир янратчĕ сирĕн юрăпа,
Комбайн сасси таттисĕр илтĕнетчĕ.
Каяттăр хулана çĕн тырăпа,
Шоссе çинче тусан çеç çĕкленетчĕ.
Уй-хирĕмĕр хĕрӳ ĕçрен пушанчĕ,
Таса тырпулăсем халь кĕлетре.
Яш-кĕрĕмсем шутлаççĕ халь:
«Аванччĕ
Хавасла туй пулсан çак эрнере».
Маттурăмсем! Кăçал тăван ялта
Кам Ылтăн Çăлтăр çакĕ-ши тата?
Пуян уяв! Çавăнпала чунтан
Сирĕнпеле пĕрле эп савăнатăп.
Паян уяв! Сире пур кăмăлтан
Эп ытамлатăп. Ăшшăн саламлатăп:
— Эсир акса хăварнă тырă-пулă
Кашни çул тулăх ӳстĕр уй-хирте.
Ялйышăмсем, ялан хастарлă пулăр,
Çĕршывăма ĕçпе çирĕплетĕр.



Ӳкерчĕксенче: 1. Мускав гарнизонĕнчи пехота Хĕрлĕ площадьри парадра. 2. Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекен рабочисем уява вунултă союзлă республика ялавĕсемпе тухнă. 3. Шупашкарти ĕçсыннисем уявра.

# ОКТЯБРЬ ТĂВĂЛĔ

Стихван ШАВЛЫ

1941 çулта Стихван Шавлы «Çиçĕм çиçет» ятлă трилогин пĕрремĕш кĕнекине пичетлесе кăларчĕ. Унта поэт çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш ялĕн пурнăçне сăнласа кăтартать. Юлашки вăхăтра вăл трилогин иккĕмĕш кĕнекине («Аслати кĕрлесен») çырса пĕтерчĕ. Ку поэма пире 1917—1919 çулсенчи революциллĕ ĕçсемпе паллаштарать. Çак номерте эпир çав кĕнекен пуçламăш сыпăкне пичетлетпĕр.

Мĕскер çав, пĕлĕт пек, килет?—
Юнать, макрать, юрлать, кулать,
Çĕр пин караппăл пек кĕрлет,
Çĕкленнĕ тинĕс пек тапать...
Сăна эс: çĕтĕк çăпаталлă,
Çире—сăкман та шăлапир,
Йĕс турасем витми сухаллă,
Ырхан шăмшаклă-çке ўт тир.
Куратни, сенĕк йăтнă, пуртă,
Чукмар, пăшал, хĕçли те пур,—
Çурхи пăр пек тапраннă пурте!
Пит-куç хаяр, пит-куç сатур...
Çĕкленчĕ халăх, тухрĕ каррăн,—
Çĕклерĕ Ленинла хăват.
Илтетни, Смольнăйăн хыпарĕ
Вĕçрен вĕçе, çил пек, каять:
Кăшкăрать хăй акăш-макăш:
«Çĕнтертĕмĕр, кисретрĕмĕр!»—тесе.
«Питĕрпурта ĕçхалăхĕ çĕнтернĕ!
Власть куçнă халăх аллине!
Хайхи Керенские тўнтернĕ!
Çĕр памалла хресченсене!»
Пин сасă пĕлĕте çурать:
«Памарĕ нимĕн те февраль!»
Кĕрлет вăрман, шавлать тавра:
«Тымарĕпех кăклатпăр халь!»
Кĕрлет сăрт-ту, кĕрлет уй-хир:
«Çăва патне тĕнче вăрçи!
Мир халăха, чи çирĕп мир!
Пулмастпăр урăх мул гарçи!»
Туятни эс, вĕри çапать
Пин-пин чĕрен хĕрў хĕлхемĕ.
Тăват енчен ян-ян каять:
«Сыв пултăр Ленин, аслă Ленин!»
Тăват енчен пин сас ўсет:
«Сывă пултăр çулăмлă Октябрь!»
Кĕрлет инçет, таврать инçет:
«Пĕр шит те каялла ан чакăр!»

Куратни, хĕсĕк сарлака урам!
Куратни, тăвăр укăлча тулашĕ!
Ытла та йышлă-çке вара
Хĕн-хур тўсекенсен тавраш!
Пĕр Хурамал кăна-и тухнă?—
Мĕнпур тавра паян кунта,
Вулăсĕпех пĕр чăмăр пухнă,
Вĕт-шакăр та юлман ялта.
Çĕкленнĕ пĕтĕм кўршĕ-аршă:
Мăкши, чăвашĕ, вырăсĕ, тутар.
Хушать Революци маршĕ:
«Çĕн пурăнăç тума утар!»
Улпут патневаскать пур вулăс,
Хаяррăн чышкă чăмăртать:
«Çухал çĕр питĕнчен, ан пул эс!»—
Çиллессĕн халăх кăшкăрать.
Малта пырать Тĕнче Иванĕ,
Вăл пуринчен паян хаяр.
Ун аллинчи Çĕн Кун ялавĕ
Кĕрхи çилпе вылять вăр-вар.
Пăхать Иван:
чĕри кăртлатрĕ,
Тухать, утать ял хыççăн ял...
Вăй-хал туйса, Иван тапратрĕ
«Интернационал»:
«Патша та, туре та çăлмарĕ,
Герой та çăлас çук пире,
Пĕр хамăр алă ирĕк парĕ,
Çăлса хăварĕ вилĕмрен.»
Хум хыççăн хум ăсатрĕ юрă,
Хускатрĕ халăх юхăмне.
Халь халăх хăй—патша та турă—
Паян виçет вăй-хăватне.

Арпа пĕр тан утать хĕрарăм,
Ларас-и унăн халь килте?
Упăшкинчен вăл тек хăрамĕ,
Ун вырăн пулĕ тĕпелте.
Ав, аркăран ик ывăл тытнă.
Ик алăра—çич уйăхри.
«Анне, ăçта ку халăх утнă,—
Ыйтать асли,—ăçта хĕрри?»
«Ан ман, сăна, сăна эс, шăллăм.
Сан умăнта Çĕн Кун утать.
Паян патша йăхне вăл шăлнă,
Паян вăл сан чунна çăлать.
Шкул алăкне вăл саншăн касĕ,
Вăл такăрлатĕ сан çулна.
Хавaслăн янрĕ çамрăк сасă:
«Мухтав, Çĕн Кун, мухтав сана!»
...Утать Çĕн Кун, утать сулмаклăн,
Утать çиллес, утать хаяр.
Паян кашни самант та хаклă,
Паян йăваш пулмалла мар.
Паян çуралчĕ çĕн тĕнче,
Ĕç йышĕ тухрĕ ретĕн-ретĕн.
Ун уттинче, кĕрлевĕнче
Эс халăх ылханне илтетĕн:
«Çитет, Хĕн-хур, пин çул эс лартăн
Ĕçчен сынсен ĕнси çинче,
Таса юнпа çĕре шăвартăн,
Тире сĕветтĕн ўтсенчен.
Хальччен патшаччĕ эс, улпутчĕ,
Çўреттĕн хырăм каçăртса,
Паян ылханлă шăпу тулчĕ,
Хура юн тапрĕ палкаса.
Эс паллас çук, Çĕн Кун вăл—халăх,
Таптать вăл, лутăркать сана,
Паян çуралчĕ Çĕн Патшалăх,
Çуралчĕ Çĕнĕ Самана.
Хула хĕррисенчен вăл тухрĕ,
Вăл хăрăмлă... ун чун таса!
Вăл фабрик-заводра вăй пухрĕ,
Халь утрĕ, улăп пек, тăрса.
Çĕр пўртсенчен паян вăл тухрĕ,
Шалтлатрĕç вĕрлĕк хапхасем.
Вĕçĕ-хĕррисĕр халăх юхрĕ,
Хускална тинĕс пек сиксе.
Вăл çăкăр ыйтрĕ,—эс памарăн,
Чанкăртаттартăн сăнчăрна.
Эс кермен мар, тĕрме хăпартрăн,
Силлерĕн тимĕр чăмăрна.
Паян вăл тавăрчĕ хаярăн,
Вăл ишрĕ пусмăр никĕсне.
Октябрь тăвăлĕ-кăварĕ
Хăвармĕ пусмăр мĕлкине!»
Çĕн Кун хаваслă, вăйлă, аслă,
Кивве лутăркаса утать
Вăл пирĕн—кĕтнĕ кун, пуласлăх,
Вăл тăвăл витĕр йыхăрать:
«Кĕрле, кĕрле «Аврора» вучĕ,
Россия тăрăх яр йыхрав,
Пăлхавçăсен йышлантăр шучĕ,
Хумхантăр вут тĕслĕ ялав!»

..:Утать, утать вулăсалла,
Хура вăрман пек, хура халăх.
Туртсан—вăл тимĕр татмалла,
Тытсан—хăвачĕ ту йăтмалăх.
Пăхать Иван çул çинелле:
Чупать Америка машинĕ.
Лапра тапать пĕлĕтелле,
Тарать иккен улпут шуйттанĕ



## Мускаври ĕççыннисен пуçарăвĕпе

Пирĕн социализмла промышленность, революцичченхипе танлаштарсан, 2,8 хут ытларах продукци туса кăларать. Совет çĕршывĕ ĕç хатĕрĕсем туса кăларас тĕлĕшпе те, ĕç тухăçлăхĕ енчен те капитализмла государствăсенчен нумай малта пырать. Çаксем ĕнтĕ планпа пăхнă ĕçсене срокчен тума май параççĕ.

Пилĕк çуллăх плансене срокчен тултарасси совет халăхĕн йăлине кĕчĕ.

Нумаях пулмасть Мускаври малта пыракан предприятисенчи рабочисем пиллĕкмĕш пилĕкçуллăха срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăртăва хутшăнма чĕнчĕç. Çак чĕнĕве пирĕн республикăри фабрикăсемпе заводсенче ĕçлекен рабочисем те хапăл туса йышăнчĕç.

Сĕнтĕрти пир-авăр фабрикинчи çамрăк ткачиха-комсомолка Антонина Блинова, социализмла ăмăртăва хутшăнса, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тултарма сăмах пачĕ. Вăл фабрикăра ĕçлеме пуçланăранпах уйăхри плана ялан ирттерсе тултарать. Антонина Блинова—фабрикăри хисеплĕ çамрăксенчен пĕри, вăл Октябрь уявне те ĕçри çĕнĕ çитĕнўсемпе кĕтсе илчĕ.

Ўкерчĕкре: Антонина Блинова хăй станокĕ умĕнче.
А. Припалов фотоўкерчĕкĕ.

Çĕкленнĕ халăх аллинчен.
Шăвать-çке вулăс харампырĕ,—
Чăхăмçăлан Форд кÿминче
Ларса пырать иккен вăл ыррăн.
Пăхать Иван аяккалла:
Тÿре-шаран та сехри хăпнă,
Виç парпала вăрманалла
Трантассемпе тарать вут хыпнăн,
Тарать шăл шатăртаттарса,
Пăшалĕпе юнать: «Асаймăр!
Килетпĕр вăйлă çар пухса,
Ун чух пăлхав тума хăяймăр!»
Иван çĕклерĕ аллине,
Алли ун шăнăрлă та шăртлă:
«Куратăр-и, хĕстернĕ хÿрине;
Çак тимĕр чăмăра час шăршлĕç!
Улпут мĕскер, ун никĕсне
Паян силлемелле ак пирĕн.
Улпут çине! Кантур çине!
Пиллетĕп эп: салатăр,
хирĕр!
Ан тив, хаяр аса шартлаттăр,
Кĕллентĕр, пĕттĕр кив тĕнче!
Пирте халь—вăй,
эпир халь—паттăр,
Çĕнми хăват алăсенче.»
Иван юман пусма тăратрĕ
Виç пÿ çитми хÿме çумне,
Хăмача ялавне вăл çакрĕ
Ик хутлă çуртăн çамкине.
Хумханчĕ, варкăшрĕ ялав,
Йĕри-тавра писев хĕм çапрĕ,
Вăл курăнать ялтан яла,
Вăл чĕнчĕ, йыхăрчĕ, вăратрĕ.
Хускатрĕ халăх чĕрине
Пин çул капланнă тарăх-çилĕ.
Кам чартăр тинĕсĕн хумне?!.
Кĕрлерĕ сас:—Кивве халь вилĕм!
Улпут хапхи—чугун хапха
Лумпа хирсессĕн шатăртатрĕ,
Вăл чараймарĕ халăха,
Тăпсисенчен тухса хаплатрĕ.
Эрешлĕ, тĕрлĕ чÿрече
Саланчĕ, ванчĕ чăнкăр-чанкăр.
Пусланчĕ, тытăнчĕ тĕнче,
Кăвар çĕкленчĕ йăлтăр-ялтăр...
«Çунтарăр куланай хутне!»—
Хаяррăн халăх янтраттарчĕ.
Иван чупать кантур патне,
Ун хыççăн ушкăн çын таптарчĕ:
Сăркăтлă хут таткаланать,
Парăлтатать тĕркем-тĕркемĕн,
Ăна кăвар чĕлхи çулать,
Вăл тиекне те халь тиркемĕ.
Çатăртатать, мăкăрланать,
Шăвать йÿç тĕтĕм пĕлĕт айĕн.
Шăв-шав, кĕрлев анчах тăрать,
Сăмахсене халь уйăраймăн.

Иван васкать пĕр çурт енне,
Унта час-час вăл пулкаланă.
Анчах курмасть ун хуралне,
Хурал таçта тарса пытаннă.
Çав çурт—чун илмĕшĕ—тĕрме,
Шалçаллă, решеткеллĕ тамăк.
Ак халăх тытăнчĕ хирме,
Ак ванчĕ чул, хапха та алăк.
Хускалчĕ, тухрĕ ирĕке
Чул тупăкăн асаплă йышĕ.
Вăл кăткă пек иртет, вĕркет,
Вăл тав тăвать килсе çăлнишĕн.
Тăван палларĕ тăванне,
Упăшкине палларĕ арăм.
Пĕр çамрăк кăшкăрчĕ:—Анне!
Эс те кунта-и, ах, мăнтарăн!
Унтан чиркÿ тăрне чупса
Хăпарса кайрĕ кăпăр-капăр,
Ик алăпа вăйран тытса,
Пысăккине вăл туртса çапрĕ:
Çĕр пăтлă чан мĕкĕрттерет,
Вăл, вече чанĕ пек, кĕрлерĕ.—
Пушара мар паян чĕнет,
Кĕлтума мар паян çĕклерĕ,—
Паян вăл чĕнчĕ пăлхава,
Хальччен капла вăл кĕрлеменччĕ,
Ун пек хăватлă йыхрава
Ку таврасем хальччен илтменччĕ.

Пит-куç вĕри, пит-куç усал,
Чĕресене хаярлăх витрĕ.

Авăслăхран пĕр çăм сухал
Кантур трантасĕпе ак çитрĕ.

— Ман аслине курас пулать,
Сăмахăм пур ман каламалăх.—
Иван мала тухса тăрать:
— Асли кунта халь — халăх.
— Апла пĕлтер эс çынсене:
Авăслăхсем те çывăрмаççĕ,
Кунтан тухса таракансем
Юпа çинче халь сулланаççĕ.
Трантас çинчи ку — староста,
Тăллармăмăр,
вăл пит куштанччĕ.
Ăçта хурас, мура, ăçта?
— Сив мунчана! — çĕр сас капланчĕ.
— Мунчана мар,—таврать Иван,—
Çаратнине ытла час мантăр,
Йăллас ăна та каштаран,
Антив çилпе кăштах сулланттăр!

Мĕн çĕмрĕлет тата унта?—
Çăлкуçĕсем çитеç вут хыпнăн,
Вĕсем тартман-мĕн улпута,
Уй хапхинче ăна-мĕн тытнă.
Килеççĕ танкăртаттарса,
Лавĕсенчен «Фордне» кăкарнă,
Вара çапла ахăрттарса,
Кĕр пылчăкне çăрса юртарнă.
Улпутăн пусĕ çап-çара,
Цилиндрне çапса ÿкернĕ,
Çĕр татăк тунă çĕн фракран,—
Туртса, çуркаласа пĕтернĕ.
— Çăрттанĕ лекрĕ! — сас кĕрлет,—
Çакас! Силлентĕр лăнчăр-ланчăр.
— Вута перес!—тепри пÿлет,—
Ĕнси пит хулăн, кăшт шăрантăр...
Иван сулларĕ:—Кÿллине
«Форчĕпелех» чул пек вăл антăр!—
Улпут хускалчĕ тăнкăр-танкăр,
Унтан чăмтарчĕç шăмпăр-шампăр
Шăпланнă шапасем патне.

Шăпланчĕ саманта пăлхав,
Ĕшеннĕ халăх лăшт сывларĕ.
Çилпе вĕçет вăр-вар ялав,
Тавралăха çапать кăварĕ.
Иван, хăлат пек, пăхкалать,
Куçсем çунаççĕ вут-кăваррăн.
Ак урапа çине тăрать,
Ак аллине çĕклет хастаррăн.
Вăл çĕлĕкпе сулса чĕнет:
— Итле ман сăмаха, ыр халăх!
Ĕречĕпе ларать кĕлет,
Хурал тăратмалла васкавлăн.
Картисене—ăратлă выльăха!
Упрантăр пĕтĕм кил-тавраш!
— Вăл кирлĕ пулĕ халăха...
Çапла-и?
Кам мĕскер каласшăн?

ХАЛАХ

Тĕрĕс!
Халăхăн — пĕр ăс!

...Кĕрхи кун каçалла васкать,
Лутра хĕвел, çу пек, шăранчĕ.
Сасартăк поезд кăшкăртать,
Хăвăртлăхне хуллен чакарчĕ.
Состав тăршшĕпелех плакат:
«Çĕнтерне Революци сывă пултăр!»
Малта ялав çиçет, вылять,
Вагонсенче — пин çын та пур-тăр.
Вăл—паттăр йыш, ахаль йыш мар,
Вăл—парти янă харсăр гварди.
Вĕсем — кашнийĕ коммунар,
Революционер, йыхравçă.
Ак вĕсенчен пĕри анать:
— Краснов!—Чупать Тĕнче Иванĕ.
Ăна вăл хыттăн ыталать:
— Эс сывă-и, эс сывă-и, тăванăм?—
Хурамалсем кĕпĕрленеç,
Час пĕтĕм халăх та палларĕ,
Çĕр алăпа ăна çĕклеç,
Альли анчах пыма хăймарĕ.
Тарас гав турĕ пуç тайса.
Тав турĕ те—пусланчĕ митинг.
Чĕресене çунатласа
Хĕрÿ сăмах янрарĕ вичкĕн.

ТАРАС

Паян çĕнтертĕмĕр эпир—
Рабочипе хресченĕн класĕ.
Тăшман пĕтмен, ăна эс сир!

— Сиретпĕр! — тавăрчĕ пин сасă.

ТАРАС

Власть паянах суйлас пулать,
Хастар чухăнсене тăратăр.

Пин алă харăс йăтăнать:
— Асли пулма сана лартатпăр.

ТАРАС

Эп хатĕр халăхшăн çунма,
Эсир мана аван паллатăр.

ХАЛАХ

Çак вулăсра халь пуç пулма
Пур халăхпа сана шанатпăр.

ТАРАС

Эп тав тăватăп, ырă халăх,
Тавах, тăванăмсем сире!
Хăватăм халăхшăн тăмалăх
Çитет пуль, тетĕп, чĕрере.
(Йĕри-тавра пăхса.)
Паллана çĕр... Кашлать вăрманĕ...
Улпутăн пулнă... халь ун мар!
Çаранĕ, хирĕ, шыв арманĕ
Халь санăн, халăх,—ут хастар!
Ĕшне тулли çÿренĕ выльăх...
Улпутăн пулнă... халь ун мар!
Эс пур танкканă выçă, тăлăх,
Санра халь ирĕк,—тăр хастар!
Анкартисем тулли капанĕ...
Улпутăн пулнă... халь ун мар!
Ăна çĕкленĕ ĕç тăванĕ,
Юхтарнă юнлă хура тар.
Çуртне-йĕрне хăй мар хăпартнă,
Ăна эс лартнă шур чултан,
Хулу çинче пушши шартлатнă
Çав мурăн, эс хире тухсан.
Вăл иртрĕ... Асас çук хĕн-хур,
Мĕнпур Россия сан халь, халăх.
Вăй-хал та пур, сан ăс та пур
Çак Çĕн Патшалăха тытмалăх.
— Мала! — чĕнет çулпусĕ Ленин,
Ан юлтăр, тет, асап шăрши.
Вăл чĕннипе эсир çĕкленнĕ,
Ура çинче халь пур çĕршыв.
— Хăватлă пулăр! Пулăр витĕр!—
Çапла ĕç халăхĕ хушать.
Сире шанать çĕкленнĕ Питĕр,
Тăван пек аллине тăсать.
— Шанатпăр эпĕр те ăна!
Ята çĕртместпĕр! — терĕ халăх.—
Сыв пултăр Çĕнĕ Самана!
Сыв пултăр хăтăлнă патшалăх!

Пин çĕлĕк çÿлелле тапать,
Вĕри çапать чĕре хĕлхемĕ.
Тăват енчен ян-ян каять:
«Сыв пултăр Ленин, аслă Ленин!»
Тăват енчен пин сас ÿсет:
«Сыв пултăр çулăмлă Октябрь!»
Кĕрлет инçет, таврать инçет:
«Пĕр шит те каялла ан чакăр!»

Хускалчĕ поезд хашлатса,
Çĕр чĕтретсе вăл кăшкăрттарчĕ,
Çавраçил пек çавăрттарса
Россия тăрăх вăл ăсанчĕ.
Хăвачĕ ун — çĕр пин, мĕльюн;
Тĕрекĕ ун, ĕçхалăх, эсĕ!
Вăл—Çĕн Тĕнче, вăл — Çĕнĕ Кун,
Вăл—Революцийĕн экспресĕ.
Вăл вутлă кайăк пек пырать,
Чакать тăшман, чакать хĕн-хур та.
Чĕнет плакат, йыхрав ярать:
«Çĕнтерне Революци сывă пултăр!»

Октябрь тăвăлĕ кĕрлет,
Вĕрет, хĕрет Октябрь çилĕ.
Чура пулнисене чĕнет
Пуласлăхăн çап-çутă Килĕ.



# ПАЯНХИ УРПАШ

П. МАТЮХИН

Фотоӳкерчӗкӗсем авторӑн.

Етӗрне çулӗ тап-текӑр та сарлака. Анлӑ çул тӑрӑх унталла та кунталла машинӑсем кӗрлесе иртеççӗ. Хуларан таврӑнакан йывӑр тиенӗ грузовиксене курсан, чун савӑнать: ялти тулӑх пурнӑçпа пурӑнакан ӗçчен çынсем хуларан пушӑ килмеççӗ иккен.

Сайра-хутра вӗтӗ çумӑр лӗпӗстетсе иртет те, унччен те пулмасть, лапсӑрка пӗлӗтсем хыçӗнчен сар хӗвел кулса ярать. Вӑл ылтӑн тум тӑхӑннӑ вӑрмана çӗнӗ тӗс парасшӑн пулнӑ пек туйӑнса каять.

Урпаша каякан çултан пӑрӑнсан, пире пӗр лав хӑваласа çитрӗ.

— «Упа шӑтӑкне» çитсе курасшӑн апла?—терӗ вӑл кударах, эпир мӗн ӗçпе тухнине пӗлсен.— Елӗк пирӗн енчи ялсене çапла калатчӗç,—эпир тӗлӗннине кура малалла сӑмах хушрӗ вӑл.—Кӗр кунӗнче Урпаша-мӗне тулли лавпа мар, çуран кайма та чун çӳçенетчӗ. Халь акӑ...—чееревхӗн куçне хӗсрӗ те çӑра сухалӗ витӗр кӑмӑллӑн кулса илчӗ старик.

Вӑрмантан тухсан, эпир айлӑмри пӗр пысӑк яла пырса кӗтӗмӗр.

— Урпаш пӗчӗк ял мар,—хавасланса каларӗ старик, — Мӑнуй, Çӳлтикасси, Этепей. Качӑпа, Эмелкасси урамӗсене ӗлӗк чух «упа шӑтӑкӗ» тетчӗç те, халь апла калас йӑла çук ӗнтӗ. Совет влаçӗччен пирӗн патра хут пӗлекенсем те темиçе çын кӑначчӗ. Куç чирӗпе асапланатчӗç ял çыннисем. Халь вара кирек мӗнле ют çӗршыв дипломачӗ килсен те намӑс курмастпӑр. Вӑтам шкул, больница, почта, вулав çурчӗ, магазинсем пур. Пурне каласа та пӗтереймӗн.

Калаçса пынипе нумай та вӑхӑт иртмерӗ, эпир икӗ хутлӑ хитре çурт умне çитсе чарӑнтӑмӑр. Мучи пирӗнпе ӑшшӑн сывпуллашрӗ, хӑнана чӗнчӗ, уйрӑлас умӗн хӑйпе те паллаштарчӗ вӑл.

— Инженеров тесен пурте пӗлеççӗ. Манӑн хушамачӗ çапла,—куларах каларӗ старик.—Инженер пулма тӗл килмерӗ: ватӑлтӑм эпӗ, анчах ялта инженерсем çук мар пирӗн.

Степан Афанасьевич Инженеров пек вӑйпитти стариксем Урпашра татах нумай. Алексей Николаевич Балдаев та ялти хисеплӗ çын. Вӑл сакӑрвун çултан та иртнӗ ӗнтӗ, апла пулсан та, Балдаев колхозри ӗçрен юлнине астумаççӗ кунта. Халь Алексей Николаевич колхоз садӗнче ӗçлет, çумӑрлӑ çанталӑка пӑхмасӑрах, çамрӑк улмуççисене хӗл сиввинчен сыхлама хатӗрлет.

Колхозра ялхуçалӑх ӗçӗсем тахçанах вӗçленнӗ. Сад-пахчисенче е колхоз фермисенче кӑна кӗрхи ӗçсене тӑваççӗ. Правленире тырпулпа укçа-тенкӗ тупӑшне шута илеççӗ, ӗçкунӗсем тӑрӑх колхозниксене тырпул валеçме хатӗрленеççӗ.





Артель членӗсен ӗç кӗнекисем те ялта вӑйлӑ тырпулшӑн ырмиканми ӗçленине лайӑх кӑтартса параççӗ. Колхозниксен нумай çемйисем çулталӑкра пиншер ытла ӗçкунӗ тунӑ. Калинин ячӗпе хисепленекен колхозри Михаил Яковлевич Икунин çемйин 1367 ӗçкунӗ, Ксения Анисимовна Яргейкина çемйи те пин те икçӗр ӗçкунӗнчен ирттернӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ Урпаш ялсоветӗнчи колхозсен тупӑшӗ çултан-çул ӳссе пырать. Калинин ячӗпе хисепленекен пӗр колхозра çеç пӗлтӗр 693 пин тенкӗ тупӑш илнӗ пулсан, кӑçал колхоз тупӑшне пӗр миллиона çитерме палӑртнӑ.

Колхозсем вӑйланнӑ май колхозниксен пурнӑçӗ те лайӑхланса пырать. Çӗнӗ те хулари пек хитре çуртсем аслӑ урамсене илем кӳреççӗ. Кашни килӗрен çӗвӗ машинисемпе радиоприёмниксем курма пулать. Велосипедсӑр çамрӑка тупма та çук. Колхозниксем хӑйсен укçи-тенкине ялти перекет кассинче усраççӗ.

Паян магазина çӗнӗ таварсем кӳрсе килнӗ. Михаил Леонтьевич Леонтьев аслӑ Октябрь уявӗ тӗлне çӗнӗ костюм туянасшӑн. Уяв — уяв пек пултӑр! Вӑл халь перекет кассинчен укçа илет. Валериан Михайлов нумаях пулмасть заемпа выляса илнӗ.

Ялта магазинтан кунӗпех çын татӑлмасть. Пелагея Ягунова колхозниксене ӑшшӑн кӗтсе илет те вӗсене çӗнӗ таварсем суйла-суйла парать. Ӗçчен çынсене паха тумтир кирлӗ. Урпаш ялсоветӗнче пилӗк çӗрте сутӑ тӑваççӗ. Килти



хуçалӑх таварӗсене кунта яланах туянма пулать.

Ялти магазина çӗнӗ кӗнекесем кӳрсе килсен, колхозниксемшӗн чӑн-чӑн уяв пекех туйӑнать. Урпашра кӗнекене юрataççӗ. Шкул ачисем кӑна мар, ватти-вӗттипех илемлӗ литература произведенийӗсене кӑмӑлласа вулаççӗ. Изосимпа Степан Захаровсем трактор çинче те кӗнекерен уйрӑлмаççӗ. Ӗçрен пушансанах, вӗсем çӗнӗ кӗнеке вулама лараççӗ те, пӗрле ӗçлекен юлташӗсем Захаровсене сырса илеççӗ. Изосим вунçичӗ çул тракторпа ӗçлет. Вӑл икӗ çул каялла шӑллӗне те тракториста вӗрентнӗ. Пӗр тӑван механизаторсен килти библиотеки пӗрмаях ӳссе пырать. Вӗсем илемлӗ литература произведенийӗсене кӑна мар, ялхуçалӑх кӗнекисене те юратса вулаççӗ, агротехникӑна вӗренеççӗ.

Урпашра хаçат-журнал çырӑнса илекенсем нумай. Ялти хисеплӗ колхозниксенчен пӗри—Седушкин юлташ патне письмоносец кӗмен кун иртмест. Тихон Матвеевич каç-каç сӗтел хушшине ларать те Федосия Михайловнӑна



хаҫатри ҫĕнĕ хыпарсене вуласа пама тытăнать. Вăл кашни ҫулах «Животноводство», «Огонек», «Молодой колхозник» журналсем тата тăватă тĕрлĕ хаҫат ҫырăнса илет.

Тихон Матвеевичăн ҫемйи пысăк. Ĕлĕк вăл, ялти ытти чухăнсем пекех, нумай вĕренеймен. Чиркӳ ҫумĕнчи икĕ класлă шкултан чухăнсен ачисене пĕлӳ илме те май пулман. Халĕ Урпашри вăтам шкулта тăватҫĕр ытла ача вĕренеҫҫĕ. Совет влаҫĕ пулнăранпа Урпашран 40 учитель, 5 инженер, 10 офицер, 6 врач тата ытти нумай тĕрлĕ специалистсем вĕренсе тухнă. Тихон Матвеевич Седушкин ачисем те аслă шкул пĕтерсе специалистсем пулнă, халь вĕсем ҫĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче ĕҫлеҫҫĕ.

Колхозри вулав ҫуртне те, клуба та кашни каҫах халăх йышлă ҫӳрет. Ялти библиотекăра 8 пине яхăн кĕнеке пур. Ялсовечĕ культурăпа ҫутĕҫ учрежденийĕсем валли ҫулсеренех 2 пин тенкĕлĕх ытла тĕрлĕрен хаҫат-журналсем ҫырăнса илет. Кунсăр пуҫне, колхозра стена хаҫачĕсемпе «боевой-листоксем» вăхăтра тухса тăраҫҫĕ. Стена хаҫачĕсене колхозниксем юратса вулаҫҫĕ, хăйсем те унта тăтăшах ҫыраҫҫĕ. Хаҫатра лайăх ĕҫлекенсен опытне анлăн ҫутатса параҫҫĕ, кахалсемпе ĕҫ дисциплинине пăсакансене вирлĕн питлеҫҫĕ. Паян та Урпашра ҫĕнĕ хаҫат умĕнче колхозниксем йышлă.

Паянхи номерте Марк Смирновпа Александр Симошкин колхозниксене критикленĕ, ĕҫ дисциплинине пăсакансене хĕрхенмен.

Революциччен «упа шăтăкĕ» пулнă Урпаш ҫултан-ҫул ҫĕнелсе улшăнать. Ҫамрăксем паянхи ял сăн-сăпатне колхоз историйĕ валли пир ҫине ӳкерсе хăварма тăрăшаҫҫĕ. Хăйсем тĕллĕн вĕренинĕ художниксем колхозри кашни улшăнăвах ӳкерсе илеҫҫĕ. Халĕ художниксем тĕп урамри культура учрежденийĕсене сăнласа парасшăн. Революциччен чиркӳ пулнă вырăнта шкул, ялсовет ҫурчĕ, перекет касси, вулав ҫурчĕ вырнаҫнă. Колхозниксем клубра кино кураҫҫĕ, лекцисем итлеҫҫĕ. Яла килнĕ чухне тĕл пулнă Инженерова эпир каҫхине вулав ҫуртĕнче куртăмăр. Степан Афанасьевич улттăмĕш класра вĕренекен Вечча Ининпа шахматла выляма ларнă. Анчах паян «ялти чемпионăн» ĕҫ ăнмарĕ. Ҫамрăк Веччa вăйă пуҫламăшĕнчех мат пачĕ.

Юнашар пӳлĕмре репетици пырать. Ялти драмкружок уяв чухне спектакль лартма хатĕрленет. Художествăлла пултарулăх кружокĕсене вулав ҫурчĕн заведующийĕ Петр Элькинский ертсе пырать.

Каҫхине библиотекăра ларма та вырăн ҫук. Библиотекарь Карп Иванович Иванов сĕтелĕ умĕнче ушкăнĕпе колхозниксем тăраҫҫĕ. Карп Иванович—колхозри парторганизаци секретарĕ. Вăл нумай чухне кирлĕ кĕнекесене киле пырса парать. «Знамя» колхозри Валентина Пайгусовăпа Любовь Соловьева доярккăсем выльăх-чĕрлĕх ӳрчĕ кĕнекесем ыйтаҫҫĕ. Зоотехникăпа ветеринари вĕрентнĕ пек ĕҫлесе, Валентина кашни ĕнерен сĕт нумай суса илет, кăҫал вăл Пĕтĕм Союзри ялхуҫалăх выставкине кайма тивĕҫлĕ пулчĕ.

Культурăпа ҫутĕҫ учрежденийĕсене ĕҫре ялти интеллигентсем нумай пулăшаҫҫĕ. Кунта 32 учитель, 4 врач, 3 агроном, 2 ветеринари фельдшерĕ ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсем халăх хушшинче культурăпа йăла ыйтăвĕсене, партипе правительство решенийĕсене халăха ăнлантарса параҫҫĕ. Кашни эрнерех доклад е лекци пулать. Анфиса Максимовна Зинькова лектора ялта пурте хисеплеҫҫĕ. Анфиса Максимовнăна доклад хыҫҫăн та ҫамрăксем канăҫ памаҫҫĕ, вĕсен лектортан ыйтса пĕлмелли татах нумай.

Урпаш таврашĕ ытарма ҫук илемлĕ. Ял йĕри-тавра анлă уйсем ешĕл вăрмансем сарăлса выртаҫҫĕ. Юнга шывĕ ҫинчи ГЭС «Знамя» тата Сталин ячĕпе хисепленекен колхозсене ҫутă парать.

Тухăҫлă ĕҫ хыҫҫăн, пушă вăхăтра, чылай колхозниксем сунара ҫӳреҫҫĕ, пулла каяҫҫĕ, ҫамрăксем ГЭС пĕви ҫинче кимĕпе ярăнса киленеҫҫĕ. «Знамя» колхозри строительство бригадирĕ Борис Тихонович Храмовпа колхоз конюхĕ Иван Степанович Мешков пулла яланах пĕрле ҫӳреҫҫĕ. Паян ҫанталăк пулă тытма юрăхлах мар пулсан та. Совет Ҫарне каякан ҫамрăксене хăна тумалăх пулă кĕчĕ вĕсен.



Паянхи Урпаш ҫулпа та уйăхпа мар, эрнепе те кунпа ӳссе пырать. Ҫынсем кăна мар, ял сăн-сăпачĕ те кунсерен улшăнать. Колхозниксем ыранхи ырлăхшăн кĕрешеҫҫĕ, паян ĕнерхинчен лайăхрах, ыран паянхинчен аванрах та тулăх пурнăҫ тăвасшăн тăрăшаҫҫĕ. Кĕрхи кунсем пулсан та, колхозри ĕҫсем самантлăха та чарăнмаҫҫĕ. Халь кунта икĕ хутлă ҫĕнĕ клуб тума палăртнă, ял урамĕсене йывăҫсем лартаҫҫĕ. Калинин ячĕпе хисепленекен колхоза электричество кĕртмелле, ҫĕнĕ кадрсем те хатĕрлемелле.



Часах хĕл ларать. Ҫамрăксене ҫĕнĕ физкультплощадка кирлĕ. Вулав ҫурчĕн заведующийĕпе ялсовет председателĕ хĕллехи каток тумалли вырăн суйласа ҫӳрерĕҫ.

— Ҫак лапамра каток тусан питĕ лайăх пулать,—тет Петр Андреевич Элькинский ялсовет председательне.

Колхозра ĕҫ нумай, ĕмĕт пысăк. Ҫĕнĕ пурнăҫри улăпла утăмсем, пысăк та сӳнми ҫутă ĕмĕтсем колхозниксене малтан малалла, ҫĕнĕ ӳсĕмсем патне чĕнеҫҫĕ.

*Сĕнтĕр районĕ.*







# ХАМĂР АЛĂПА

Валентина АНДРЕЕВА

## ПИРĔН ОПЫТСЕМ

Вера Котельникова 4-мĕш класра вĕренет. Вăл вĕренекен шкул ту ҫинче таҫтанах курăнса ларать. Вăл— Шупашкарти вунпĕрмĕш номерлĕ вăтам шкул. Вера хăйĕн шкулне ҫав тери юратать. Шкул уншăн тăван кил пекех.

Пĕрре Вера, шкултан таврăннă чухне, пӳрт умĕнче йăлтăртатса выртакан симĕс-кăвак кĕленче катăкĕ тупрĕ. Хитре кĕленче Верăна питĕ килĕшрĕ, вăл ăна ывăҫ тупанĕ ҫине хурса пăхрĕ.

— Ытла та илемлĕ-ҫке ку кĕленче. Мĕнрен тăваҫҫĕ-ши ăна?—шухăшларĕ вăл.—Ыран учительницăран ыйтса пăхас-ха, вăл пĕлетех ĕнтĕ,— терĕ те кĕленче ванчăкне сумкине чикрĕ.

Шкул ачин чи ҫывăх тусĕ вăл— класри учитель. Пурнăҫра пĕр-пĕр пĕлмен япала тупăнсан, вăл тӳрех вĕрентекенĕ патне ырать. Учитель ăна пурнăҫа ытларах курма вĕрентет, кирлĕ пĕлӳсем парать.

— Ачасем, эпир кĕленчене мĕнрен тунине вĕренĕпĕр,— терĕ учительница Нина Павловна. Вăл ачасене кĕленче ванчăкĕсен коллекцине тума каларĕ.

Ҫакăн хыҫҫăн чылай вăхăт иртрĕ. Ачасем тĕрлĕ тĕслĕ кĕленчесенчен коллекци туса хатĕрлерĕҫ. Унта сарă, кăвак, хăмăр, хĕрлĕ тĕслĕ кĕленче ванчăкĕсем пур. Ачасем вĕсене пăхса ытараймаҫҫĕ.

Кĕтнĕ урок ҫитрĕ. Вера Котельникова кĕленчене мĕнрен туни ҫинчен калама пуҫларĕ.

— Кварцлă хăйăра илсе пурăпа содăна хутăштараҫҫĕ те 1200 градуса ҫитиччен вĕретсе ирĕлтереҫҫĕ,— терĕ Вера пĕр такăнмасăр.— Ирĕлнĕ хăйăртан тем те тума пулать, кантăк та, тĕрлĕрен савăт-сапа та, пробиркăсем те...

Вера хыҫҫăн сĕтел умне Нина Стешова тухать. Вăл опыт тума тытăнать. Спиртовкăна чĕртет те кĕленче пробиркăна унăн ҫулăмĕ ҫине тытать. Ачасем куҫ илмесĕр мĕн пуласса сăнаҫҫĕ. Часах кĕленче пробирка авăнать, тăсăлать, ирĕлме пуҫлать. Опыт лайăх иртет, вĕренекенсем ҫак урокра халиччен пĕлменнине пĕлеҫҫĕ, хăйсен куҫĕпе кураҫҫĕ.

— Йĕпе-сапа ҫанталăкра хăйăрлă, тăмлă ҫулсемпе те сахал мар утса курнă ĕнтĕ эсир,— терĕ учительница.—Тăмлă вырăнта утма йывăр, вăл ура ҫумне ҫыпҫăнать, хăйăр апла мар. Мĕншĕн ҫапла-ха вăл? Ăна пĕлес тесен, эпир каллех опыт туса пăхăпăр.

Галя Левкинăпа Стасик Кривощенко, икĕ варинкке илсе, пĕрин ҫине тăм яраҫҫĕ. Хăйăр хунă варинккерен часах стакана шыв тумлама пуҫлать. Ачасем пĕлеҫҫĕ ĕнтĕ: шыв тăм витĕр час тухаймасть, тăм шывра ирĕлет. Хăйăр витĕр шыв хăвăрт сăрхăнать.

Кĕҫех звонок пулмалла. Учительница вĕренекенсене киле валли татах интереслĕ ĕҫ парса ярать: ҫитес урока валли чăн-чăн кирпĕч туса килмелле. Хăйăрпа тăм хутăштарса, шăрпăк коробкине хумалла. Вара ăна икĕ хутчен кăмакана хурса хĕртмелле. Кирпĕч хатĕр те.



Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулти Екатерина Александровна Семенова учительница 1-мĕш класра ĕҫ урокĕ ирттерет. Ачасем хутран чĕрчунсен кĕлеткисене касма вĕренеҫҫĕ.
**М. Егоров** фотоӳкерчĕкĕ.

## ĔҪ УРОКĔНЧЕ

Гена вĕренекен класра ĕҫ урокĕ яланах хаваслă иртет. Ҫав урок пуласса ачасем питĕ кĕтеҫҫĕ. Вĕсем ĕҫ урокне юратаҫҫĕ.

Ҫав кун пĕрремĕш класс ачисем пурте шкула пластелин коробкисемпе пычĕҫ. Юлашки урок—ĕҫ урокĕ. Шăнкăрав пулсанах, ачасем партăсем хушшине кĕрсе ларчĕҫ. Часах класа Анна Павловна Муратова учительница кĕчĕ.

Урок пуҫлансан, Анна Павловна класс доски ҫине пĕр илемлĕ картина ҫыпăҫтарчĕ те вĕренекенсем еннелле ҫаврăнчĕ.

— Ачасем, ҫак ӳкерчĕкре мĕн-мĕн куратăр эсир?—тесе ыйтрĕ вăл.

— Панулми!

— Груша!

— Слива!

— Чие ҫырли!—терĕҫ вĕренекенсем.

— Ҫаксене пурне те пĕр сăмахпа мĕнле калама пулать?—каллех ыйтрĕ учительница.

— Улма-ҫырла!—терĕ Юра.

— Тĕрĕс. Улма-ҫырла теҫҫĕ вĕсене. Кишĕре, хăяра, помидора пахча ҫимĕҫ тесе калатпăр.

— Панулмипе груша ăҫта ӳсетха?—ыйтрĕ вăл каллех.

Петя Петров аллине ҫĕклерĕ.

— Панулмипе груша йывăҫ ҫинче ӳсеҫҫĕ,—ответлерĕ Петя.

Анна Павловна ачасене пластелин коробкине хатĕрлеме хушрĕ. Парта ҫинче, кашни ача умĕнчех, сарă, симĕс, хĕрлĕ пластелин.

— Паян эпир пластелинтан панулмипе груша тума вĕренĕпĕр,— терĕ учительница.

Пĕрремĕш класра вĕренекенсем груша тума сарăрах пластелин суйласа илчĕҫ. Ăна каштах нӳрлетрĕҫ те ывăҫ ҫине хурса йăваларĕҫ, ҫавракалатрĕҫ, якатрĕҫ. Анчах груша пулмарĕ-ха. Малалла мĕнле тумалла-ши? Малти парта хушшинче ларакан сарă ҫӳҫлĕ, кăвак кĕпе тăхăннă Гена Горбунов хăех тавҫăрса илчĕ. Вăл пластелина йăваласа шĕвĕрлетрĕ те груша пекех турĕ.

Груша аври ҫумĕнче ҫулҫи те пулмалла-ҫке-ха. Ҫăмăл ĕҫ мар. Кунта ăсталăх, тавҫăрулăх, тӳсĕмлĕх кирлĕ. Ытлашши васкама юрамасть.

Юра Кочетовăн груша та, панулми те хатĕр. Панулми унăн хĕрлĕ, груша—сарăрах. Аврисем ҫумĕнче пĕрер ешĕл ҫулҫă. Аякран пăхсан—чăн-чăн груша... Матур, пултаруллă ача иккен Юра. Тен, ӳссе ҫитсен, вăл чăн-чăн скульптор пулĕ!

Ĕҫленĕ май вăхăт иртни те сисĕнмест. Ачасем ыйăннине те туймаҫҫĕ. Коридорта ав шăнкăрав янраса кайрĕ, урок пĕтрĕ. Ачасем ҫаплах килĕсене саланасшăн мар, пĕр-пĕрин ĕҫне пăхса ытараймаҫҫĕ вĕсем.

— Ҫитес уроксенче ҫынсемпе чĕрчунсен кĕлеткисене тума вĕренĕпĕр,— пĕлтерчĕ учительница ачасене.

Ачасене ĕҫ урокĕ питĕ килĕшрĕ. Вĕсем ҫĕнĕ ĕҫ тума вĕрентнĕшĕн савăнаҫҫĕ.

# ШӐЛЛӐМСЕМПЕ ЙӐМӐКСЕНЕ

Василий ДАВЫДОВ

М. Жолобов ӳкерчӗкӗсем

## Натали

Урай тулли пукане
Сарса хунӑ Натали.
Хӑй пӗрмаях калаҫать,
Хушӑран тем ятлаҫать.
— Акӑ, курӑр тракторпа
Суха тӑвать,—тет,—аппа.
Трактор хуллен, майӗпен
Шӑвать урайваррипе.
Кунтах ҫӗнӗ грузовик
Гудок парать: пик! пик! пик!
— Ун шоферӗ Михали—
Ман пичче,— тет,— Натали.





## Кӳлӗ

Пирӗн ялӑн хӗрринче,
Ене ферми ҫумӗнче
Кӑвак пысӑк кӳлӗ пур.

Ҫакӑ ҫутӑ кӳлӗре,
Пырса курӑр-ха пӗрре,
Темӗн чухлӗ пулӑ пур.



## Тилӗ тус

— Тиллит-тиллит тилӗ тус,
Аҫта каян, тилӗ тус?
— Васкап эпӗ ялалла,
Манӑн чӗпсем тытмалла.

— Ах! пӗлмен-ҫке халиччен
Эсӗ усал иккенне.
Кайса калӑп сан ҫинчен
Сар сӑмсаллӑ чӗпсене.





## Вӑрӑ кушак



Кушак пӳртре
Мӑр-мӑр мӑрлать,
Сар чӳлмекрен
Хӑйма вӑрлать.

Тытрӑм хӑйма
Вӑрлакана,
Ура тапса
Вӑрҫап ӑна:

Кун пек ялан
Эс хӑтлансан,
Шӑши тытма
Йалтах манан.

## Сар автан



Пӗр ирхине автанран
Ыйтать пӗчӗк шӑллӑм ман:
— Ки-ки-ри-кук сар автан,
Мӗншӗн хытӑ авӑтан?
— Ҫӗнӗ вите шур чултан
Туса пачӗҫ,—тет автан.

## Тракторпа

Эпӗ ӳсӗп, пысӑк пулӑп,
Суха тӑвӑп тракторпа.
Анса пулӗ сарӑ тулӑ,
Колхоз пуйӗ тырпулпа.
Тра-та-та! Тра-та-та!
Эпӗ пырӑп тракторпа.



## Качака

Кач-кач качака,
Икӗ кукӑр майрака,
Кӗрсе кайнӑ чӑлана,
Тӑкса янӑ хӑймана.

Кач-кач качака,
Икӗ кукӑр майрака,
Кӗнӗ кайнӑ пахчана,
Ҫинӗ тутлӑ кӑшмана.

Кач-кач качака,
Икӗ кукӑр майрака,
Йалт ҫухатнӑ намӑса,
Ҫӳрет ялан тустарса.



## Куян



Сикрӗ тухрӗ вӑрмантан
Пӗр куян,
Пӑхкаларӗ унталла,
Кунталла.

Шурӑ куян кукленет
Юр ҫумне,
Кӑтартасшӑн мар хӑйне
Ҫынсене.

# Ĕçри мухтав





Уяв умĕнхи кунсем хăвăрт та сисĕнмесĕр иртеççĕ, вĕсем яланах хĕрӳ пулаççĕ. Уйрăмах вăл Аслă Октябрь уявĕ умĕн лайăх палăрать. Пурин те çак куна халиччен пулман çĕнĕ ӳсĕмсемпе кĕтсе илес килет, кашни çын чĕринчех—çĕнĕ ĕмĕт.

Уяв умĕнхи кунсенче станоксем хăвăртрах çаврăнма пуçлаççĕ, ĕç тухăçлăхĕ татах та ӳсет.

Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи рабочисем уява пĕр-икĕ уйăх малтан хатĕрленме тытăнчĕç. Праçник умĕнхи социализмла ăмăртăва хутшăнса, завод коллективĕ октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне продукци туса кăлармалли вунă уйăхри программăна пурнăçа кĕртрĕ, ноябрĕн пирвайхи кунĕсенче вунпĕр уйăхри плана ирттерсе тултарчĕ.

Кирек ăçта та коммунистсем яланах малта пыраççĕ. С-4 цехри паха продукци туса кăларакан бригадăна ертсе пыракан Ф. Довгаль участокĕнчи Е. Ефимов мастер, Е. Мищенко слесарьпе А. Кузнецов электросварщик, хăйсен пултарулăхĕпе, хăйсен хастарлăхĕпе рабочисене хавхалантарса, çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулăшаççĕ. Çамрăк рабочисем вĕсенчен ĕçлеме вĕренеççĕ.

Валентина Никитина ячĕ те темиçе уйăх хушши заводри хисеп хăми çинчен каймасть ĕнтĕ. Вăл та, Ф. Довгаль пекех, паха продукци туса кăларакан бригадăна ертсе пырать. Валентина Никитина заводри нумай çамрăк намотчицăсене тухăçлă ĕçлеме вĕрентет.

Мария Яковлевăпа Мария Павлова намотчицăсем Валентинăпа ăмăртса ĕçлеççĕ. Виçĕ тантăш сменăри задание яланах икшер-виçшер хут ирттерсе тултараççĕ.

Галина Захарова комсомолка та вата рабочисенчен пачах юлмасть. Вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, Галя электроаппаратура заводне ĕçе кĕме кăмăл тунă.

— Эпĕ заводри квалификациллĕ рабочи пулас тетĕп,—тенĕ вăл пĕрле вĕреннĕ тантăшĕсене.

— Ниушлĕ рабочи пуласшăн çеç вунă çул вĕреннĕ эсĕ?—тĕлĕннĕ унтан пĕрисем.

— Мухтавшăн, чапшăн çунать,— тенĕ хĕр кăмăлне ăнланмасăр теприсем.

— Мухтав та, чап та хăй тĕллĕн килмест,—тенĕ Галина.—Мухтав илме çанна тавăрса ĕçлес пулать. Ĕçе хăнăхсан, хам тăрăшсан, тен, мухтавĕ те килĕ. Мĕншĕн малтанах ăна хапсăнас.

Чăнах та малтанхи вăхăтра Галинăна ĕçлеме çăмăлах пулман. Çапах та вăл хăй ĕçне çине тăрса вĕреннĕ. Халь Галина Захарова нормăна 115—120 процент таран тултарать.

Ĕçри ӳсĕмсене нумай чухне цифрăсем хăйсемех лайăх кăтартса параççĕ. Акă завод пурнăçĕнчен илнĕ темиçе тĕслĕх.

Кăçалхи 9 уйăх хушшинче, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, ĕç тухăçлăхĕ 16 процент ӳснĕ.

Продукцин хăйне ларакан хакне 8,96 процент йӳнетме палăртнă пулсан, 11,2 процент йӳнетнĕ.

Кашни 100 рабочирен 67 рабочи тăхăр уйăх хушшинче хăйсен çулталăкри нормине тултарнă, 300 çынна яхăн çулталăк çурăран пуçласа тăватă çул таран задание пурнăçланă; заводра тĕрлĕ материалсене 98 пин тенкĕлĕх ытла перекетленĕ.

Рабочисен уйăхри ĕç укçи çулталăк хушшинче вăтамран 100 тенкĕ ытла ӳснĕ.

Çак цифрăсене тинкеререх пăхсан, эпир рабочисен кулленхи хастарлă ĕçне куратпăр. Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод коллективĕ Аслă Октябрь уявне çакăн пек ӳсĕмсемпе кĕтсе илчĕ, çак çитĕнӳсем ĕнтĕ заводри çĕршер рабочисемпе пĕрле Галина Захарова комсомолкăна та мухтав кӳчĕç.

**Н. КРАЕВ.**





Ӳкерчĕксенче: 1. Маша Богомолова контролер Шупашкарти заводра туса кăларнă электроаппаратурăна тĕрĕслет. 2. Валентин Кусакин слесарь-сборщик ĕçре. 3. Заводри ватă рабочисем (сылтăмран сулахаялла): Леонид Иванович Ушков, Алексей Иванович Громов тата Петр Семенович Лукоянов. 4. Зиновий Яковлевпа Николай Чернышев электроаппарат пухса хатĕрлеççĕ.

**П. Матюхин, С. Усов** тата **В. Исаев** фотоӳкерчĕкĕсем.

# САЛАМПИ

***Повесть***

Александр АРТЕМЬЕВ

Александр Артемьев «Ҫĕнĕ ҫынсем» ятлă трилоги ҫырать. Ҫак виҫĕ кĕнекерен тăракан пысăк произведенире писатель вăрҫă хыҫҫăнхи пурнăҫа, ялхуҫалăхне хăвăрт вăйлатас тĕлĕшпе партипе правительство кăтартса панă задачăна пирĕн халăх ҫав тери пысăк хастарлăхпа пурнăҫа кĕртсе пынине, ялта ҫĕнĕ ҫынсем — ялхуҫалăхĕнчи новаторсем, лайăх специалистсем — ӳснине кăтартса парать.

«Салампи» — ҫав трилогин пĕр пайĕ.



## СЫВАЛМАН СУРАНСЕМ

Сывалман суран яланах кĕтмен ҫĕртен уҫăлса, сурса ыратма тытăнать.

Салампи фермăран кăнтăрла иртсен таврăнчĕ. Пӳртре никам та ҫук, амăшĕпе Валерик кӳрше тухса кайнă. Вăл шурă хăнтăрлă хура кĕрĕкне хывса ҫакрĕ те пысăк тĕрĕллĕ кăвак халат тăхăнчĕ, пит ҫуса апат ҫиме ларчĕ. Ҫинĕ хушăрах Юрмалиат кĕҫекине уҫкаласа пăхрĕ, тĕллĕн-тĕллĕн вулакаларĕ.

Часах Лена васкаса килсе кĕчĕ. Унпа пĕрле пӳрте, пăс пек мăкăрланса, сивĕ кĕрсе тулчĕ. Шăнса хĕрелнĕ хĕрĕн пичĕ сĕм вăрманта пиҫнĕ палан тĕслĕ курăнать, ҫырă куҫĕсенче хавасլă хĕлхем ялкăшса тăрать. Лена шурă перчеткисене, пĕчĕк ача евĕр, шăлпа ҫыртса хыврĕ те аллисене сăтăркаласа, вĕрсе ăшăтма тытăнчĕ.

— Валерик ăҫта кайнă, Салампи?

— Маруҫсем патне кайнă пуль. Маруҫ инкĕшĕн ачипе, Мишкăпа, питĕ туслă вĕсем, кунĕпех пĕр-пĕрин патне выляма ҫӳреҫҫĕ.

— Пĕрне-пĕри ăнланаҫҫĕ-и?

— Валерик тахҫанах чăвашла тĕшмĕртекен пулчĕ ĕнтĕ. Аннепе чăвашлах перкелешет, манпа ҫеҫ хушăран вырăсла калаҫать. Хам килте сахал тăратăп та, аннепе иккĕшĕ кунĕпех чăвашла пуплеҫҫĕ. Малтан чăвашла лайăххах калаҫаймастчĕ, кашни сăмаха вырăсларах каласа култаратчĕ, халĕ картине кĕрекен пулчĕ.

— Питĕ курас килет ăна. Эпĕ килмессерен килте ҫук вăл.

— Часах килеҫҫĕ пуль-ха. Хывăн. Лар. Акă, хайхи кĕнеке. Районтан Казаков илсе килчĕ.

— Мĕншĕн пĕрре кăна?

— Сутса пĕтернĕ, кăна та аран ҫаклатрăм, терĕ. Ҫак кунсенчех Книготорга тата килмелле, тесе каларĕҫ, тет. Халлĕхе пĕрипе те ҫитĕ: зоокружок занятийĕнче пĕрле пухăнса вулăпăр. Хывăнса лар эсĕ, мĕн, туй арăмĕ пек, ура ҫинчех тăратăн?

Лена пальтине хыврĕ те, сĕтел умне ларса, Юрмалиат кĕнекине уҫкалама тытăнчĕ.

— Лайăх кĕнеке,—терĕ вăл, кăшт пăхкаласан,—шăпах пире кирлĕ кĕнеке. Кунта пăрусене мĕнле пăхса ӳстересси ҫинчен те, пăру пăхакансене ĕҫленĕшĕн мĕнле тӳлесси ҫинчен те — йăлтах каланă.

Салампи сĕтел ҫине пуҫтарчĕ, чашăктирĕке ҫуса тасатрĕ, нӳрĕ мунчалапа урай шăлса тухрĕ, вара малти пӳлĕме кĕрсе, тимĕр кăмака хутса ячĕ.

Лена, ҫăматтине хывса, малти пӳлĕме ҫăм чăлха вĕҫҫĕн кĕчĕ, кĕнеке хурса тултарнă пĕчĕк сĕтел умне кушакла ҫемҫен утса пырса ларчĕ, кунта пĕрремĕш хут килнĕ евĕр, йĕри-тавра пăхса илчĕ.

Кăмака хыҫĕнче Салампин вырăнĕ курăнать: тӳшек-минтерĕ кăпăк пек шуралса, ҫĕкленсе тăрать; унтах, стена ҫумĕнче, пысăк арча («хĕр арчи ĕнтĕ», шухăшларĕ Лена), ик-виҫĕ чăматан, мал енче — кĕнеке хурса тултарнă пĕчĕк шкап; кашни япалинех чĕнтĕрлĕ чăлт шурă ҫивиттипе витнĕ. Чӳрече каррисем те чĕнтĕрлĕ, тап-таса. Пысăк фикус ҫулҫисем, йĕпе тутăрпа шăлнăран пулас, ҫумăр хыҫҫăнхи хупах ҫулҫисем пек йăлтăртатса лараҫҫĕ.

Малти стена ҫумне сăн рамкисем ҫакса тултарнă. Лена, яланхи йăлипе, сăнӳкерчĕксем пăхма тытăнчĕ. Кирек кам патне пырса кĕрсен те, сăнӳкерчĕксем пăхмасăр чăтаймасть вăл: халиччен пурнăҫра курман-илтмен ҫынсен пурнăҫне, ĕҫне, шухăш-кăмăлне вĕсен сăнӳкерчĕкĕсем тăрăх пĕлме тăрăшать.

Акă, ялхуҫалăх институчĕн студенчĕсем пĕрле ӳкернĕ сăн. Ҫĕр тĕрлĕ сăнар, ҫĕр тĕрлĕ пурнăҫ, ҫĕр тĕрлĕ кăмăл... Акă, Салампи тусĕсем — каллех кашнин хăйне май кăмăлĕ, шăпи... Лена вĕсене Салампи каласа панипех аван пĕлет ĕнтĕ. Акă, яланах хаваслă Казаков кăмăллăн кулса ларать... Пысăк Нина, пуҫне салтакла тӳрĕ тытса, хăюллăн пăхать... Пĕчĕк Нина ларма хĕр пек именчĕклĕн кулать... Саланов тем шухăша кайнă... Алмазов такама тарăхнăн туйăнать, унăн куҫхаршисем хушшипе тарăн йĕр выртнă... Акă, садри фонтан умĕнче алла-аллăн тытăнса тăваттăн тăраҫҫĕ: Салампипе Алмазов, Музăпа Вирьялов. Музăпа Вирьялов пĕр-пĕрин ҫине пăхса кулаҫҫĕ.

«Мĕн тери хитре мăшăрсем!» ирĕксĕрех шутларĕ Лена тăваттăшĕ пирки те, унтан каллех Алмазов портречĕ ҫине тинкерчĕ.

— Мĕнле пăхса йăлăхмастăн, кашни килмессерен пăхатăн-ҫке!—терĕ ăшшăн кулса Салампи.— Е хăш каччине те пулин юратса пăрахрăн-им?

Лена, учительница умĕнче айăпа кĕнĕ хĕрача евĕр именсе, ним чĕнмесĕр, сĕтел хушшине ларчĕ; унăн питне кăшт ҫеҫ палăрмалла хĕрлĕ тĕс тухрĕ, тусĕ ăна пурпĕрех асăрхарĕ.

Тимĕр кăмака кĕрлесе ҫунать, унăн айккисем хĕрсе, хĕрелсе кайрĕҫ; кăвак кушак урай варрине шăппăн тухса выртрĕ те, ăшăпа киленсе, хӳрине юлхавлăн вылятма пуҫларĕ. Пӳртре шăпах. Лена ҫамрăк пăрусене хĕлле мĕнле пăхса ӳстересси ҫинчен саспа вулать, Салампи ăна хирĕҫ чавсаланса ларнă та ним шарламасăр итлет.

Сасартăк ҫенĕкре алăк шалтлатнă сасă илтĕнчĕ, унтан тем кĕмсĕртетрĕ,— сак ҫинчи витре ҫĕре ӳкрĕ пулас. Кĕҫех пӳрте Маруҫ такамран тарнă пек вăркăнса кĕчĕ. Вăл, юрлă ҫăматтисене шăлса тасатма та астумасăр, тӳрех малалла иртрĕ, тута урлă ҫыхнă хулăн тутăрне салтнă май вĕтĕлтетме те пуҫларĕ.

— Ой, Салампи! Сирĕн пата хăна килет! Хам куҫпа хам куртăм, хĕвелшĕн те!

— Мĕнле хăна? Ăҫта куртăн?

— Ак, ара, Таруҫсем патне каҫаттамчĕ те, карта урлă куртăм. Вара Таруҫсем патне кĕмесĕрех кунта чупса килтĕм, систерес, терĕм, ара, кĕтмен хăна пуль, терĕм.

— Мĕнле карта урлă куртăн? Мĕнле хăна?—тĕлĕнсе ыйтрĕ Салампи.

— Ак, ара, суяп-им? Маншăн пулсан мĕн? Ик айкки те тăвайкки. Эп хăвна систерес тесе анчах... Уй урлă йĕлтĕрпе каҫрĕ те сирĕн анкартине тӳрех кĕрсе кайрĕ. Ĕненместĕн пулсан, ху тухса пăх, ара!

— Тен, «Малалла» колхозран Саланов килчĕ пулĕ, ҫавă йĕлтĕрпе ҫӳрекенччĕ,—терĕ Лена, ҫăматтине хăвăрт тăхăнса.

— Ҫук, вăл анчахрах килсе кайрĕ, халĕ килме ĕҫĕ те ҫук унăн, ĕҫсĕр ҫӳрес ҫын мар вăл, ху пĕлетĕн.

---

*Малалли. Пуҫламăшĕ 5–10 №-сенче.*



# Çамрӑк музыкантсем

**Çĕрпӳ урамĕсенче час-часах хитре афишӑсем курма пулать. Вĕсем Культура çуртĕ çумĕнчи художествӑллӑ пултарулӑх кружокĕн концертне пыма чĕнеççĕ.**

**Çĕрпӳри Культура çуртĕ çумĕнчи духовой оркестр концертне кунта пурте юратса итлеççĕ. Духовой оркестр хулара кӑна мар, çывӑхри колхозсенче те час-часах концертсем парать.**

**Октябрь уявĕн кунĕсенче духовой оркестр темиçе концерт пачĕ. Унӑн репертуарĕ те çултан-çулах пуянланса пырать. Оркестр чӑваш халӑх юррисемпе пĕрлех совет композиторĕсемпе вырӑс классикĕсен произведенийĕсене те, тĕнчери классиксен музыкине те ӑста калать.**

Ӳкерчĕкре: Сидоров ертсе пыракан духовой оркестр çĕнĕ юрӑсем калама вĕренет.

**Ф. Иванов** фотоӳкерчĕкĕ.

— Ара, Саланова лайӑх пĕлеп ĕнтĕ, ку пĕрре те ун пек мар, ют çын. Питĕ васкаса килчĕ, пушар тухнӑ пек,—терĕ Маруç вĕтĕлтетсе.—Эпĕ каям-ха, пĕлтерме анчах кĕрсеттĕмччĕ...

Салампи, чӑлха вĕççĕн лараканскер, тимĕр кӑмака умĕнче типсе выртакан çӑматтине пырса илчĕ, тӑхӑнас тесе, хӑрах çӑматтине тытрĕ кӑна...

— Салам! Пӳртре хуçисем пур-и?— илтĕнчĕ çенĕкре арçын сасси.

— Пур, пур... пурте пур! — янраса кайрĕ Маруçӑн чӑрӑлти сасси.

Салампи хӑрах çӑматтине алла тытнипех урай варринче хытса тӑчĕ.

— Кĕме юрать-и? — илтĕнчĕ тулти пӳлĕмрен.

— Юрать,—терĕ Салампи улшӑннӑ сасӑпа; хӑй, çӑматтине алӑран пӑрахма астумасӑр, тулти пӳлĕмелле утрĕ, анчах унӑн урисем, нумай хушӑ чирлесе выртнӑ çынӑнни евĕр, пĕр-икĕ утӑмрапах вӑйсӑрланса кайрĕç, вӑл вара малалла пĕр утӑм та тӑваймарĕ.

— Кунталла... иртĕр...—терĕ тытӑнчӑклӑ сасӑпа. Унӑн сасси чĕтренине Лена та лайӑххах сисрĕ, анчах тусĕ мĕншĕн çав териех пӑлханнине ӑнланмарĕ вӑл, тĕлĕнсе кӑна ларчĕ.

Уçӑ алӑк умне Алмазов пырса тӑчĕ.

Унӑн куçхаршийĕсем, куç харпӑкĕсем шӑнса пӑрланнӑ — кĕмĕл ука пек курӑнаççĕ; каракуль çĕлĕк умне те, пальто çухавине те пас тытнӑ.

— Салам сире! — Алмазов çĕлĕкне илсе, кӑшт çеç йӑлкӑшса куланçи турĕ, Лена еннелле çӑмӑллӑн пуç тайрĕ, çапах та Ленӑна асӑрхаман пекех пулчĕ: куçĕсем Салампи çинчен каймарĕç.

— Килĕрех,—терĕ Салампи, кĕтмен хӑна умне пырса, анчах ӑна алӑ пама та, аллинчи çӑматта пӑрахма та астумарĕ.—Хывӑнӑр, малалла иртсе ларӑр,— урӑх ним самах тупаймасӑр, васкаса каларĕ вӑл.

Пĕр самантрах Алмазов пуçне темиçе шухӑш килсе кĕчĕ. Çакӑнта мĕн каламаллине, мĕн тумаллине çул çинчех шутласа хунӑччĕ вӑл, анчах халĕ ним те аса илеймерĕ. Хӑйне Салампи алӑ пама та, ӑшӑ сӑмах калама та тытӑнса тӑнине курсан, вӑл сасартӑках пӑлханса кайрĕ.

— Эпĕ васкатӑп, хывӑнсах тӑрас мар,—терĕ, мĕн каланине те шута илмесĕр; çак самантра хӑй айван пулнишĕн те, ӑнаççӑр кун çакӑнта килсе кĕнишĕн те, калаçма пĕлменнишĕн те тарӑхрĕ вӑл. Хывӑнмасӑр тӑма килменччĕ-çке кунта! «Салампи халĕ те сан сӑнна усрать», сӑмах майĕн пĕлтерчĕ ӑна Çемен,—Алмазов вара, кĕрекерен тухса, йĕлтĕр çине тӑчĕ те çак сивĕре уй урлӑ каçрĕ. Вĕçнĕ евĕр килчĕ вӑл кунта, акӑ халĕ, савни çуртĕнче, алӑк сули урлӑ каçма хӑяймасӑр тӑрать.

— Иртĕр, малалла иртĕр, — терĕ Салампи, хӑйĕн пичĕ кӑварла ялкӑшма, пĕçерме тытӑннине сиссе; хулпуççийĕсене темиçе пӑт йывӑрӑш чул пуснӑ пек, çӑматӑ тытнӑ алли лӑштӑрах усӑнчĕ.

Алмазов, çĕлĕкне алӑрах тытса, малти пӳлĕмелле иртрĕ.

— Паллашӑр, ку манӑн хĕр-тусӑм Лена.

— Анатолий,—терĕ каччӑ, Ленӑна алӑ парса.

Салампи хӑй ӑна алӑ паманнине астурĕ те пушшех вӑтанса, хĕрелсе кайрĕ.

— Каçарӑр, эпĕ халех,—терĕ те вӑл кайри пӳрте тухрĕ. Хӑй хыççӑн алӑка хупсанах аллинчи çӑматтине кӑкӑр çумне пӑчӑртаса тытрĕ, сиксе тухасла тапакан чĕрине лӑплантарасшӑн пулчĕ.

«Акӑ мĕнле, ӑçта тепре тĕл пулмалла килсе тухрĕ! Нихçан та урӑх тĕл пулас мар, ун çинчен тек шухӑшлас мар тенĕ чух! Мĕншĕн килчĕ-ши вӑл, мĕншĕн пĕр сӳннĕ вута тепĕр хут чĕртме шут тытрĕ?» асапланса шухӑшларĕ хĕр.

— Ларӑрсам, тархасшӑн, — сĕнчĕ Лена, Алмазова хыçлӑ пукан лартса парса.

Анатолий, ӑна тав туса, ларчĕ те тӳрех стена çумĕнчи хӑйĕн портретне курчĕ. «Çурса тӑкман иккен, тĕрĕс каларĕ Саланов», шухӑшларĕ савӑнса, анчах ун савӑнӑçĕ нумая пымарĕ; хӑй сӑнĕпе юнашарах Музӑпа Вирьялов сӑнĕ те пулнине асӑрхасан, вӑл каллех салхуланчĕ. «Юратса мар, ячĕшĕн çеç, иртнĕ кунсене асӑнмалӑх çеç усрать иккен ку сӑнӳкерчĕксене», вĕçсе илчĕ кӳренчĕк шухӑш.

Салампи çӑматӑ тӑхӑнса кĕчĕ те кĕнеке шкапĕ çумне таянса тӑчĕ, аллисене хыçалалла тытрĕ.

— Эсир пирĕн районта нумайранпа-и?—ыйтрĕ вӑл, ним калама аптраса, унтан сылтӑм куçхаршине вӑта пӳрнипе хуллен сӑтӑрса илчĕ.

— Виç-тӑватӑ кунлӑха килсеттĕм, халӑх юррисене çырса илме,—терĕ Алмазов, Салампи шухӑша кайса, куçхаршине сӑтӑрнинчен тĕлĕнсе.—Салановсем патĕнче пурӑнтӑм. Ыран ирех тухса каятӑп, виçмине Хусана çитмелле. Кайиччен сирĕн пата килсе курас, терĕм.

Салампи чĕнмерĕ. «Пĕтнĕ, пĕтнĕ пирĕн юрату,— шухӑшларĕ вӑл,— анчах сӳнсех ларман-ха».

Кĕл ӑшĕнчи кӑвар çавнашкал тĕлкĕшет: çиелтен пӑхатӑн та—сӳннĕ пекех, нимĕн те çук темелле, анчах кĕлне хускатан та—шĕл-кӑвар çаплипех ялкӑшса выртать; нумайччен çапла ялкӑшать вӑл, юлашкинчен пурпĕрех сӳнет. Вутӑ хурса тӑмасан, кӑвайт сӳнсе ларнӑ пекех, темле хĕрӳллĕ юрату та, ӑна нимпе те чĕртсех, хавхалантарсах тӑмасан, сӳнет иккен.

— Валерий амӑшĕпе курса калаçас, терĕм.

Вилнĕ савни ятне асӑнни икĕ хĕрне те шартах сиктерчĕ, куçа курӑнми Валерий виççĕшин хушшине килсе тӑнӑн туйӑнчĕ. Хĕрсем пĕр-пĕрин çине пӑхса илчĕç.

— Хӑш урамра вĕсен килĕ, инçетре-и?

— Турикасра,—терĕ Лена, — пирĕн килпе юнашар.

Хӑйне Салампи мар, Лена ӑсатасран хӑранӑ пекех, Алмазов васкаса ыйтрĕ:

— Эсир унта пыма ерçеймĕр-ши, Салампи?

— Лармаллаччĕ кӑштах... Ытла васкатӑр пулсан, кайса килĕпĕр,—терĕ те Салампи, тумланма кайри пӳлĕме тухрĕ.

«Пĕтрĕ йӑлтах!—шухӑшларĕ Алмазов, ун хыçĕнчен хурлӑхлӑн пӑхса.— Эпĕ ӑна текех нимпе те малтанхи пек килĕшес çук. Эпĕ ун умĕнче питĕ айӑплӑ. Çав каçхине эпĕ мĕншĕн Музӑпа кинора пулнине вӑл пĕлме кирлĕ, уншӑн каçарма та пултарĕччĕ-и, тен; анчах эпир Музӑпа ун хыççӑн та тĕл

пулкаларăмăр. Пĕчĕк Нина ăна кун çинчен çырса пĕлтернех. Эпĕ Салампи патне çийĕнчех çыру ямарăм, хам йăнăша сиресшĕн пулмарăм. Халĕ ĕнтĕ кунта питĕ кая юлса килтĕм. Пĕлмерĕм иккен Салампи кăмăлне, ăна тĕплĕн ăнланма пултараймарăм»...

— Эсир Валерипе пĕрле фронтра пулнă-и?—ыйтрĕ Лена. Хăй тутăрне те, платьине те именчĕклĕн темиçе хут тӳрлетсе илчĕ, тĕплеттернĕ çăматтине сак айнерех пытарчĕ.

— Пĕрле.

— Лайăх салтакчĕ-и Валерий?

— Паттăр салтакчĕ. Тĕлĕнмелле ырă çынччĕ. Çывăх тусăмччĕ манăн.

— Эпĕ сирĕн çинчен нумай илтнĕ.

— Камран?

— Вăрçă вăхăтĕнче Валерий çырса пĕлтеретчĕ, питĕ пултарулла çын тетчĕ вăл сире; кайран Салампи каласа кăтартатчĕ.

— Мĕнле çын тетчĕ Салампи мана?

Лена каличчен пӳлĕме Салампи кĕрсе тăчĕ — пальтопа, вăрăм çӳçеллĕ кăвак тутăрпа.

«Çĕнĕ çул каçхине, ёлка тавра ташланă чух, вăл шăпах çапла тумланнăччĕ,—чунне ыраттарса аса илчĕ Алмазов.—Ун чухне вăл питĕ хаваслăччĕ, илемлĕччĕ. Çук, халĕ те ытармалла мар илемлĕ, анчах... унтанпа нумай улшăнусем пулчĕç çав... Ун чухне вăл мана юрататчĕ»...

Алмазовăн пăрланнă куçхаршийĕсем ирĕлчĕç те, питçăмартисем çинелле шăрçа пек икĕ тумлам йăрлатса анчĕç. Каччă пит-куçне тутăрпа шăлса илчĕ.

— Лена,—терĕ Салампи,—тимĕр кăмака çунса тухиччен тахта-ха эппин эсĕ, тен, анне те халех таврăнать пулĕ, эпĕ ăна киле килме каласа ярăп. Кайран фермăна пĕрле кайăпăр...

Алмазов малтан тухрĕ. Урамра юнашар утса пычĕç, пĕр хушă иккĕшĕ те чĕнмерĕç, кашни харпăр хăй майлă шухăшларĕ. Каласмасăр пыма лайăх маррине туйса, Анатолий сăмах хускатрĕ.

— Мĕнле пурăнатăр?

— Майĕпен.

— Тунсăх мар-и?

— Тунсăхлама вăхăт çук, пĕрмай ĕçре. Ĕçрен таврăнсан—вĕренетĕп. Валерикпа калаçса чуна уçатăп.

— Институтра пĕрле пулнисемпе çыхăну тытатăр-и?

— Пĕчĕк Нина çыркалать, ыттисемпе час-часах тĕл пулатăп: Çемен, пĕлетĕр, кӳршĕ колхозра, Казаков—районта, Пысăк Нина—кӳршĕ районта. Района кайсан, тĕл пулкалатпăр, хăйсем те килкелеççĕ çул майăн... Валерика питĕ юратаççĕ...

«Мĕншĕн вăл пĕрмай Валерика асăнать-ха? Е мана хăйĕн ача пуррине яланах астутарасшăн-и?»—кăмăлсăрланса шухăшларĕ Алмазов.

Салампи те пăшăрханчĕ. «Мĕншĕн вăл пĕрре те Валерик çинчен ыйтмасть-ха? Е ăна ман ача пурри ним чухлĕ те килĕшмест-и? Е вăл та мана Вирьялов пек çеç юратать-и? Анчах вăл пĕрре те Вирьялов пек çăмăлттай этем мар-çке?»

— Ман çырăва илтĕр-и?—пăлханса ыйтрĕ Алмазов.

— Илтĕм,—терĕ Саламп, ахаль япала çинчен çеç калаçнă пек лăпкăн калаçма тăрăшса.

Алмазов, пĕтĕм чунтан пăлханса, вăл «илмен» тесе каласса кĕтнĕччĕ. Акă юлашки шанчăк та пĕтрĕ. Саламппи вырăнĕнче пулсан вăл, мăнкăмăллăскер, хăй те çапла тунă пулĕччĕ, анчах халĕ хăйне айăпласшăн пулмарĕ, Салампи мĕн чухлĕ асап тӳснине пĕлесшĕн тăрăшмарĕ. «Мĕншĕн çырмарăр?» тесе ыйтас—лайăх мар, ытла куçран ӳкес пулать, тата мĕншĕн çырманни ăхалех паллă.

— Института таврăнас теместĕр-и?—ыйтрĕ вăл, чылайччен чĕнмесĕр асапланса пынă хыççăн.

— Кĕркунне таврăнасах тетĕп. Унччен колхозра ĕçлес, тырă тăвас кăшт. Эпир ытлашши пуян пурăнмастпăр: кил-çуртне те хамăнах тытса тăмалла, çипуçне те хатĕрлемелле.

«Мĕншĕн вăл çак самантра та хуçалăх пирки калаçать-ха, юри мана кӳрентересшĕн-им?—пăшăрханса шутларĕ Алмазов.—Мĕн тери ырă кăмăллă хĕрччĕ, халĕ ак мĕнле хытнă иккен ун чунĕ...»

Саламп ун çине куç хӳрипе пăхса илчĕ. Алмазовăн куçхаршисем каллех пăрланнă, çĕлĕк хăлхисем те, пальто çухави те пасарнă. «Сивĕ иккен,—шухăшларĕ хĕр,—анчах мĕншĕн эпĕ ним те сисместĕп».

Ватă йăмрасем сивĕпе шартлатни, таçта çуна сасси кăчăртатни илтĕнет; каç еннелле сулăннă хĕвел икĕ хăлхаллă; йывăççем çинчи юр пĕрчисем ёлка çинчи пĕчĕкçеç лампочкăсем евĕр йăлтăртатаççĕ; пăр сăмсаран вичкĕн çил вĕрет... Анчах Саламп ним те сисмест: ун ăшĕнче çулăмсăр вут çунать.

Кĕл айĕнче хуллен тĕлкĕшекен кăвара хускатнă ĕнтĕ, акă халь çав кăвар, çунса пĕтес умĕн, юлашки хĕмпе ялкăшать...

Валерий амăшĕ, вĕсем пӳрте пырса кĕрсен, ним те тавçăрса илеймерĕ, Саламп çине ӳпкевлĕн пăхрĕ: «Валерий сывă таврăннă пулсан, эсĕ çак пӳрте ют каччăпа килсе кĕрес çукчĕ», терĕç унăн куçĕсем.

Çавна лайăххах туйса илсен, Саламп чунĕ каллех ыратса кайрĕ. «Акă, тепĕр çын суранне ыраттарса хăваратпăр», шухăшларĕ вăл кăмăлсăрланса.

— Эсир тем сăмахпаччĕ ĕнтĕ? Коля патне пулсан—вăл килте мар, шкултан таврăнман-ха,—терĕ карчăк сивĕреххĕн.

— Эпир сан пата килтĕмĕр, Валерий амăшĕ,—йăвашшăн пĕлтерчĕ Саламп, малалла иртсе.—Акă, паллаш, Валерин фронтри тусĕ ку, çыру çырса яраканĕ...

...Карчăк патĕнчен вĕсем каçа хирĕç тин тухрĕç. Валерий амăшĕ вĕсене ăсатма крыльцана тухрĕ, кунта каллех уйрăлайми калаçса тăчĕ, ывăлĕ çинчен тем те, тем те ыйтрĕ. Куççульне шăлашăла йĕпеннĕ тутăрĕ пăрланма пуçларĕ.

— Ки... кил... килĕр татах,—терĕ карчăк, макăрнипе калас сăмаха калаймасăр.—Йĕрсе те ним те тухмасть ĕнтĕ. Хурлăха хура куç... куççульпе çуса яраймăн...

Саламппе Алмазов урама йывăр кăмăлпа тухрĕç, чылайччен калаçмасăр пычĕç.

Саламп умне халĕ икĕ паттăр салтак сăнарĕ тухса тăчĕ.

Алмазов хăй çинчен питĕ сахал, сăмах майĕн çеç, Валерий пурнăçĕпе çыхăнтарса каларĕ; анчах Валерин кулленхи савăнăçĕ-хурлăхĕ, ĕçĕ-хĕлĕ, хăюлăхĕ-чăтăмлăхĕ, чаплă вилĕмĕ çинчен итленĕçемĕн Алмазов та паттăр пулнине Саламп чунпа туйса илчĕ.

Алмазов хăй çинчен сахал калани халĕ хĕр кăмăлне çăмăллатрĕ, чунне уçрĕ. Çак самантра Алмазов хăй çинчен кăшт ытларах каланă пулсан та, Саламп ăна мухтанчăк вырăнне хурĕччĕ, калама çук кӳреннĕ пулĕччĕ. Анчах Алмазов—Вирьялов мар, хăй çинчен ытлашши шавлама юратмасть. Çак сăпайлăхшăн, тӳрĕ кăмăллă та хăюллă пулнăшăн юратмарĕ-ши ăна Саламп? Тата мĕншĕн-ха? Талантшăн-и? Паллах, кам ан хисеплетĕр-ха пултарулла çын-

## Пирĕн енче хĕр нумай...

Николай АЛЕКСАНДРОВ

Пирĕн енче хĕр нумай,—
Акăш евĕр уттисем,
Каччă çине пăхнă май
Йăл кулаççĕ тутисем.
Пирĕн енне пырса кур,
Пирĕн хĕрсем пит сатур.
Кăмăл тăвĕ чи хитри,
Чиперринчен чиперри!..

Пирĕн енче хĕр нумай,—
Йăлтăр-йăлтăр туфлисем.
Йăкăш-йăкăш шунă май
Шăранаççĕ юррисем.
Пирĕн енне пырса кур,
Пирĕн хĕрсем пит сатур.
Кăмăл тăвĕ чи хитри,
Чиперринчен чиперри!..

Пирĕн енче хĕр нумай,—
Ылтăн вĕсен аллисем.
Уявсене тухнă май
Йăлкăшаççĕ медальсем.
Пирĕн енне пырса кур,
Пирĕн хĕрсем пит сатур.
Кăмăл тăвĕ чи хитри,
Чиперринчен чиперри!..

Пирĕн енче хĕр нумай,—
Питĕ шеп-çке туйĕсем.
Кĕр мăнтăрĕ çитнĕ май
Тайăлаççĕ сĕтелсем.
Пирĕн енне пырса кур,
Пирĕн хĕрсем пит сатур.
Кăмăл тăвĕ чи хитри,
Чиперринчен чиперри!..

на? Анчах халӗ Саламписӗн ҫамрӑк композитор мар, ҫав сӑпайлӑ та паттӑр салтак, Валерин ҫывӑх тусӗ темрен хаклӑрах пек туйӑнчӗ. Алмазов-салтак, унтан Алмазов-студент Салампи идеалӗ пулнӑ пулсан, Алмазов-композитор хӗр чунне ыраттарчӗ кӑна, унӑн таса туйӑмӗсене пылчӑк ӑшне пӑрахса таптарӗ, чӗрене амантса хӑварчӗ...

Салампи ҫакӑн ҫинчен шухӑшларӗ те, кӑмӑлӗ каллех хуҫӑлчӗ. Алмазова питӗ аван пӗлет вӑл: Анатолий питӗ ӑслӑ, вӗри чӗреллӗ, хастар чунлӑ каччӑ; унӑн пултарулӑхӗ пирки, пысӑк пуласлӑхӗ пирки никам та иккӗленмест (Салампи, тен, унӑн пулас шӑпине никамран лайӑх пӗлсе тӑнӑ пуль!); вӑл пӗрре тума шутланӑ ӗҫе тӑватех, ӑна йывӑрлӑхсем хӑратса тӑрас ҫук. Анчах мӗншӗн юратура ҫапла ҫирӗп пулмарӗ-ха вӑл?

«Эсӗ мана халь те юрататӑн, манаймастӑн мана, сисетӗп,—шухӑшларӗ Салампи,—эсӗ маншӑн тем тума та хатӗр, пӗчӗк Валерика та пӑхса усрама хатӗр. Валерика манран халь тин уйӑрма ҫук ӗнтӗ. Эпӗ ӑна пӑрахмастӑп. Анчах вӑл сана та ҫавнашкалах кирлӗ-ши? Вӑл пулман пулсан, сана тата лайӑхрах пулмӗччӗ-им? Валерика усрава илнӗшӗн эсӗ мана Вирьялов пек ӳпкелес ҫук, пӗлетӗп, анчах эсӗ уншӑн савӑнмастӑн та пулас. Манӑн сана савӑнтарас, ырӑ тӑвас, пулӑшас килетчӗ. Хам юратнӑ ҫынна кӳрентерме нихҫан та шут тытас ҫук эпӗ... Эх, Толя, пӗлместӗн эсӗ ман кӑмӑла!.. Ҫавӑнпах уйӑралмастпӑр-ши иксӗмӗр?»

«Акӑ, йӑлтах пӗтрӗ те,—шухӑшларӗ ҫав хушӑра Алмазов,—иксӗмӗр пӗр-пӗрине ӑнланма, юратма, хавхалантарма ӗмӗтленни те, юрату ӗмӗрлӗхе пырасса шанни те—йӑлтах ҫурхи шыв пек юхса кайрӗ. «Ӗмӗрлӗх юрату» тени вӑл, тен, вунҫичӗ ҫулхи хӗр тӗлӗкӗнче ҫеҫ курӑнать пуль»...

— Атьӑр пӳрте, Валерика куратӑр, халиччен вӑл киле таврӑнчӗ пуль ӗнтӗ,—терӗ Салампи, Алмазов анкарти алӑкӗ еннелле утнине асӑрхасан.

«Мӗншӗн сана йӑлӑхтарса ларас-ха? Халь тин эсӗ ман майлӑ ҫаврӑнас ҫук ӗнтӗ»,—шухӑшларӗ Алмазов.

— Кӗрсе тӑрас мар пуль, Салампи, тӗттӗмлениччен Салановсен патне ҫитсе ӳкес. Ҫанталӑк та пӑсӑлать ав.

Анчах хӗр ӑна урӑхла ӑнланчӗ. «Ҫук, курасшӑн мар эсӗ Валерика, юратмастӑн эсӗ ӑна, ҫавӑнпа эпир пӗрлешес ҫук: пирӗн хушӑра пӗчӗк Валерик тӑрать».

— Кӑштах кӗрсе лармаллаччӗ. Сӑра та пурччӗ... Ытла васкатӑр пулсан эппин... кӑшт ӑсатам...

Салампи унпа пӗрле пахчана тухрӗ. Хӗллехи сад шӑпах, пас тытнӑ улмуҫҫисемпе чиесем, тураттисене йывӑррӑн усса, хускалмасӑр лараҫҫӗ; акаци тӗмӗ, юр пуснӑран, юмахри темле йывӑҫ пек сарӑлса ларать, тен, леш «араукари» тенӗ йывӑҫӗ ҫапла мар-ши? Юр ҫинче мулкач йӗрӗсем курӑнмаҫҫӗ. Сад урлӑ, ҫамрӑк салтак пичӗ ҫинчи суран евӗр, йӗлтӗр йӗрӗ ҫеҫ тӑсӑлса выртать. Хутран-ситрен ҫил шӑхӑрса иртет—йывӑҫ турачӗсем хуллен сулланса илеҫҫӗ, пас лӑстӑртатса тӑкӑнать. Каҫа хирӗҫ кутсӑр-пуҫсӑр тӑман тухать пулмалла...

Алмазов сарай ҫумне сӗвӗнтернӗ йӗлтӗрсене илчӗ те аллинчех тытса тӑчӗ. Салампи ним калама пӗлмерӗ, тахҫанхи туйӑмсем ӑна тепӗр хут ҫавӑрса илчӗҫ, ҫак самантра унӑн ӗмӗрлӗхех уйрӑлма хатӗрленекен савнине вӑйпа тытса чарас килсе кайрӗ, вӑл хӑйне хӑй аран-аран лӑплантарчӗ. «Мӗнле пултаратан эсӗ мана пӑрахса кайма!» тесе кашкӑрас килчӗ ун пӗтӗм чунтан.

— Мӗнле пултаратӑн... мӗнле пултартӑр пирӗн анкартине шыраса тупма?—терӗ вӑл тытанчӑклӑн, калас сӑмаха каламасӑр.

— Мана Ҫемен кӑтартса ячӗ: анкарти хыҫӗнче пӗр лапсаркка улмуҫҫи пур, урӑх вӑл ҫывӑхра анкарти хыҫӗнче улмуҫҫи ҫук, терӗ.

— Ман юратнӑ улмуҫҫи вӑл...

Ю р а т н а сӑмаха Салампи темле ыттисенчен уйӑрса, ачашшӑнрах, ӑшшӑнрах каланӑн туйӑнчӗ, ҫав сӑмаха вӑл пӗчӗчен ларакан улмуҫҫи пирки мар, тем урӑххи пирки, хӑйӗн пӗртенпӗр хаклӑ япали пирки каланӑн туйӑнчӗ. Алмазова ҫак самах ытармалла мар илемлӗ, тӗлӗкри пек асамлӑ илтӗнчӗ. Пур юрӑра та йӑлӑхтармалла янӑракан ҫак сӑмах, кирлӗ-кирлӗ мар ҫӗртенех асӑннипе шупкалса, тӗссӗрленсе, сӳрӗлсе кайнӑскер, халӗ, кирлӗ самантра, Салампи сассипе каланӑран, Салампи куҫепе пӑхса каланӑран, Салампи чунепе туйса каланӑран—вӑл хӑйӗн тӗп шухашне, пӗлтерӗшне, хӑватне кӑтартрӗ. Алмазов чӗри вара ыратса пачӑртанчӗ: Салампи ку сӑмаха уншӑн мар, такамшӑн, хӑйӗн ӗмӗтӗнчи юратна ҫыншӑн каларӗ; ӗмӗтенче те пулин савниийӗ пулма кирлех унӑн! Анчах ҫав хаклӑ ҫын хӑй маррине Алмазов паҫарах, Салампи «эсир» тесе чӗнсенех, ӑнланчӗ... Чан, каснӑ чӗлле каялла ҫыпаҫтараймӑн...

— Каҫарар килсе чӑрмантарнӑшӑн... Салампи,— терӗ Алмазов, хӗре алӑ парса.— Чипер юлӑр.

— Чипер кайӑр.

Вӗсем пӗр-перин куҫӗнчен пӑхрӗҫ. Алмазовӑн пысӑкланса кайнӑ куҫ шӑрҫисем пӑрланнӑ куҫ хӑрпӑкӗсем айӗн йӑлтӑртатса илчӗҫ. Салампин кӑвак куҫӗсем хурлӑхлӑн та ӑшшӑн пӑхаҫҫӗ; весенче, пӗчӗк тӗкӗр ҫинчи пек, пӗчӗчен улмуҫҫи мӗлки курӑнать.

— Сыв пулӑр!—терӗҫ савнисем пӗр-пӗрне мӑнкамаллӑн, харпӑр хӑй шухӑшне, хуйхине пӗр-пӗринчен пытарса; анчах вӗсен куҫӗсем, пӗр-пӗрине ҫунтарса, ирӗлтерсе ярас пек пӑхакан куҫӗсем: «Сывӑ пул, савниҫӗм! Ан ман мана, эпӗ сана пурпӗрех юрататӑп!» терӗҫ те хӑйсемех юлашки хут ыталанса чуптурӗҫ.

Алмазов кайнине курса, Салампи ним чӗнейми пулса тӑчӗ: ӑна ҫак самантра хӑйӗнчен таҫти чӑваш ачи мар, пурнӑҫра ӑнсӑртран тӗл пулса паллашнӑ каччӑ та мар, хӑйӗн ҫамрӑклӑхӗ, юратӑвӗ, телейӗ уйрӑлса кайнӑн туйӑнчӗ.

Чак! чак! тӑрӑнать сивӗ юр ҫине йӗлтӗр туйи, анчах вӑл, тимӗр вӗҫлӗскер, юр ҫине мар, Салампи чӗрине тӑрӑнать...

Мӑнкӑмӑллӑскер!.. Вӑл каялла ҫаврӑнса пӑхас ҫук ӗнтӗ!.. Акӑ, малтанхи



**„ЭПӖ ШОФЕР ПУЛАТӐП“**

Геннадий Афанасьевич Миронов тӑванӗсем ӗлӗк машина тытма мар, ларса ҫӳреме те ӗмӗтленеймен. Ӑнсӑртран ҫулпа пыракан машинӑна тӗл пулсан, куҫран ҫухаличченех пӑхса юлнӑ вӗсем.

Геннадий Афанасьевич Миронов, Чертышево автотранспорт шоферӗ, кӑҫал хӑй валли ҫӑмӑл машина туянчӗ. «Москвич» туянни ҫемьешӗн пысӑк савӑнӑҫ пулчӗ.

— Эпӗ те шофер пулатӑп,—терӗ пӗчӗк Жора, тӳрех руль умне тӑрса.

Ӳкерчӗкре: Г. Мироновӑн кӗҫӗн ывӑлӗ Жора «Москвич» рулӗ умӗнче.

Г. Зиньков фотоӳкерчӗкӗ.

йӗрпех кайрӗ... акӑ лӑпсӑркка улмуҫҫи айӗпе иртрӗ... уя тухрӗ... анаталла ярӑнса анчӗ...

— Толя!—кӑшкӑрса ячӗ Салампи пӗтӗм чунтан.— Тоооля!

Пӑр сӑмсаран вӗрме пуҫланӑ ҫил ун сассине аяккалла вӗҫтерсе сапаларӗ—ҫил-тӑман умӗн кӗрлекен ҫутҫанталӑк шавӗнче ҫак тӑлӑх сасӑ тинӗсе пӗр кашӑк шыв сапнӑ пекех ҫухалса кайрӗ.

Салампи хӑй мӗн тунине халь тин ӑнланса илчӗ те, иртсе каян ҫамрӑклӑха, юратӑва, телее хуса ҫитсе, вӑйпа тытса чарас пек, такӑна-такӑна йӗлтӗр йӗрӗпе чупрӗ. Вӑл темиҫе хут юр ӑшне тӑрӑна-тӑрӑна кайрӗ, ҫӑматтисем ӑшне те, ҫаннисем ӑшне те, хӗвне те юр кӗрсе тулчӗ. Анчах хӗр ҫак самантра шӑннипе мар, калама ҫук хурланнипе кӳтсе ситрӗ. Акӑ вӑл, юлашкинчен, лӑпсӑркка улмуҫҫи айӗнче халран кайса ӳкрӗ те эрленсе-хурланса макӑрса ячӗ...

Тепре ҫеҫ курса юлас килетчӗ унӑн, аякран та пулин курса юлас килетчӗ, анчах савниийӗ улӑхалла анса курӑнми пулнӑ. Уй урлӑ йӗлтӗр йӗрӗ кӑна тӑсӑлса выртать—икӗ тӳрӗ йӗр юнашар пыраҫҫӗ, пӗрлешмеҫҫӗ те вӗсем пӗр-пӗринпе, уйрӑлмаҫҫӗ те пӗр-пӗринчен.

«Ҫак йӗлтӗр йӗрӗ пек пулчӗ иккен пирӗн юрату та», шухӑшларӗ Салампи. Вӑл каялла ҫаврӑнса пӑхрӗ—ун хыҫӗнче хӑй пекех пӗччен улмуҫҫи сивӗпе кӳтсе, ӗнтӗркесе ларать... Ун айӗпе йӗлтӗр йӗрӗ иртет, ӑна Салампи хӑех таптаса, ҫӗмӗрсе пӗтернӗ...

Салампи каллех Алмазов кайнӑ еннелле ҫаврӑнчӗ. Тек макӑрмасӑр, хурланма та, ним шутлама та пӗлмесӗр, шӑнса кӳтиччен хирелле пӑхса тӑчӗ.

Ҫил вӑйланчӗ, юр вӗҫтерсе йӗлтӗр йӗрне витме пуҫларӗ...

(*Малалли пулать.*)

# КАЗАХСТАНРА

Уйăп МИШШИ

## I. ÇУЛ ÇИНЧЕ

Август уйăхĕн вĕçĕнче эпир инçе çула—Шупашкартан Казахстана—тухса кайрăмăр. Пирĕн сентябрь пуçламăшĕнче казах халăхĕ совет çĕршывĕнчи мĕнпур тăванла халăхсемпе пĕрле казахсен литературин классикĕ, аслă поэт Абай Кунанбаев вилнĕренпе аллă çул тултарнине паллă тунă вăхăта Алма-Ата хулине çитме васкамалла пулчĕ.

Илемлĕ çĕнĕ вагонсенчен тăракан поезд аслă хирсем тăрăх малалла, хĕвелтухăçнелле ыткăнать. Станцисенче, разъездсенче, ăçта кирлĕ унта комбайнсем, тракторсем, автомашинăсем лартса тултарнă вăрăм составсем куратпăр. Вĕсем Вăтам Азие, Казахстан хирĕсене васкаççĕ. Унта, çерем уçнă çĕнĕ çĕрсен вĕççĕр талкăшĕсенче, кăçал совет патриочĕсем вăйлă тырпул акса ӳстернĕ. Пиншер-пиншер механизаторсем—комбайнерсем, трактористсем, шоферсем—хăйсен машинисемпе пĕрлех Украинăран, Кубаньрен, ытти облаççемпе республикăсенчен, парти чĕннипе, Тăван çĕршыв хушнипе тырпул ăстисене пулăшма каяççĕ.

Казахстан... Çав тери аслă, пуян çĕршыв вăл. Унăн лаптăкĕ 2,7 миллион тăваткăл километр таран. Тăршшĕпе вăл Анатри Атăл таврашĕнчен пуçласа Китай чиккине çитиччен виçĕ пин километр тăсăлать, урлăшĕпе Çĕпĕр чугун çул магистралĕнчен пуçласа Тянь-Шань тăвĕсем таран пин çурă километра çитет. Совет Союзĕнчи союзлă республикăсем хушшинче Казахстан çĕршывĕ лаптăкĕ тĕлĕшпе РСФСР хыççăн иккĕмĕш вырăнта тăрать. Англи, Франци, Германи, Итали, Япони патшалăхĕсем пурте пĕрле шăкăртах Казахстанра вырнаçма пултараççĕ.

Пирĕн хăвăрт чупакан поезд талăкĕпех хăйăрлă пушхирсем тăрăх иртсе пырать. Хирĕсен вĕçĕ те, хĕрри те курăнмасть...

Çанталăк янкăр уяр тăрать. Тĕпсĕр тăрă тӳпере пĕр пĕлĕт татăкĕ те çук. Хĕвел çунтармаллипех çунтарать. Хĕвел çинчи тимĕр япаласем тытма çук пĕçереççĕ. Атăл тăрăхĕнчи кĕр еннелле кайнă самаях сулхăн та çумăрлă çанталăк хыççăн, пирĕншĕн кунта каллех шăрăх çу кунĕсем пуçланчĕç. Сывлăш вĕри, пăчă.

Ку еннелле шыв çукпа пĕрех. Станцисемпе разъездсене валли шыв аякран кӳрсе килеççĕ. Шыв çуккине пула пирĕн поездăн составне те пăспа ĕçлекен паравус мар, тĕтĕм-сĕрĕмсĕр машина—симĕс сăрпа сăрланă тап-таса, илемлĕ те вăйлă тепловоз туртать. Ку тăрăхра çавăн пек тепловозсем çӳреççĕ.

Йывăççем кунта сайра, йĕри-тавра типĕ хăйăрлă пушхирсен ӳсентăранĕ—тĕвесем çиме юратакан йĕплĕ курăк кăна. Вăл курăк хирсен талкăшĕпех тĕммĕн-тĕммĕн ӳсет. Икĕ курпунлă, вăрăм та кукăр мăйлă тĕвесем унта-кунта икшерĕн-виçшерĕн çав йĕплĕ курăка çисе çӳреççĕ. Хирти çулсем тăрăх вĕттĕн-вĕттĕн пусса хăвăрт чупакан лутра ашак çине утланнă казах иртнине куратăн.

Акă. Арал тинĕсĕ патнелле çывхаратпăр. Умра чугун çул çывăхнех тухакан Арал тинĕсĕн арки çутăлса выртать. Самаях пысăк сенкер хумсем, инçетрен пĕр-пĕрин хыççăн хăваласа килсе, хăйăрлă сĕвек çырана çапăнаççĕ. Тинĕс тĕтринче, лере, кимĕсем палăраççĕ, пăрахутсем çӳрени курăнать. Пулăçсем тинĕсе тухнă пулĕ.

Арал тинĕсĕн талкăшĕ 66 пин тăваткăл километр шутланать. Тарăнăшĕ 68 метра çитет. Шывĕ питĕ тăварлă иккен. Çак хăйăрлă пушхирсем варринче сарăлса выртакан тинĕс кунти шăрăх та пăчă сывлăша чылай уçăлтарать, тавралăха пачах урăх сăн-сăпат парса, илем кӳрет. Ку таврара чугун çулăн икĕ енĕпе те ешĕл хăмăшлă шурлăхсем нумай, вĕсем çийĕн кайăк кăвакалĕсем карти-картипе явăнса вĕçеççĕ.

Арал тинĕсĕнче пулă нумай тытаççĕ. «Аральское море» станцинче пурăнакан çынсем пурте пулăçсем тейĕн, станцире чарăнакан поездсем çинчи пассажирсене темĕн чухлĕ пулă сĕнеççĕ.

Арал тинĕсне Аму-Дарья, Сыр-Дарья шывĕсем юхса кĕреççĕ. Тинĕс аркинчен иртсен, чугун çул малалла, Чимкент хулине çитиччен тенĕ пек, Сыр-Дарья юханшывĕпе юнашар пырать. Ку тăрăхра шыв пурри кунталли çĕрсене чĕрĕ пурнăç парать. Иртсе юлакан станцисемпе разъездсем ешĕл йывăççен сулхăнĕнче лараççĕ. Пур еннелле те куç çитми тӳрем çеçенхирсем тăсăлаççĕ. Тырпул акса тăвакан çĕрсем нумай тĕл пулаççĕ. Унта та кунта ялсем курăнса лараççĕ. Хирсен инçетĕнче пĕр çĕрте çынсем комбайнсемпе тырă выраççĕ, тепĕр çĕрте тракторсемпе тусан кăларса суха тăваççĕ. Хир ĕçченĕсем хĕрӳ ĕçре.

Кзыл-Орда, Туркестан хулисенчен, нумай-нумай станцисенчен иртсе, эпир Арысь станцине çитетпĕр. Кунтан Ташкента çитме ултă-çичĕ сехет кăна каймалла, анчах пирĕн çул унталла мар. Арыçре эпир, Мускавран Ташкента каякан поезд çинчен анса, Ташкентран Новосибирск хулине каякан поезд çине ларатпăр. Вăл поезд Алма-Ата витĕр иртет, пире унта çитерсе хăварать.

Арыçрен Алма-Атана тата талăк çурă каймалла. Ку тăрăхра поезд питех те илемлĕ вырăнсемпе пырать. Пиртен кăнтăр-хĕвелтухăç енче çĕршер-çĕршер çухрăма тăсăлакан Ала-тау сăрт-тăвĕсем мăнаçлăн лараççĕ. Вĕсен ĕмĕрхи юрпа витĕннĕ чăлт шурă çӳлĕ тӳписем инçетри хĕвеллĕ тĕтрелĕхре палăри-палăрми курăнса кĕмĕлленеççĕ. Каçхине, уйăх хăпарсан, пĕлĕте çити çĕкленнĕ юрлă тӳпесем юмахри пек илемлĕн курăнаççĕ, куç илмесĕр вĕсем çине пăхса пыратăн...

Чимкент, Джамбул, Чу хулисенчен иртетпĕр. Сăрт-тусем çаплах тăсăлаççĕ. Вырăнĕ-вырăнĕпе поезд сăртсен аяккипе пырать, туннель витĕр тухать. Сăрт-тусем çинчен нумай шывсем юхса анаççĕ, кунти садсене, пахчасене, хирсене шăвараççĕ.

Ку тăрăхри çĕрсем питех те пуян. Станцисенче, разъездсенче вăйлă суту-илӳ пырать. Казах хĕрĕ-хĕрарăмĕсем пассажирсене темĕн чухлĕ апат-çимĕç: чăх-чĕп какайĕ, арбуз, помидор, виноград, дыня, панулми, сĕт-турăх сĕнеççĕ, кăмăс ĕçтереççĕ.

Чугун çулăн пĕр енче сăрт-тусем тăсăлаççĕ пулсан, тепĕр енче вĕççĕр-хĕрсĕр çеçенхирсем çутăлса выртаççĕ.

Ытла та аслă Казахстан хирĕсем! Вĕсенче тем тĕрлĕ тырпул, çĕр мамăкĕ, пахча-çимĕç ӳсет, хисепсĕр йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчет. Казахстанра тырпул акса ӳстерме юрăхлă çĕрсем Украинăри чухлех нумай. Çав çĕрсен питĕ пысăк пайĕ халиччен усăсăр выртнă. Халь вара, сухаламасăр выртнă çĕрсене сухаласа тĕштырă акса тăвас тĕлĕшпе партипе правительство йышăннă аслă программăна пурнăçлама тытăннă май, кунта калама çук пысăк ĕçсем пуçланса кайнă...

Çĕр айĕнчен чавса кăлармалли ырлăх-пурлăхсене илсен, Казахстан тĕнчери чи пуян çĕршывсенчен пĕри пулса тăрать. Кунти сăрт-тусенче тем тĕслĕ металсем, рудасем, çĕр кăмрăкĕ, ылтăн-кемĕл, минералсем, тăварсем тупаççĕ. Пăхăр, тăхлан, цинк, никель таврашĕсене илсен, вĕсен пĕтĕм Союзри запасĕсен çурри ытла Казахстанра. Караганда çĕр кăмрăк бассейнĕ çĕр кăмрăк пуянлăхĕпе Совет Союзĕнче Донбаспа Кузбасс хыççăн виççĕмĕш вырăнта тăрать. Эмба таврашĕнчи нефть кăларакан район нефть пуянлăхĕпе Баку хыççăн иккĕмĕш вырăнта тăрать. Совет çыннисем Казахстан çĕршывĕнче çулран-çулах çĕнĕрен-çĕнĕ пуянлăхсем шыраса тупаççĕ, вĕсене алла илсе, Тăван Çĕршывăн вăй-хăватне хутшăнтараççĕ.

Патша Российинче Казахстан чи кая юлнă инçе çĕршывсенчен пĕри пулнă. Унăн иксĕлми пуянлăхĕсем усăсăр выртнă. Хăйĕн чăн-чăн ятне те çухатнă казах халăхĕ, патша самодержавийĕпе унăн киревсĕр йыттисен—хирти феодалсемпе байсен, чиновниксемпе мулласен—чăтма çук йывăр та тискер пусмăрĕпе мăшкăлне тӳссе, асапланса пурăннă. Казахсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе, çеçенхирсем тăрăх вырăнтан-вырăна куçса çӳренĕ. Вĕçĕмсĕр чухăнлăхпа тĕттĕмлĕхре, тĕшмĕшлĕхпе кивĕ, тискер йăласен, шариат законĕсен тыткăнĕнче тертленнĕ халăх çутă кун курман. Казахсен хушшинче хутла пĕлменнисен хисепĕ 98 процент таран пулнă. Хĕрарăмсенчен хутла пĕлекеннисем пулманпа пĕрех. Çав тискер те хăрушă кунсенче те казах халăхĕ хăйĕн телейлĕ кун-çулне курасса ĕмĕтленме пăрахман. Унăн мухтавлă ывăлĕсем— Абай Кунанбаев, Чокан Валиханов, ун н паллă акынĕсем халăхăн çутă ĕмĕчĕсене амалантарса тăнă, чĕрери шанчăкне çирĕплетнĕ, халăха телейлĕ пурнăçшăн, ирĕклĕхшĕн кĕрешме чĕннĕ.

Епле танлаштарăн-ха ĕлĕкхипе хальхи Казахстана? Паянхи Казахстан калама çук вăйлă аталаннă хăйĕн индустрийĕпе, нумай-нумай çĕнĕ машинăсемпе хĕçпăшалланнă социализмла шултра ялхуçалăхĕпе, тĕлĕнмелле хавăрт ӳссе чечекленнĕ культурипе, литературăри, искусствăри паха çитĕнĕвĕсемпе чапа тухрĕ. Аслă Октябрь тивлечĕпе ирĕк илнĕ казах халăхĕ, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ тата ытти тăванла халăхсем пулăшнипе, хăйĕн пурнăçне никĕсренех улăштарса çĕнетнĕ. Вăл çĕршывра коммунизм тăвассишĕн хастаррăн ĕçлет, кĕрешет, çĕнĕрен çĕнĕ чаплă çитĕнӳсем тăвать. Ахальтен мар кунта ют çĕршывсенчен килнĕ делегацисем час-часах пулаççĕ, вĕсем пирĕн çĕршывра Коммунистсен партийĕн наци политикин тĕрĕслĕхне, çав политикăна пурнăçланă май пирĕн халăхсем ирĕклĕ те чăн-чăн телейлĕ пурнăç тунине хăйсен куçĕпе кураççĕ.

Казахстан çĕршывĕ тăрăх иртнĕ чухне кунта çĕнĕрен ӳссе ларнă пысăк хуласем, нумай фабрикăсемпе заводсем, пуян тырпуллă аслă уй-хирсем куратăн. Анчах пуринчен те пахи кунта Коммунистсен партийĕпе Совет влаçĕ пăхса çитĕнтернĕ совет çыннисем пулса тăраççĕ. Мĕнпур çитĕнӳсем—çав çынсен ĕçĕ, вĕсен пултарулăхĕ. Çутă телейне тупнă казах халăхĕн ĕçчен ывăлĕ-хĕрĕ хăй çĕршывĕн чаплă çитĕнĕвĕсемпе тивĕçлĕнех мухтанма пултарать.

## 2. АБАЯ АСĂНСА ЧЫСЛАНĂ КУНСЕМ

Шăпах ултă талăк çурă килнĕ хыççăн, сентябрĕн пиллĕкмĕшĕнче, хĕвеллĕ ирхине, поезд пире Казахстанăн тĕп хулине—Алма-Атана çитерчĕ

Алма-Ата хули Заалийски Алатау текен чăлт шурă тӳпеллĕ, çӳлĕ сăрт-тусен айĕнче ларать. Вăл чăннипех те сад-хула. Ахальтен мар «Алма-Ата» тени чăвашла «улма ашшĕ» тени пулать. Пĕтĕм хула ешĕл йывăçлăх сулхăнне пытаннă. Унăн асфальтлă урамĕсем хушшипе пынă чухне хӳхĕм аллейăсем тăрăх утнăн туйăнать: икĕ енче те тăршшĕпех çӳлĕ те лаштра хурамасем, çăкасем, юмансем, тирексем, чинарсем ларса тухнă. Вĕсен çулçисем ирхи сывлăмпа çăвăннă, сип-симĕс, саралма шухăшламаççĕ пулас-ха, кĕр çитни палăрмасть. Тротуарсен хĕррипе урамсенче чул сарса тунă арыксем тăрăх тăп-тăрă шыв шăнкăртатса юхса выртать, Сăрт-тусем çинчен юхса

# САЛОМЕЯ НЕРИС



Литва поэтесси Саломея Нерис (Саломея Бачинскайте-Бучене) 1904 çулта Вилкавише уезĕнчи Киршай ялĕнче çуралнă. Унăн ашшĕ-амăшĕ хресчен пулнă. 1924 çулта С. Нерис гимназирен вĕренсе тухнă та Каунас университетне вĕренме кĕнĕ. 1927 çулта вăл «Рано утром» ятлă сăвă кĕнеки кăларнă. 1928 çулта, университет пĕтернĕ хыççăн, Ладзияй ятлă местечкăри шкулта ĕçлеме пуçланă.

Хăйĕн произведенийĕсенче вăл Литва халăхне буржуалла-фашистла йĕркене сирпĕтсе антарма чĕнет. С. Нерис сăввисем коммунистсен вăрттăн органĕсенче пичетленеççĕ. Çак вăхăтра унăн «По ломающемуся льду» (1935 çул) тата «Расцвету демедисом» (1938 ç.) ятлă кĕнекисем пичетленсе тухаççĕ.

1940 çулта Литвара, буржуалла-фашистла йĕркене пĕтерсе, совет влаçĕ туса хунă хыççăн, Литва халăхĕ çĕнĕ пурнăçпа пурăнма пуçлать. Çак пысăк улшăнусем С. Нерис творчествинче уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

1940 çулта С. Нерис хăйĕн паллă произведенийĕсене çырать: «Поэма о Сталине», «Путь большевика», «Четыре» т. ыт. те. Çак вăхăтран пуçласа вăл литературăпа обществăлла ĕçе парăнса ĕçлеме тытăнать.

1940 çулта çулла С. Нериса Литва республикин Халăх Сеймĕн полномочнăй комисси членне суйласа, Литвана Советлă Социализмла Республикăсен Союзне йышăнмашкăн ыйтма СССР Верховнăй Совечĕн сессине янă. 1941 çулта С. Нериса СССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйланă.

Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче С. Нерис питĕ активлă ĕçлет. Вăл темиçе хут та фронта, çар чаçĕсем тăнă çĕре, кая-кая килнĕ; час-часах хаçата çырса тăнă, радиопа тухатуха калаçнă.

Йывăр чир С. Нерисăн творчествăлла тата обществăлла ĕçне вăхăтсăр татрĕ. Вăл 1945 çулхи июлĕн 15-мĕшĕнче вилнĕ.

1947 çулта С. Нериса «Мой край» ятлă сăвăсен сборникĕшĕн пĕрремĕш степеньлĕ Сталинла преми панă.

Çак сăвăсене эпир С. Нерис çуралнăранпа 50 çул тултарнă ятпа пичетлетпĕр.

## *Çилпе ачасем*

Хаваслă кун хыпарçисем
Кĕреççĕ картишне.
Шаккаççĕ хапхаран çилсем,
Шаккаççĕ кулленех.

Ташлать-çке çил, кĕç çуркунне
Çывхарасса сиссе,
Каллех ак пирĕн вĕрене
Ешерессе пĕлсе.

Шавлать, вĕçет кула-кула,
Чĕнет: «Эй, урама!
Сире валли сукмак шăлап,
Тухсамăр вылямa.»

Хăна кĕтетпĕр çав тери,
Çиле хавас пурте.
Уçатпăр кантăка яри —
Кĕрсемччĕ, çил, пўрте!

## *Инçетре эп пулсассăн санран*

Хам çуралнă çĕре таврăнсассăн,
Инçетре эп пулсассăн санран,
Çав-çавах эс, Мускавăм, хавассăн
Çутупа çиçсе тăрăн умра.

Тĕп хуламăрăн child аслă çутийĕ!
Сан патна çывхарсассăн тăшман,
Çирĕпленчĕ-çке халăх чĕрийĕ,
Эпĕ хам та санпаччĕ ялан.

Кремль башнийĕсем çутатмаççĕ,
Юр хупланă хула урамне...
Паттăрсем нихăçан парăнмаççĕ,
Кам çĕнтерĕ вĕсен хăватне?

Эх, Мускав! Халиччен те этемлĕх
Санпа тан чаплă ят илтеймен.
Çакă ятăн мухтавĕ хĕвел пек
Ĕмĕрсем урлă çиçĕ хитрен.

Ак санран инçетре эп пулсассăн,
Эс хăтарнă çĕре таврăнсан,
Сан çинче çĕнтерў кунĕ чаплăн
Тăрĕ çут хĕвел пек йăлтăрса.

## *Шавлăр, çилсем!*

Ман çĕршывăн сачĕсем шап-шурă,
Улма йывăç çеçке çурнă ĕнтĕ.
Пурнăç çилĕсем, халь шавлăр, урăр,
Çурхи çил çĕклентĕр, мала чĕнтĕр!

Савăн, пурăн!—тет-çке çутçанталăк,
Мăнтăр çĕр йăлт çитĕнтерĕ, парĕ.
Днепр тапранчĕ, Прут юхать
васкавлăн,
Неман хумĕ сирпĕнет чăлпаррăн.

Чаплă çĕршывра пурнать, тет,
паттăр,—
Ача чух юмах ярса паратчĕç.
Паттăра халь кил-çуртрах
куратпăр,—
Вăл сăпайлă, çирĕп ун хăвачĕ.

Паттăрсем утаççĕ пит патмаррăн,
Учĕсем сиккипеле пыраççĕ.
Çилпе ўкнĕ çулçă евĕр мар-и,
Хăтăласшăн, тăшмансем тараççĕ.

Çĕршыври садсем кĕç кĕтсе илĕç,
Пирĕн тĕлпулу телейлĕ пулĕ.
Çилсем, шавлăр, вĕр эс, пурнăç çилĕ,
Çурхи çил, хăюллă, çирĕп пул эс!

## *Эпĕ ешерĕп...*

Пĕлетĕп эпĕ, ман апрель,
Каллех эс кунта пулăн.
Килетĕн эс, тăван апрель,
Анчах та маншăн кулмăн.

Тур лашуна хуллен чарса,
Тавралăха пăхатăн:
Çĕр ешерет,—ку эп, курсам,
Чечек пулса шăтатăп...

## *Тўсеймĕ шăпчăк юрламасăр*

Йăлт кăмрăкланнă ял ларать умра,
Туратсемпе шух çил вылять хавассăр.
Юр ирĕлсен, сирень çеçке çурать,
Унта тўсеймĕ шăпчăк юрламасăр.
Тар шăршинчен тасалайман-ха хир,
Çĕрĕк шăршпа чун ыратать-çке
питĕ,—
Хире акса хăварăпăр эпир,
Кил-çуртсене те лăпкă канлĕх çитĕ.
Çуллахи кун савса пăхĕ пире,
Ĕçлетпĕр мар-и пурте ывăнмасăр.
Юр ирĕлчĕ, çеçке çурчĕ сирень,
Унта тўсеймĕ шăпчăк юрламасăр.

## *Сывлăх сунатăп!*

Çурхи çилсем йăлтах ватаççĕ
Пит хулăн, сивĕ пăрсене,
Юханшывсем юхма пуçлаççĕ,
Çĕршыв каллех чечекленет.

Епле çĕкленнĕ, эп куратăп,
Ирĕкре ўснĕ калчасем.
Сире чунтан сывлăх сунатăп,
Тăваҥ Литва çамрăкĕсем!

*Георгий Ефимов* куçарнă.




Николай СТУРИКОВ

Водолаз шыв айне анать. Сарă-рах пăтранчăк шыв, аялалла аннăҫемĕн, симĕсрех курăнма пуҫлать, кайран вăл хура-кăвак тĕспе улшăнать, юлашкинчен, пăч тĕттĕм пулса тăрать. Водолазăн урисем юханшыв тĕпне перĕнеҫҫĕ.

...Ĕнер Атăл ҫинче вăйлă тăвăл кĕрленĕ. Ҫӳлĕ хумсем ҫырана пыра-пыра ҫапăннă, катерсемпе кимĕсене, баржăсемпе дебаркадера силленĕ. Нумай та вăхăт иртмен, чул тиенĕ пысăк мар баржа якăртан вĕҫерĕнсе, Атăл варринелле юхма пуҫланă. Асса кайна хумсем, юри баржăпа вылянă пек, бортсем урлă сике-сике каҫнă, силленĕ, туланă. Ҫутҫанталăк вăйне баржа чăтайман, хумсем ăна хăйсен ытамне илнĕ те юханшыв тĕпне пĕтĕрсе чикнĕ.

Баржăна епле пулсан та ҫăлмалла пулнă.

Тепĕр кунне, тăвăл чарăнсан, авари пулнă вырăна пысăк мар ҫăмăл катер пырса чарăннă. Катер ҫинчен шыв айне водолаз аннă. Ҫанталăк ҫав тери тӳлек те ăшă тăнă, шыв та кунта тарăнах пулман: вунă метра та ҫитеймен. Водолаз шыва анас умĕн пуҫне маска ҫеҫ тăхăннă. Хăйпе пĕрле кислород тултарнă прибор илнĕ. Пилĕкĕнчен ăна вĕренпе ҫыхнă. Водолаз юханшыв тĕпĕнче ал сĕмĕпех путнă баржăна шыранă.

Катер ҫинче юлнисем вăхăтран вăхăта водолазран: «Хăвăра мĕнле туятăр?»—тесе ыйтнă. Шыв айĕнчи ҫын та вĕрене туртса ответ панă: «Пурте йĕркеллĕ..» Вĕренсĕр пуҫне, катер ҫинчисемпе водолаз хушшинче урăх нимле ҫыхăну та пулман

Водолаз шыва путнă баржăна часах шыраса тупнă. Судно хăйăр ҫинче хăяккăн выртнă. Водолаз ал сĕмĕпех унăн пăсăлнă вырăнне те хыпашласа тупнă. Сылтăм бортра пысăк мар шăтăк пулнă, руль ваннă.

Водолаз шыв айĕнчи баржăна малалла тĕпченĕ. Пĕр-икĕ утăм пуссанах, вăл шыв авăрне кĕрсе ӳкнĕ. Ансăртран чул ҫумне ҫапăнса, чĕркуҫҫине хытах ыраттарнă. Авăра лекнĕ ҫынна шыв пĕр хĕрхенмесĕр пĕтĕрсе ҫавăрнă. Сигнал памалли вĕрен вĕҫĕ таҫта темрен ҫакланнă та, водолаз шыв айĕнче пĕр-пĕччен, ҫыхăнусăр тăрса юлнă. Вăл темиҫе хутчен те вĕрене турта-турта пăхнă, пачах ҫӳлтен хирĕҫ ответ паракан пулман.

Ун пек чухне кашни самантра хăрушлăх ӳссе пырать. Мĕн тумалла? Чи малтан—хăвна ху лăпкă тытма пĕлмелле. Хăраса ӳкни пĕтĕм ĕҫе пăсса хума пултарать. Инкекрен хăтăлма май шырамалла.

Катер ҫинчен те темиҫе хутчен: «Хăвăра мĕнле туятăр?»—тесе ыйтнă, анчах водолаз хирĕҫ ответ паман. Апла пулсан — шыв айĕнче тем пулнă, водолаза ҫăлас пулать..

Вăхăт питех те ерипен иртнĕ. Катер ҫинчи ҫынсене запасра водолаз костюмĕ пулманни те пăшăрхантарма пуҫланă. Шыв айĕнче ĕҫлекен ҫыннăн ҫирĕп сывлăхлă пулнипе пĕрлех, чăтăмлă та тӳсĕмлĕ пулмалла. Водолаз хăюлăхĕ шыв айĕнчи кирек мĕнле хăрушлăхран та тĕрĕс-тĕкел тухма май парать, кирек мĕнле чăкăлтăш ĕҫе те тĕрĕс татса пыма пулăшать.

Ҫакăн пек йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкнĕ ĕнтĕ Зинаида Котова. Ҫамрăк водолаз пирвайхи хут шыв айĕнчи ĕҫпе хăй тĕллĕн, пĕччен паллашнă. Вăл, тин кăна ĕҫлеме тытăннă пулин те, водолаз ĕҫне лайăх ăнланнă, шыв айĕнчи ҫыннăн кирек хăҫан та тӳсĕмлĕ те хăюллă пулмаллине чĕрипе туйса илнĕ. Ҫапла ĕҫлесен ҫеҫ ĕҫре ăнăҫлăх пулма пултарнă.

Шыв айĕнчи хĕр сигнал ҫитменнинчен хăраса ӳкмен. Вăл чул ҫумне ҫапăнса урине хытă ыраттарнине те шута илмен. Кислород та пĕтме пуҫланă, анчах Зинаида сантиметр хыҫҫăн сантиметр вĕрен тăрăх малалла шунă. Акă, часах, водолаз шлемĕ баржа тĕпне тĕкĕннĕ. Ҫакланса ларнă вĕрене те вĕҫертнĕ Зинаида, тепĕр самантран хăйне ҫиеле кăларма ҫӳлтисене сигнал панă.

Юн тухиччен шăйăрса пăрахнă чĕркуҫҫине курсан, катер ҫинчисем врача чĕнме шут тытнă.

— Кирлĕ мар, кайран,—татăклăн каланă Зинаида Котова.—Баржа йăлтах стройран тухма пултарать, вăхăта тăсма юрамасть.

Кăштах кансан, Котова каллех юханшыв тĕпне хурҫă вĕрен илсе аннă, вăл баржăна унпа ҫавăрса ҫыхнă.

Ку вăл вунтăватă ҫул каялла пулнă. Шывран ҫăлса кăларнă баржа халь те Атăл ҫинче ҫӳрет.

Ун пек ĕҫсем Зинаида Котова пурнăҫĕнче пĕрре кăна мар пулнă.

«Грузия» ятлă тавар турттаракан пысăк теплоход Хусантан тухсан пĕр винтпа ҫеҫ тăвалла хăпарнă. Иккĕмĕш винчĕ ĕҫлейменнипе Шупашкар тĕлне ҫитичченех двигателе чарма лекнĕ. Теплоход якăр ярса чарăннă. Винт юсама водолаза чĕнсе илнĕ.

Водолаз пырсан, винт мĕншĕн ĕҫлеменни те паллă пулнă. Винт валĕ ҫине хулăн вĕрен чăрканса ларнă иккен. Вĕрене сӳтме ниепле те май килмен, ăна касса татмалла пулнă. Водолаз винт ҫине чăрканса ларнă вĕрене касма тытăннă. Ĕҫлеме ҫав тери йывăр пулнă. Вĕресе юхакан шыв юхăмĕ подводнике аяккалла юхтарнă. Ҫитменнине, каҫ пулса килнĕ.

Пĕтĕм команда водолаз ĕҫне хумханса кĕтнĕ.

Анчах водолаз ним чухлĕ те пăшăрханман. Вăл ĕҫне пĕтернĕ те теплоход ҫине вĕрен татăкĕсем йăтса хăпарнă:

— Кун пек пурлăха епле шыва пăрахăн, вăл швабра валли юрăхлă вĕт,—шӳтленĕ вăл.

Часах «Грузия» Атăл тăрăх тăвалла кайнă.

Зинаида Котова ҫамрăк-ха. Вăл 1942 ҫулта пĕрремĕш хут шыв айне аннă. Унтанпа унăн пĕтĕм пурнăҫĕ Атăл ҫинчи ĕҫсемпе ҫыхăннă. Котова пăрахутсене ҫӳреме хăрушă вырăнсене тасатнă, шыв айĕнчи чуллă вырăнсене взрывчаткăсем хунă, юханшыв урлă телефон кабелĕсем карнă, насос станцийĕнче шыв туртса илекен трубасем вырнаҫтарнă, шыва путнă япаласене шыраса тупнă.

Вăл тĕрлĕ тарăнăша кăнтăрла та, ҫĕрле те аннă. Скафандрăпа та, маскăпа та ĕҫленĕ. Зинаида Котова шыв айĕнче 1307 сехет, урăхла каласан, 54 талăк ытла пулнă.

Атăл ҫинче навигаци вĕҫленчĕ. Кĕҫех хĕл ларать. Ҫанталăк та кунран-кунах сивĕтсе пырать. Юлашки пăрахутсем Шупашкарпа сывпуллашсан, Атăл кичемленсе юлнăн туйăнчĕ, килес ҫулччен кунта пĕр ĕҫ те пулас ҫук пек.

Анчах Зинаида Котовăн хĕлле те ĕҫ сахал мар. Вăл ăста водолаз пулнипе пĕрлех, водолазсем хатĕрлекен инструктор. Апла пулсан, унăн кирек мĕнле ҫанталăкра та, кирек хăш вăхăтра та ĕҫлеме пултаракан водолазсем хатĕрлемелле.

Зинаида Котова хăй те водолазăн хĕллехи ĕҫĕсене тĕплĕн кĕтсе илме тăрăшать.

Укерчĕксенче: 1. Зинаида Котова шыв айне анма хатĕрленет. 2. Водолаз авари пулнă вырăна васкать.

П. Ефремовпа И. Никифоров фотоӳкерчĕкĕсем.





# ЯЛА ТАВРӐННӐ КАҪ

***Калав***

Василий АЛЕНДЕЙ

Сартан отпуска таврӑнсан, анне мана, ӗлӗкхи пекех, сарай умне вырӑн сарса пачӗ. Эпӗ салтӑнса выртрӑм. Йӑмра турачӗпе пилеш шӑрши килет, пуҫ айӗнче типӗ утӑ чӑштӑртатать. Пӑхатӑп: пахчари шап-шурӑ хурӑн тӑрринче кӗвенте ҫӑлтӑр йӑлтӑртатать. Сак ҫӑлтӑра курсан, мана ача чухнехи вӑхӑт аса килчӗ. Эпӗ ун чухне те пиччепе пӗрле сакӑнта сывӑраттӑм, кашни касах ҫак ҫӑлтӑра сӑнаттӑм. Халӗ ман ҫумра пичче ҫук ӗнтӗ, эп пӗччен выртатӑп. Эп пӗчӗк ача та мар—ҫирӗм виҫҫӗри ҫын. Пурнӑҫ епле хӑвӑрт улшӑнать, юханшыв пекех васкаса иртет, сиссе ӗлкӗрме те ҫук. Астӑватӑп: ун чухне те, хальхи пекех, йӑмра ҫулҫисем чӑшӑлтататчӗҫ, хальхи пекех ҫӑлтӑрлӑ каҫсем пулатчӗҫ. Пичче мана нумай-нумай япаласем ҫинчен каласа паратчӗ.

— Ӳссен никам та мар, тракторист пул,—тетчӗ.

Хӑй тракторист пулнӑ май уй-хире, машинӑсене пит килӗштеретчӗ вӑл.

Ыйхӑ килмест. Ҫак вырӑн ҫинчен ман кӗвенте ҫӑлтӑра та, усӑнчӑк йӑмрана та, уйӑх ҫутипе шап-шурӑ курӑнакан хурӑна та вӗҫӗмсӗр пӑхас килет. Хирте трактор сасси илтӗнет, вӑл та ачалӑха аса илтерет, ман пичче ӗҫленӗ пекех туйӑнать. Анчах ҫук ӗнтӗ ман пиччем, вӑрҫӑран таврӑнаймарӗ вӑл. Эпӗ сывӑрас тесе куҫа та хупса пӑхрӑм, ҫук, тӳсейместӗп, каллех уҫатӑп. Вара тӑрса лартӑм та хуллен кӑна пирус чӗртсе ятӑм. Ял варринче хӗрсем юрлани, кулни, калаҫни илтӗнет. Инҫех те мар урамра хут купӑс сасси янӑраса кайрӗ. Картишӗнче ҫара ҫерҫисем вӗҫе-вӗҫе иртеҫҫӗ. Вӗсем, манӑн шурӑ простыне курса пулас, сывӑхах килеҫҫӗ. Урӑх ним сас-чӗвӗ те ҫук. Пирус туртса пӗтертӗм, ҫаплах сывӑрас килмест. Вара тумлантӑм та, сывлӑмлӑ курӑк ҫийӗн утса, урама тухрӑм.

Урамра уҫӑ, ирӗк. Эпӗ кӑштах уҫӑлса ҫӳрес мар-ши терӗм. Ытла та уҫӑ вӗт-ха, ытла та илемлӗ! Кун пек таса сывлӑша чылайранпа сывласа курман. Ешӗл курӑк тӑрӑх хуллен кӑна утса пыратӑп. Ҫав вӑхӑтра сырма тӗпӗнче такам купӑс калани илтӗнчӗ. Кам-ши унта? Ҫырма тӗпӗнчен пӗр лав хӑпарать, лаши пуҫне чикнӗ те пӗр тикӗс утать, ҫултан нисталла та пӑрӑнмасть. Лав ҫинче—пысӑк пичке, урапа сиккеленнӗ май унта темскер шӑмпӑл-шӑмпӑл туни илтӗнет. Пичке умне пӗр ҫамрӑк хӑпарса ларнӑ. Вӑл тилкепине урапа ӳречинчен сыхса хунӑ та хуллен кӑна купӑс каласа пырать.

— Эй, эсӗ пичку-мӗнӗпех ҫырмана ӳкетӗн вӗт. Лашуна асӑрха,—терӗм эпӗ.

Ҫамрӑк ҫын купӑс калама чарӑнмарӗ, ман ҫине чалӑшшӑн пӑхса илчӗ те:

— Кам эс?—терӗ.

— Эпӗ-ха ку.

Лавҫӑ купӑсне чарчӗ:

— Тем, Левентей сасси пекех.

— Эпӗ ҫав. Левентей.

— Ха,—алӑ пачӗ лавҫӑ,—мӗн туса ҫӳретӗн эсӗ тӑр пӗччен?- Хӑҫан таврӑнтӑн?

— Паян кӑна.

Ку лавҫӑ пирӗн кӳршӗ каччи—манпа пӗрле ӳснӗ Кирук пулчӗ-мӗн. Вӑл тракторсем валли шыв турттарать.

— Купӑспа чӑрмав мар-и?

— Ҫу-ук, ыйхӑ килесрен ҫӗрӗпех нӑрлаттаратӑп,—терӗ Кирук.—Ну, ыран тӗл пулӑпӑр-ха.

Вӑл лашине вирлӗрех хӑвалама пуҫларӗ. Купӑсне те уҫӑнрах янӑратса ячӗ. Эпӗ хуллен кӑна малалла утрӑм. Инҫех те каяймарӑм, лупас ҫумӗнче мӑш-мӑш туса сывлани илтӗнчӗ. Мӗн япала тата?

Пӑхатӑп: хӳтлӗхре, типӗ вырӑнта, ула ӗне выртса парать, эпӗ тӗлӗнсех кайрӑм. «Дальне Миккисем ӗнине ма картишне кӗртмен-ши?», тетӗп. Ҫапла нумаях та каяйманччӗ, ферма кӗтӳҫне—Курак Ҫтаппанне тӗл пултӑм:

— Эсӗ ӗне курмарӑн-и?—ыйтрӗ вӑл.

— Мӗнле ӗне?

— Тӗсӗ чӑпар. Ферма ӗни. Кӗтӳрен аванах килчӗ. Яла кӗрсен, таҫта мура- кайса ҫухалчӗ. Халиччен чиперех таврӑнаканччӗ. Анук йӗрес патнех ҫитрӗ.

— Хӑш Анук?

— Ара, фермӑра ӗҫлет вӑл... Пирӗн патра.

Эпӗ хам ӗне курни ҫинчен каласа патӑм. Ҫтаппан пичче тек калаҫса тӑмарӗ, тӳрех ӗне патнелле утрӗ.

Киле кӗрсе сывӑрма та вӑхӑт ӗнтӗ. Ҫапах та каҫхи ялӑн пурнӑҫӗ мана хӑй патнеллех туртать. Ҫак шухӑш-туйӑма пула малаллах утатӑп. Акӑ йывӑҫлӑ урама ҫитсе кӗтӗм. Ку урама эпир «юрату урамӗ» тесе ят панӑччӗ. Шӑпчӑк юрлама тытӑнчӗ. Эп ун юррине итлесе пырап. Мӗн тӗрлӗ сас кӑлармасть-ши шӑпчӑк! Ун сасси ытла та савӑк. Ҫапла пынӑ май, асӑрхаман та, ҫынсем умнех пырса тухнӑ. Камсем-ши

кусем? Хĕрпе каччă. Хурăн çумне таяннă та хĕрсе калаçаççĕ.
— Ху шухăшна кала эсĕ,—тет каччă.
— Мĕнле шухăша?—ыйтать хĕр.
— Хăвăн шухăшна. Мĕнле, ăнланмастăн-и вара?
— Нимĕн те ăнланмастăп.
— Пĕлтер. Эп чăнласах ыйтатăп вĕт.
Хĕр кулса ячĕ:
— Мĕн çинчен пĕлтерес сана?
— Ара, пĕлмише ан пер. Чухлатăн эсĕ.
— Пĕлместĕп çав.
— Пĕлетĕн...
— Пĕлместĕп.
Эпĕ ним тума аптраса тăтăм. Арçынĕ—колхозри агроном Иван Илларионович пулас. Хĕрĕ колхоз председателĕн йăмăкĕ—Манюк. Эпĕ урамăн тепĕр хĕррипе çаврăнса иртсе кайрăм. Хам ăшра кулса пыратăп: «Епле-ха çав Иван Илларионович, çирĕп те патвар çын, ĕçре пуринпе те хăюллăн калаçаканскер, çак хĕр умĕнче çавăн пек йăлăнса тăрать», тетĕп. Нумай та утайманччĕ, икĕ хĕр чупса иртсе кайрĕç, унтан тепĕр хĕр иртрĕ, часах тăваттăмăшĕ те чупса çитрĕ.
— Эй, юлатăн вĕт, каяр часрах,—чĕнчĕ вăл мана ним палламан çинченех.
Эпĕ ун патне пытăм:
— Аçта васкатăр?
— Михаля Ванюкĕ хĕр илсе килнĕ. Курма каятпăр.
Вăл мана алăран туртсах илсе кайрĕ.
— Кăçал туй хыççăн туй пулать. Сахрун пиччесен Иванĕ авланчĕ, Хветĕр Иванчăсен Çеменĕ Санюка илчĕ. Елюк Петĕре качча тухрĕ. Пирĕн Карачăм куккисен Сантăрĕ Укçук Праски патне хăтана пынă.
Çапла чупа-чупах эпир ял хĕрринчи пĕр шатрун çурт умне çитсе тăтăмăр. Манпа килнĕ хĕр тутăрне тӳрлеткелерĕ те:
— Иван Илларионович тата...—тесе кулса ячĕ,—хăй хĕрсемпе нимĕн чухлĕ те калаçма пĕлмест, çапах та председатель йăмăкне çавăрма шутлать. Айда, айда, кĕрер.
Эпир картишне кĕтĕмĕр. Усă чӳрече умĕнче хĕрсемпе каччăсем тăраççĕ. Пӳртре, сĕтел хушшинче, хĕрпе каччă лараççĕ.
— Епле аван мăшăр, пăхăр-ха, епле аван мăшăр,—тет ман çумри хĕр.
Эпĕ хама çакăнта илсе килнĕ хĕр Микихвер пиччесен Анукĕ пулнине тин палласа илтĕм. Епле ӳссе кайнă вăл. Йăлтах улшăннă.
— Ку Ванюк кама илчĕ вара? Хĕрне ниепле те пĕлейместĕп,—терĕм эп сĕтел хушшинчи çамрăксем çинчен.
— Эх, эсĕ те çав. Ку Мариç вĕт. Сысна ферминче ĕçлет. Ун çинчен хаçат çине те çырчĕç.
— Петрова Мария-и? Пĕлетĕп, пĕлетĕп, вуланăччĕ.
Эпир Анукпа пĕрле урама тухрăмăр. Анук калаçма ӳркенмест.
— Итле-ха, итле. Веç, купăс сасси янăрать. Вăл Кирук вĕт, иккĕмĕш бригадăран. Мана калать: сана, Анук, пурпĕрех канлĕ çывăрма памастăп, тет. Çĕрĕпех купăс калатăп, тет. Пĕлетĕн-и, мĕншĕн?
— Ятлаçрăр пуль?
— Çу-ук, ятлаçман.
— Мĕн вара?
— Юратать вăл. Юратнăран кăна калать.
— Тен, ыйхă килнĕрен мар-ши? Апла та пулать вĕт,—терĕм эп, Кирук сăмахне аса илсе.
— Çав купăса ыйхă килнĕрен калать, тетĕн-и? Çу-ук. Вăрçăра вăл çичĕ талăк пĕр куç хупмасăр çӳренĕ. Мĕнле харсăр вăл, пĕлесчĕ сан. Çитменнине питĕ вайлă. Эп унпа алă тытма та хăратăп. Шатăрт чăмăртаса илет те, чĕркуççи çинех лапчăнса ларатăп. Эп çиленсе аллине çырта пуçласан кăна алла вĕçертет. Путсĕр вăл. Шутсăр усал.
— Ак ĕнтĕ, ĕнен сана. Пĕрре лайăх тетĕн эсĕ, тепре—путсĕр.
— Çук, ахаль чухне лайăх вăл.
— Хăçан «ахаль чухне»?
— Ара, калатăп-çке-ха, алла чăмăртаман чухне.
— Эсир унпа тĕл пулкалатăр-и?
— Çук. Ну, тепĕр чухне, ăçта та пулин, курать те алăран кăп ярса тытать.
— Эс ăна юрататăн пулас.
— Çавна-и? Мĕн тума кирлĕ вăл мана. Çӳретĕрех хайĕн лашипе шакăртаттарса...
Эп вара ним калама та аптрарăм.
— Пĕлетĕн-и,—терĕ Анук каллех,—çав Кирук çапах та ытла та кăмăллă ача. Хĕлле эпир унпа курсра вĕрентĕмĕр. Халĕ пурте вĕренеççĕ вĕт. Агрозоотехника курсĕ. Пире тепĕр чухне вĕренме йывăртарах, зоотехник ыйтнине ниепле те тĕрĕс калаймастăн. Пирĕн Кирук нимĕн те аптрамасть, йăлт каласа парать. Вăл занятие пымасан, хăраса кăна ларатпăр, тен, никам пĕлмен ыйту сиксе тухĕ, тетпĕр. Çавăнпа Кирука, пымасан та, çавăтса илсе пыратпăр.
— Çиленмест-и вара сире?
— Çук. Вăл мана нихçан та çиленмест. Кулать кăна, куçран пăхать те йăл кулать. Калас пулать-ха ăна, тек ун пек йăл кулса ан пăхтăр ман çине. Мĕн эпĕ, ун савнийĕ-им... Тупнă пăхмалли...
Умри йăмрасем, ыврннă çын пекех, хаш-хаш туса илеççĕ. Тӳпере уйăх çутатать, эпĕ ним тума аптраса, уйăх çине пăхрам. Анук эпĕ уйăх çине пăхнине курчĕ те:
— Унта кĕвентеллĕ хĕр пур теççĕ. Веç, куратăн-и, чăнахах та пур иккен. Икĕ енче икĕ витре, варринче çын.
— Чăнахах та кĕвентеллĕ хĕр пекех,—терĕм эпĕ.
Анук хавассăн ахăлтатса кулчĕ.
— Эх, эсĕ те çав. Темĕн пысăкăш сăртсен хушăкĕсем кăна вăл. Унта нимĕнле хĕр те çук. Хĕр санăн çумра кăна,—терĕ.
Эпĕ юриех:
— Манăн çумра хĕр пур-и вара?—тесе ыйтрăм, унтан:—Акă, чăнахах та пур-çке,—тесе Анука çурăмĕнчен ыталаса илтĕм.
— Мĕскер эсĕ?—кăртах сикрĕ хĕр.—Йĕркеллĕ пул!
Эпĕ каллех ним калама та пĕлмерĕм.
— Итле-ха, эсĕ халь Украинăран килтĕн-и? — ыйтрĕ хĕр.—Эс Украинăра пурăнатăн вĕт, çапла-и?
— Çапла.
— Хаш облаçран?
— Сумы облаçĕнчен.
— Чанахах-и? Апла «Червона Заря» колхозри Савченко доярка çинчен те пĕлетĕн пуль? Кала-ха, кала, мĕнле пурăнаççĕ унта?
Эпе, чеихене çăтса янă пекех, чĕнмесĕр утатăп. Сумы облаçĕнче пурăнатăп пулин те, эп Савченко доярка çинчен нимĕн те пĕлместĕп. Те илтсе маннă, те пачах та илтмен.
— Кала, ма каламастăн?!
— Эпĕ, эпĕ... илтессе илтнĕ пулас...
— Ну, вара?
— Вара... те астуса юлман. Çулла тӳрех тактикăлла занятисем пуçланчĕç...
— Эх, эсĕ те çав,—çиленнĕ пек пулчĕ Анук.—Савченко доярка кашни ĕнерен сакăршар пин литр сĕт суса илнĕ. Манăн та çавăн пек нумай сĕт суса илесчĕ. Эсĕ, Украинăна кайсан, ун патне кĕрсе тух-ха, вăл мĕнле ĕçленине тĕплĕн ыйтса пĕл те яла çырса яр. Юрать-и?
— Юрать,—терĕм эпĕ.
— Эсĕ пирĕн «Ритăна» пĕлетĕн-и?—ыйтрĕ хĕр.
— Ритăна-и? Чим-ха, сирĕн Рита ятлă хĕр те пурччĕ-и çав?
Анук каллех кулса ячĕ.
— «Рита» хĕр мар вăл,—ĕне. Пирĕн колхозри чи чаплă ĕне. Районти ялхуçалăх выставкинче пĕрремĕш преми илчĕ. Паян çак ĕне яла таврăннă та сĕт çав тери нумай пулнипе фермăна та утса çитеймен, канма шутланă. Çтаппан пичче аран тупса килчĕ.
— О-о!—терĕм эпĕ хавассăн, Дальне Миккисен тĕлĕнчи ĕнене аса илсе.—Вăл ĕнене пĕлетĕп. Уласкер. Мăйракисем ак çакăн пек...—ик алла та сарса кăтартрăм эпĕ.
Урам кĕтессинче Анук мана сасартăк алă пачĕ:
— Чипер кай. Эп васкатăп, питĕ васкатăп...
— Аçта?—ыйтрăм эпĕ.
— Çывăрас пулать. Ыран ирех тăмалла. Эпир ферма участокĕнчи çимĕçсене апат паратпăр. Кăмăлу пур пулсан, тух хире. Тух, чăнах та. Пĕрле ĕçлĕпĕр.
— Тухасса тухăп-ха та. Санпа калаçнине курсан, Кирук çиленĕ.
— Каларĕ тата. Ки-рук... Тем тăвăп сан Кирукупа.
Анук часах йывăççен хушшине кĕрсе çухалчĕ.

Эпĕ килелле утрăм. Паçăрхи хурăн çумĕнче халĕ те каччӑпа хĕр тараççĕ.

— Пĕлместĕн-и?—каллех илтĕнчĕ Иван Илларионович сасси.

— Пĕлместĕп,—терĕ паçăрхи янăравлă сас.

— Пелетĕн вĕт. Кала,—хайĕннех перет Иван Илларионович. Анчах ун сасси малтанхи пек çирĕп тухмасть.

Эх, каçхи тĕнче! Хурăн турачĕсен хушшинчен çутă уйăх курăнать. Вăл лапка-лапка пĕлĕтсем айне кĕрет те каллех сиксе тухать. Сасартăк çул хĕрринчи хурама тăрринче ах-ха-ха-ха!—тесе кашкăрни янраса кайрĕ. Эпĕ шартах сикрĕм. Ялта çуралса ӳснĕ пулин те, эпĕ кун пек сасă илтменччĕ. Çав вахатрах хурама çинчен пĕр пысăк кайăк лăпăслăпăс вĕçсе кайрĕ.

— Ан хăра, тăмана вăл,—терĕ мана такам кĕтмен çĕртенех.

Эпĕ пăхкалатăп, никам та курăнмасть.

— Мĕн туса тăратăн, паллаймарăн-им,—илтĕнчĕ каллех сасă.

Эпĕ лайăххах тинкертĕм те хурама айĕнче икĕ çын ларнине курах кайрăм. Пĕрин аллинче вăрăм туя. Кусем Шалки Васлейĕпе Мĕтри пичче пулчĕç иккен. Шалки Васлейĕ—пушар дружинин хуралçи, Мĕтри пичче —тусур.

— Çак кушак пуçлă тăмана,—терĕ Мĕтри пичче,—чăхсене варатса çӳрет.

Эпĕ вĕсем калаçнине хавасланса итлетĕп.

— Çак тăманана ĕнтĕ,—терĕ Васлей пичче,—ĕлĕк арçури тесе шутланă. Варманта вăл пĕчĕк ача пек çухăрса ярсан, хăшпĕр çынсен сехри хăпнă. Ара, Симĕс Лариванӑ лавне пăрахсах яла тарса килнĕ вĕт...

— Ку хăçан пулнă вара?—ыйтрăм эпĕ.

— Тахçан ĕлĕкех. Лариван ун чухне, сан пекех, каччă пулнă.

— Эх, вăл çеç-и тата,—тет Мĕтри пичче.—Тухатмăшне те, шуйттанне те ĕненнĕ...

— Шуйттанне курсах кайман та,—терĕ Шалки Васлейĕ,—анчах тĕшмĕшне курса тăраннă ĕнтĕ. Пĕрре, çавăн пек, тусура тухрăмăр. Палюк Хĕветĕрĕпе пулас. Çак хурама çумĕнче ун чухне тепĕр пысăк хурама пурччĕ. Çитрĕмĕр ун тĕлне. Пĕр хĕрарăм мăкăр-мăкăр калаçса тăра парать. Çӳçне-пуçне салатса янă хăй. Тӳр кĕллине парне парать иккен.

— Ун чухне юмăçĕ епле асатчĕ тата,—сăмахне малалла тăсрĕ Мĕтри пичче.—Пирĕн кӳршĕри Микка матки юмăççене пит ĕненетчĕ. Ăна пĕр юмăç, çапла, кĕтмен çĕртенех спасра вилетĕн, сана панулмипе асăнаççĕ, тесе каланă. Лешĕ вара вилме хатĕрленме тытăннă, тăванĕсемпе сывпуллашнă, япалисене сутса янă. Ара, пурпĕрех çынна юлать вĕт. Анчах кун иртет, çĕр иртет, малтанхи спас та, вăтаçĕрти спас та, кайранхи спас та иртсе каять. Микка матки пурăнать те пурăнать. Çакăн хыççăн вăл те вунпилĕк çул, те вунçичĕ çул пурăнчĕ, лайăх астумастăп. Ну, юмăçĕ ăса вĕрентрĕ ăна, Микка матки кайран юмăçа ĕненми пулчĕ. Юмăç тени пĕттĕр вăл, тесе ятлаçатчĕ.

— Каçхине урама тухакан хĕрсем те усалсем çинчен кăна калаçатчĕç.

— Самани çапла пулнă çав...

— Тĕттĕмлĕхре пурăннă.

— Халь ăçта кайса кĕчĕ-ши çав усал-тĕсел?—тесе ыйтрĕ Мĕтри пичче.

— Халăх вĕсене ĕненми пулчĕ, çавăнпа пĕтрĕç вĕсем,—терĕ те Васлей пичче, чĕлĕмне хурама тымарĕ çине шаккама пуçларĕ.—Халĕ çирĕм çул хушши ĕнтĕ хуралталаратăп. Кашни çĕрех куç хупмасăр хуралласа тăп. Мана, пур пулсан, мĕн те пулин курăнмаллах ĕнтĕ. Çук вĕсем. Çавăнпа курăнмаççĕ. Ĕлĕкхи çынсем ахалех хăраса пурăннă иккен.

Васлей пичче хыçалалла çаврăнса пăхрĕ те алтăр çăлтăр ӳпеннине курчĕ:

— Çурçĕр иртни пĕр сехет çитрĕ,—терĕ вăл.

— Çапла çав, самана йăлтах улшăнчĕ халĕ,—терĕ Мĕтри пичче, туйине выляткаласа.—Пĕлтĕр шапа çухăрма пуçличченех çуракине пĕтерчĕç. Ну, мĕн пулĕ-ши, тетĕп. Çук, аптрамарĕ. Тырпул нихçанхинчен те вăйлăрах пулчĕ. Кăçал, веç, çĕрулмине мĕнле лартрĕç тата? Мĕнлеччĕ-ха, Васлей.

— Халех. Аса илем-ха. Тăваткал тĕмпе теççĕ.

—Акă, курса тăр. Çамрăксем пĕлеççĕ вĕсем. Кăçал çĕрулми ĕçкунĕ пуçне вунă кило илетпĕрех.

— Вуннă пулать-ха вăл,—терĕ Васлей пичче,—тен, ытларах та пулĕ. Иван Илларионович ахальтен тăрăшмасть ĕнтĕ.

— Çăмарти чăххине вĕрентмест тетчĕç ĕлĕк. Ну, васка, хальхи çамрăксенчен вĕренмелли пурах. Хайхи Ануках илер. Пĕлтĕр кашни ĕнерен тăватă пин литр сĕт суса илчĕ. «Аритă» текеннинчен ултă пин литртан та ытларах сĕт сунă теççĕ.

— Хĕрĕ пултарать вăл. Амăшĕ те пит вăр-варччĕ, ку амăшĕнчен те иртерет. Çеçтук йăхне чапа кăларчĕ. Пĕр кун пухура сиксе тăчĕ те: кăçал çичшер пин литр сĕт илетĕп, терĕ.

— Ак сана хальхи ача-пăча. Пыр та калаç вĕсемпе,—терĕ те Мĕтри пичче хурама çумнерех хăпарса ларчĕ.

Анук çинчен татах мĕн каласа парĕç-ши тесе, эпĕ чылайччен тăтăм. Вара каçхи пиччесене:

— Ну, сывă пулăр,—терĕм те килелле утрăм.

Киле çитесси инçех те мар. Çырма тĕпĕнче каллех хуллен купăс калани илтĕнчĕ. Часах пичкеллĕ лав курăнчĕ. Эпĕ лава кĕтсе тăрас мар терĕм, утрăм. Хамăр кил хапхи умне çитрĕм те хăлăпран туртрăм. Хапха уçалмасть. Анне хапхана питĕрсе кĕнĕ пулас. Çак вăхăтра вара хыçри лав та шăкăртаттарса çитрĕ. Лав çинче Кирукпа юнашар—кам ку?—пĕр хĕр ларса пырать. Шурă тутăрпа хăй. «Анук вĕт ку?» вĕлтлетсе иртрĕ пуçра шухăш. Эпĕ лав иртсе кайиччченех хапха умĕнче тăтăм.

— Эй, эсĕ лашуна асăрха,—тесе калас тенĕччĕ Кирука. Çук, калама хăяймарăм. Ытла та аван ларса пыраççĕ Кирукпа Анук, мĕн тума кĕвĕçес-ха çынсем телейлĕ пулнăшăн. Эп хӳме урлă каçрăм та вырăн çине кĕрсе выртрăм. Каллех утă чăштăртатать, йăмра турачĕ шăрши кĕрет, пăхрăм та: тӳпере каллех кĕвенте çăлтăр ача чухнехи пекех çап-çутă курăнать...

## *Эс айăпсăр ман чĕрере*

Алексей АФАНАСЬЕВ

Эп вунă çул сана курман.
Хушăмăрта—уй-хир, вăрман...
Курас тесен, кайма çул пур.
Эп те кайман, эс те килмен.
Эпир санпа тĕл пуличчен
Тен, çĕр хут çăвĕ çумăр, юр...

Ик юплĕ пулчĕ пирĕн çул.
Сăмах кĕскеччĕ: Сывă пул...
Пĕччен утмашкăн çăмăл мар.
Иксĕмĕре те юрату
Сыхлатчĕ вăрттăн—эс асту,
Вăл сывăхрахчĕ—юнашар.

Анчах темме çухалчĕ час.
Кама-ха уншăн айăплас?
Эс ман умра ялан таса.
Аса илетĕп хăш чухне
Ытарайми тутусене,
Вĕсем халь те хитре-ши сан?..

Ăçта кайсан та пул хитре.
Эс айăпсăр ман чĕрере.
Манра çеç айăп пур пулас...
Чĕреçĕм—кайăксăр йăва—
Сӳнсе çитмен юратăва
Çаплах усрать—ман мĕн тăвас?..

# АНТОН ГРИГОРЬЕВИЧ РУБИНШТЕЙН



Антон Григорьевич Рубинштейн халăх хушшине музыка пĕлĕвĕсем сарас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсем туса хăварнă. Вăл Российăра чи малтан консерватори уçнă, Вырăс музыкин обществине организациленĕ, музыкăри классикăлла идеалсене хĕрӳллĕ хӳтĕленĕ. Иртнĕ ĕмĕрти 60-мĕш çулсенче вăл музыкăри прогрессивлă юхăма ертсе пыракансенчен пĕри пулнă. Хăй вăл çав тери чаплă пианист пулнă, вырăс музыкине фортепианăпа каласа, пĕтĕм тĕнчипе чапа тухнă. Чайковский тата ун чухнехи ытти паллă музыкантсем Рубинштейн композиторăн пултарулăхне пысăк хак панă.

Антон Григорьевич Рубинштейн çуралнăранпа кăçал 125 çул çитрĕ. Вăл 1829 çулхи ноябрĕн 28-мĕшĕнче, Бессараби чикки патĕнчи Вихватинец ятлă вырăнта çуралнă. Музыкăпа вал мен пĕчĕкренпех интересленнĕ. Вунă çула çитсен, Антон Григорьевич концертсенче пианинăпа чылай йывăр юрă-кĕвĕсем каланă. 1840 çулта Рубинштейн хăйне фортепиано калама верентнĕ Виллуан хушаматлă педагогпа пĕрле ют çĕршывсене тухса кайнă. Вăл ун чухне Парижри консерваторие кĕме тăрăшна, анчах унăн ĕмĕчĕ пурнăçа кĕреймен.

Консерваторие вĕренме кĕреймесен те, Рубинштейн музыкăпа интересленме пăрахмасть, вăл Хевеланăç Европăри чи пысăк хуласенче çав тери ăнăçлă концертсем парать. Унăн тĕлĕнмелле чаплă пултарулăхне Листпа Шопен композиторсем те палăртаççĕ. 1843 çулта Берлинта Рубинштейнăн пĕрремĕш произведенийĕ—фортепианăпа каламалли «Ундина» ятлă этюд пичетленсе тухать. Çав произведение Шопен хăй вăхăтĕнче питех те кăмăллана.

1843 çулхи çуркунне Рубинштейн Российăна таврanaть, анчах çулталăкран каллех ют çĕршывсене тухса каять. Хальхинче вăл унта пилĕк çул хушши пурăнать—питĕ тăрăшса вĕренет, ĕçлет. Çак вăхăтра унăн мировоззренийĕпе художествăлла принципĕсем чылаях çирĕпленеççĕ. Малтанах вăл Берлинта пурăнать, Мендельсонпа тăтăшах курнăçать, композици енĕпе Глинка учителĕ пулнă Ден патĕнче вĕренет; унтан Венăна куçса каять те, никампах та курнăçмасăр, концертсене те хутшăнмасăр пурăнать, тĕрлĕ произведенисем нумай çырать, философипе эстетикăна пикенсе вĕренет.

Халĕ ĕнтĕ Российăна вăл хăйĕн пултарулăхĕпе тĕлĕнтерекен ача е шанчăк паракан çамрăк артист пулса мар, чăн-чăн художник пулса таврăнать: унăн хăйĕн тавракурăмĕ, хăйĕн творчествăлла принципĕсем пур. Вырăс музыкинче Рубинштейн часах чи паллă вырăнсенчен пĕрне йышăнать. Вăл яланах халăх умне тухса калать, ун концерчĕсен программисенче час-часах хăй çырнă произведенисем тĕл пулаççĕ.

1859 çулта Рубинштейн Вырăс музыкин обществине туса хурать, 1862 çулта Петербургра консерватори уçать. Çак организацисене иккĕшне те вăл хăй ертсе пынă, вĕсен ĕçне активлă хутшăннă, симфонилле концертсенче хăех дирижер пулнă, преподавательсен ĕçне тĕрĕслесе тăнă, ик-виçĕ класра хăй вĕрентнĕ. Хуçалăх енĕпе тĕл пулакан тĕрлĕ ыйтусене те Рубинштейн хăех татса панă.

Хăй вăхăтĕнче Рубинштейн çав тери ăста пианист кăна мар, дирижер-пропагандист та, пултаруллă организатор та пулнă, çав вăхăтрах çĕнĕ произведенисем çырас тĕлĕшпе те ăнăçлă ĕçленĕ.

Рубинштейн 16 опера, 2 оратори, 6 симфони, темиçе симфонилле произведени, тĕрлĕ инструментсемпе каламалли камернăй сочиненисем — квинтетсем, квартетсем, триосем, скрипкăпа, виолончельпе, альтпа тата фортепианăпа каламалли сонатăсем 20 ытла, фортепианăпа каламалли пьесăсемпе романссем нумай çырать.

Рубинштейн музыкинче Мендельсон влиянийĕ нумай палăрать. Унăн произведенийĕсем яланах классикăлла уçăмлăхпа илемлĕн янăраççĕ, вĕсенче тарăн туйăм пурри сисĕнет. Рубинштейн творчестви вырăс музыкин аталанăвĕшĕн паллă вырăнта тăрать. Композитор ĕçĕ çине вăл чăннипех те профессионал куçĕпе пăхнă, хăйĕн ăсталăхне пур енчен те аталантарса пынă, музыка искусствинче пур йышши жанрсене те алла илсе пыма тăрăшнă.

Рубинштейнăн нумай енлĕ те анлă пултарулăхĕ уйрăмах унăн оперисенче палăрса тăрать. Вăл вырăс халăхĕн историйĕнчен илнĕ темăсемпе те ĕçленĕ («Дмитрий Донской», «Купец Калашников»), тĕрлĕ халăхсен пурнăçĕнчен илнĕ этнографилле сюжетсем тăрăх та çырнă («Дети степей», «Сибирские охотники», «Фомка-дурачок», «Хаджи-Абрек», «Горюша»), библире тата античнăй литературăра тĕл пулакан сюжетсемпе усă курнă («Маккавеи», «Нерон»), лирикăлла оперăсем те («Фераморс», «Демон»), кулăшларах çăмăл произведенисем те çырнă («Попугай», «Среди разбойников»).

Лирикăлла опера енĕпе Рубинштейн пысăк çитĕнӳсем тăвать. Çакăн пек произведенисенчен пĕрремĕшĕ унăн «Фераморс» опери пулать. Ана вăл Инди халăхĕн «Лалла рук» ятлă поэмин сюжечĕ тăрăх 1863 çулта çырнă. Унăн музыки çемçе те илемлĕ.

Рубинштейнăн «Демон» опери те (1872) Европăри лирикăлла оперăсен стилĕпе çывăх тăрать, анчах та вăл йăлтах хăйне майлă произведени. Унăн сюжетне те вырăс литературинчи чи паллă классикăлла произведенисенчен пĕринчен илнĕ.

Рубинштейн оперинче Демон Лермонтов произведенийĕнчи сăнартан нумай енĕпе уйрăлса тăрать.

Оперăри юрăсене Рубинштейн лирикăлла романссен çемçе çеммисемпе усă курса çырнă.

Рубинштейн творчествинче лирикăлла камернăй произведенисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Ун юррисен стилĕ—романтикăлла лирика, вăл стиль Шуберт тата Шуман ячĕсемпе тачă çыхăнса тăрать. Çак композиторсен творчествинчи лăпкă та майĕпен янăракан çемĕсем Рубинштейншăн уйрăмах çывăх пулнă. Шалти шухăш-туйăмсене вăл таврари çутçанталăкпа пĕрле сăнласа кăтартать. Ку тĕлĕшпе уйрăмах унăн «Весенняя песня», «Утренняя песня», «Песня», «Чаща лесная», «Испанская песня» романсĕсене палăртмалла. Çав тери илемлĕ юхса пырать унăн «Блестит роса» романсĕн çемми.

Европăри романтик-поэтсен сăввисемпе усă курнипе пĕрлех, Рубинштейн музыкинче вырăс халăхĕн нацилле поэзийĕнчи сăнарсем те пысăк вырăнта тăраççĕ. Пушкин сăввисем тăрăх вăл илемлĕ юрăсем çырса хăварнă.

# МУЗЫКА УЧИЛИЩИ

**25 çул каярах Шупашкарта чăвашсен музыка техникумĕ уçăлнă. Çак куна пирĕн республика кăçал чыслăн палăртрĕ.**

25 çул хушшинче музыка училищи чăваш халăхĕн содержани тĕлĕшĕнчен социализмла, формипе нацилле культурине аталантарас ĕçре пысăк çитĕнӳсем турĕ. Кунтан чăвашсен паллă композиторĕсем—Г. Воробьев, Сталинла преми лауреачĕ Ф. Лукин, Г. Хирбю, В. Ходяшев, Г. Лебедев, Т. Фандеев, Ф. Васильев композиторсем вĕренсе тухнă. Вĕсен паллăрах произведенийĕсене халь чăвашсем кăна мар, Совет Союзĕнчи ытти халăхсем те пĕлеççĕ.

Вырăссен паллă композиторĕсенчен пĕри В. М. Кривоносов тăрăшнипе 1932 çулта музыка училищи çумĕнче композиторсен класне йĕркеленĕ. В. М. Кривоносов ун чухне кунта преподавательте ĕçленĕ. Вăл училищĕре вĕренекенсене вырăссен музыка классикĕсен произведенийĕсемпе паллаштарас тата чăвашсен нацилле музыкин кадрĕсене хатĕрлес енĕпе пысăк ĕç тунă.

Чăвашсен музыка училищи пирĕн халăхăн чаплă композиторĕн тата драматургĕн Ф. П. Павловăн ячĕпе тачă çыхăннă. Ф. П. Павлов тăрăшнипе Шупашкарта 1920 çултах музыка шкулĕ уçăлнă, каярахпа вара, вăл çине тăнипе, музыка техникумне йĕркеленĕ. Училищĕре музыка ĕçне вĕрентнипе пĕрлех Ф. П. Павлов Шупашкарти чăваш хорне те ертсе пынă, юрăсем çырнă, хăйĕн паха пьесисене хатĕрленĕ.

Музыка техникумĕнчен вĕренсе тухнă çынсем халь пирĕн Тăван çĕршывăн тĕрлĕ хулисенче ĕçлеççĕ. Вĕсенчен эпир музыкант-исполнительсен тĕнчери конкурсĕн лауреатне Измайлова (вăл—Ленинградри филармонин симфони оркестрĕн солисчĕ), Мускаври филармони артистне Александрова, МХАТ оркестрĕн артистне Кондратьева, Совет Çарĕнчи оркестрсен дирижерĕсене — Лукоянова, Волкова, Алешина, Галактионова тата ыттисене те асăнма пултаратпăр.

Чăвашсен музыка училищин пуласлăхĕ пысăк. Малашне вăл хăйĕн биографине татах та чаплă çитĕнӳсемпе, чăваш музыкинчи çĕнĕрен палăракан паллă ятсемпе пуянлатасса шанас килет.

Ӳ к е р ч ĕ к р е: Г. Г. Лисков композитор музыка училищинче вĕренекенсемпе урок ирттерет.

**П. Матюхин фотоӳкерчĕкĕ.**





# „НАРСПИ“ КУН-ÇУЛĔ

Çуллахи хĕвеллĕ ирсенче эпĕ Атăл хĕрринчи садра чăваш поэзийĕн классикĕ Константин Иванов палăкĕ çине пăхса лармa юрататăп.

Хулара шăп. Хутран-ситрен сад çумĕнчи урампа машина иртет е Атăл çинче пăрахутсем пĕр-пĕрне усă сасăпа саламлаççĕ.

Садра никам та çук. Пристане каякан çынсем çеç, çула май сада кĕрсе, «Нарспи» авторĕн сăнĕ çине пăхса илеççĕ те, çурçĕр енчи хапхаран тухса, Атăл хĕррине анса каяççĕ.

Тин çеç тухнă хĕвел шевли поэтăн бронза пичĕ çинче çиçсе вылять. Мăнаçлăн пăхать поэт Тăван çĕршывăн илемĕ — Атăл çине...

Акă Атăл хĕррине «Победа» машина килсе чарăнать. Машина çинчен пĕр хĕр анчĕ, хăпаракан хĕвел çуттинче унăн йăлтăр куллиле йăлкăшса илчĕ. Хĕр хыççăн машинăран каччи те тухрĕ. Ку хĕре пĕлетĕп эпĕ, вăл пир-авăр комбинатĕнче ĕçлет, ун сăнне хаçатра та пичетлесе кăларнăччĕ. Каччи—инженер. Иккĕшĕ те пристань еннелле утрĕç. Таçта пăрахутпа кайма пуçтараннă ĕнтĕ.

Мĕнле сырнă пулĕччĕ-ши тăван поэзи классикĕ пирĕн телейлĕ çамрăксем çинчен?..

Çывăхрах хулăн сасăпа завод кăшкăртса ячĕ, унтан пир-авăр комбиначĕ сасă пачĕ, çывăхрах виççĕмĕш завод кăшкăртать, тăваттăмĕш... Вĕсен сассипе Кремль куранчĕсен юрри пĕрлешсе кайрĕ, Совет Союзĕн Гимнĕ янăрать.

Çук, курса юлаймарĕ пирĕн чаплă поэт ĕмĕрхи пусмăртан ирĕке тухнă Российăри халăхсен телейлĕ те савăнăçлă пурнăçне, иртсе кайнă тискер самана унăн çамрăк ĕмĕрне татрĕ. Курма пулмарĕ унăн тăван халăхĕ ытти халăхсемпе пĕр туслă çемьере çĕнĕ пурнăç тунине, çĕнĕ самана пуçласа янине.

Анчах чăваш халăхĕн Константин Иванов пуçласа янă янăравлă поэзийĕ, кунтан-кун çунатланса, çӳлтен-çӳле çĕкленет, çĕнĕ хăват илет. Чăваш халăхĕн юратнă поэчĕ пуçланă ĕçе малалла илсе пыракан çыруçăсен ячĕсене çамрăксем те, ваттисем те пĕлеççĕ, мĕншĕн тесен халĕ хут пĕлмен çын çук. Хальхи поэтсен кĕнекисем хушшинче Константин Иванов çырнă «Нарспи» те хисеплĕ вырăн йышăнать. Ĕлĕк çав поэмăна шкул ачисем хут пĕлмен халăха улахсенче е выртмара çеç вула-вула паратчĕç. Халĕ «Нарспи» вуламан çын та çук. Ĕлĕк «Нарспи» поэмăна вулакансем те поэт ятне пĕлмен, мĕншĕн тесен ун кĕнекине поэт ятне кăтартмасăр кăларнă. Халĕ Константин Иванов ятне кашни килте асăнаççĕ, унăн произведенийĕсене кашни çул тенĕ пек çĕнĕрен пичетлесе кăлараççĕ. «Нарспи» поэмăна халĕ чăваш халăхĕ çеç мар, Совет Союзĕнчи ытти халăхсем те юратса вулаççĕ: вичĕ хут ăна Мускаврa вырăсла пичетлесе кăларчĕç, украинецсем, тутарсем, марисем, удмуртсем, мордвасем «Нарспи» поэмăна хăйсен тăван чĕлхипе вулаççĕ.

Асран каймасть «Нарспи» малтанхи хут пичетрен тухнă кун. 1908 çул. Эпĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренетĕп. Пĕр ирхине Иван Яковлевич урока вĕр-çĕнĕ кĕнекесем пĕр вăтăр кĕнеке илсе пычĕ.

— Петров Меркурий!—терĕ вăл малти парта хушшинче ларакан ачана.— Çак кĕнекене пурне те валеçсе пар.

Меркурий кашни ача умне çӳхе



Çӳлти ӳкерчĕкре: «Нарспи» оперăн I-мĕш картини.

Аялти ӳкерчĕкре: Сетнер—Иван Охливанкин артист, Нарспи—Тамара Чумакова артистка.

шурă хупăллă кĕнеке пырса хучĕ. Кĕнеке пичĕ çине вырăсла «Сказки и предания чуваш» тесе çырнă.

— «Нарспи», «Нарспи» пичетленнĕ!—кăшкăрчĕ урок пĕтсен чăвашсен пулас композиторĕпе драматургĕ Федор Павлов.

Ачасем «Нарспи» поэмăна шырама пуçларĕç. Кĕнекен малтанхи страници çине «Икĕ хĕр» тата «Тимĕр тылă» юмах пуçламăшне пичетленĕ, унтан «Аслă суеççĕ», «Хитре чĕкеç» курăнса кайрĕ, варринче — «Нарспи»...

Кăнтăрлахи апат хыççăн ачасем уçăлса çÿреме шкул садне е Сĕве урлă хывнă кĕпер çине каяканччĕ, паян, çĕнĕрен уроксем пуçланнă пек, пурте класа кĕрсе, хăйсен вырăнĕсене ларчĕç, «Нарспи» вулама пуçларĕç. Пĕрне-пĕри кансĕрлес мар тесе, сасăсăр ву-



Оркестрти çамрăк виолончелистка Людмила Воробьева.

лаççĕ. Кам та пулин сасăпа вулама тытăнсанах, темиçе ача пĕр харăс: Ш-ш!—тени илтĕнет.

Тĕттĕм те пула пуçларĕ, ачасем çаплах «Нарспи» вулаççĕ-ха. Сторож класри краççын ламписене çутса ячĕ. Сасартăк Меркурий кафедра çине хăпарчĕ те чун хавалĕпе «Нарспин» вуниккĕмĕш сыпăкне вулама пуçларĕ:

Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
Вĕçĕ-хĕрри курăнмасть..

Ачасем вулама чарăнчĕç, Меркурие итлеме пуçларĕç. Пит аван вулатчĕ вăл, чăн-чăн артист пекех.

Халь те пулин Силпире
Асăнаççĕ мĕскĕне.
Ялан, çумăр çумасан,
Шыв сапаççĕ тăприне,—

вĕçлерĕ поэмăна Меркурий. Унтан сывлăш çавăрса илчĕ те:

— Анчах кам çырнă-ха çак ытарайми поэмăна?—ыйтрĕ вăл, аллинчи кĕнекине ÿлелле çĕклесе.

— Константин Иванов! — кăшкăрчĕ Федор Павлов, поэтăн тусĕ. Ăна поэт поэмăн хăшпĕр сыпăкĕсене кĕнеке пичетрен тухиччен вуласа панă-мĕн.

— Автор ячĕ ăçта?—ыйтрĕç пĕр харăс ачасем.

— Ак кунта,— кăтартрĕ Павлов, малти хуплашкан тепĕр енне кăтартса.

Чăнах та, кĕнекен малти хуплашкин тепĕр енче, аялта пĕчĕк саспаллисемпе: «Собирал К. Иванов», тесе çырнă. Урăх вырăнта поэт ячĕ çук. Революциччен «Нарспи» поэмăна кам çырнине Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухнă учительсем кăна пĕлнĕ, халăх пĕлмен.

Ирĕке тухнă халăх çеç «Нарспи» авторне тивĕçлĕ чыс турĕ. Халĕ шкулсемпе вулав çурчĕсенчи библиотекăсенче çеç мар, кашни колхозник пÿртĕнче «Нарспи» поэмăна курма пулать. Вăл сахал, революци хыççăн «Нарспие» сцена çинче лартма пуçларĕç. 1920 çулта Атăл çинче çÿрекен пăрахут капитанĕн помощникĕ Александров «Нарспи» поэма тăрăх драма çырчĕ. Ăна Наркомнац çумĕнчи Чăваш пайĕ пичетлесе те кăларчĕ. 1923 çулта пирĕн паллă драматург П. Осипов Хусанта вĕреннĕ чух чăваш педтехникумĕнче вĕренекенсен драмкружокĕ валли «Нарспи» тăрăх пьеса çырчĕ. Унăн инсценировкине Чăваш театрĕнче те лартрĕç, анчах вăл, драмкружок валли çырнăскер, театр репертуарĕнче тытăнса юлаймарĕ.



Оркестрта вылякан çамрăк флейтист Федор Куликов (ç ÿ л т и). «Нарспи» оперăна лартакансем: хормейстер Г. Лебедев, концертмейстер Т. Крылова, музыка руководителĕ Сталинла преми лауреачĕ Ф. Лукин, дирижер В. Ходяшев, режиссер И. Максимов-Кошкинский.



Михетер ролĕнче Николай Комиссаров артист, евчĕ ролĕнче Чăваш республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Петр Медников.

Г. Зиньков фотоÿкерчĕкĕсем.

1940 çулта А. Кăлканпа В. Алагер драматургсем «Нарспи» поэма тăрăх çĕнĕрен драма çырчĕç. Вĕсен инсценировки Чăваш Академи театрĕн репертуарĕнче 13 çул тытăнса тăрать. Паянхи кун «Нарспи» драмăна курман чăвашсем хамăр республикăра çеç мар, Тутар, Пушкăрт республикисенче те çук пулĕ.

Кăçал Шупашкар урамĕсенче «Нарспи» опера лартни çинчен пĕлтерекен афишăсем курăнса кайрĕç. Чăнах та, октябрĕн 2-мĕшĕ чăваш халăхĕн искусствишĕн паллă кун пулчĕ: вăл кун эпир «Нарспи» оперăн пĕрремĕш картинине итлерĕмĕр. Оперăри партисене чăваш юрăçисем юрларĕç. Çитес çул Чăваш государство филармонийĕ хамăр халăхăн малтанхи оперине пĕтĕмĕшпех кăтартма ĕмĕтленет.

Çак пысăк ĕçшĕн филармонире ĕçлекен чăвашсен музыка деятелĕсемпе артисчĕсене мухтама тивĕçлĕ. Анчах филармони работникĕсемпе пĕрле чăваш халăх поэтне П. Хусанкая тата вырăс композиторне В. Иванишина та тав тăвас пулать: вĕсем пуçарса ячĕç ку пысăк ĕçе, вĕсем иккĕшĕ çырма пуçларĕç чăвашсен малтанхи оперине. Анчах вĕсем пуçласа янă ĕç вĕçне çитеймерĕ: Иванишин Аслă Отечественнăй вăрçăра Тăван çĕршыва хÿтĕлесе пуçне хучĕ.

Чăваш правительстви сĕннипе Иванишин çырса пĕтереймен оперăна çырас ĕçе унăн юлташĕ—Ленинград композиторĕ—И. Пустыльник хăй çине илчĕ. Çав майпа чăваш композиторĕсемпе музыка деятелĕсем Иванишин произведенине çĕнĕрен итлесе пăхрĕç, анчах ăна сцена çинче лартма май килмест, терĕç, мĕншĕн тесен композитор хăйĕн оперине вырăс халăхĕн музыка классикĕсем пек мар, «çĕнĕ» меслетпе—формализмла меслетпе çырнă пулнă: оперăра арисемпе ансамбльсем мар, речитативсем (юрласа сăмахланисем) нумайтарах, çавăнпа вăл итлекенсене ăнланмалла, хумхантармалла мар пулса тухнă. Иванишин консерваторинче вĕреннĕ чух çамрăк композиторсем оперăсене кирек мĕнле пулсан та «çĕнĕ» меслетпе çырма кирлĕ тесе шутланă. Пирĕн парти çак йăнăша тÿрлетрĕ: 1948 çулта январь уйăхĕнче ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ совет музыкин деятелĕсен канашлăвне ирттерчĕ, йăнăш çулпа утма пуçланă композиторсене тĕрĕс çул кăтартса пачĕ.

Çак историлле канашлура кăтартса панисене асра тытса, И. Пустыльник «Нарспи» оперăна çĕнĕрен çырчĕ. Опера либреттине те çĕнĕрен çырма тиврĕ.

Кăçал пирĕн малтанхи оперăна Шупашкарта çеç мар, Тутарсен оперăпа балет театрĕ те лартать. «Нарспи» опера пирĕн асран кайми поэтшăн тепĕр палăк пулса тăрать.

И. МАКСИМОВ-КОШКИНСКИЙ.



# СЪЕЗД УМĔН

Писательсен пĕтĕм Союзри пĕрремĕшпе иккĕмĕш съезчĕсем хушшинчи 20 çул—чăваш литератури аталанса ура çине тăнă тапхăр пулчĕ. Çак тапхăрта прозăпа çыракан чăваш писателĕсен йышĕ те чылай ÿсрĕ. Çирĕммĕшпе вăтăрмĕш çулсем хушшинчи чăваш прози хăйĕн ятне çеç кăтартнă пулсан, 1934 çул хыççăнхи проза вара пирĕн çамрăк литературăра тĕп жанр пулнăне йышăнчĕ. Паянхи куна илсен, эпир проза жанрĕпе çыракан писательсем чăваш литературинче чи йышлă отряд пулса тăнине куратпăр. Çакă вăл чăваш литератури те Совет Союзĕнчи ытти халăхсен литературипе пĕрле ÿсе çитĕннине пĕлтерет.

Çавăнпа та эпир писательсен пĕтĕм Союзри иккĕмĕш съезчĕ умĕнхи статьяра чи малтан чăваш прозаикĕсен пултарулăхне асра тытатпăр.

Хумма Çеменĕ, Исаев Мĕтри, М. Данилов-Чалдун, Трубина Мархви, С. Эльгер, Кузьма Пайраш, Илья Тукташ, Леонид Агаков, В. Долгов, А. Эсхель, Кузьма Турхан, Хветĕр Уяр, С. Аслан, Александр Артемьев, Николай Ильбек, М. Кипек, Владимир Садай, А. Медведев — кашни хăйĕн пултарулăхне кура—чăваш прозине аталантарма пулăшрĕç.

Кусен çумне юлашки вăхăтра тăтăшах пичетленме пуçланă çамрăк прозаиксем—С. Павлов, В. Бурнаевский, В. Ухли, М. Ухсай, В. Алендей, И. Григорьев, А. Лазарева, Н. Мартынов, Илья Михайлов тата ыттисем те хутшăнчĕç.

Чăваш прози никĕсне хывакан Хумма Çеменĕн малтанхи калавĕсенче Аслă Октябрь ирĕке кăларнă чăваш ялĕнчи çамрăк хунава—малтанхи комсомолецсене, вĕсем темиçе ĕмĕр пусмăрта та тĕттĕмлĕхре нуранă чăваш халăхне çутта кăларассишĕн ĕçленине куратпăр. Совет литератури умĕнче тăракан задачăсенчен пĕри вăл—вулакансене коммунизмла воспитани парасси, пурнăçри кивĕлĕхе хирĕç кĕрешме, çĕнĕлĕхе çитĕнме пулăшасси. Çак задачăна Хумма Çеменĕ литература ĕçне пуçăннă малтанхи кунсенчех тĕппĕн ăнланса илнĕ, революцилле çĕнĕлĕхшĕн тăнă («Штрум», «Пирĕн вăй, вăй!..» калавĕсем). Литературăри средствăсемпе кивĕлĕхе хирĕç кĕрешесси Хумма Çеменĕшĕн яланах палă пулнă. «Станцăра» калавра вăл тĕн сĕрĕмĕ чăваша тутарпа тусла пурăнма чăрмантарнине хирĕç тăрать, «Орфей чĕрĕлни» калавра чăваш халăхĕн çĕнĕ искусствине, хресчен колхоз çулĕ çине тухнине саламлать.

Хумма Çеменĕн пултарулăхĕн идейăлăхне палăртнипе пĕрлех унăн литература ăсталăхне те тивĕçлипе хаклас пулать. Асталăх ыйтăвĕ писательшĕн идейлăх ыйтăвĕ те пулса тăрать. Тем пек паха идея та япăх çырнă произведенире вулакан патне тивĕçлĕн çитеймест. Писатель мĕн чухлĕ ăстарах çырать, унăн произведенийĕнче идейлăх та çавăн чухлĕ вăйлăрах, хăватлăрах, витĕмлĕрех пулать. Хумма Çеменĕ—чĕлхе ăсти. Писательсен пĕтĕм Союзри пĕрремĕш съезчĕ хыççăнхи çулсенче Хумма Çеменĕ чăваш халăхĕн революцичченхи пурнăçĕ çинчен пысăк роман çырма тытăннăччĕ. Анчах ăста писателĕн ĕмĕрĕ кĕске пулчĕ—вăл шăпах «Йÿçлĕ-тутлă» роман çырнă вăхăтра вилсе çĕре кĕчĕ. 1936 çулхи «Сунтал» журналăн 10-мĕшпе 11-мĕш номерĕсенче «Йÿçлĕ-тутлă» романăн малтанхи сыпăкĕсем пичетленнĕ. Çак сыпăксене вуласа тухнă хыççăн тÿрех Хумма Çеменĕн ăсталăхĕ тата та çÿлĕрех пусăма çĕкленнине куратăн. Вăл сăнласа панă геройсем пурте чĕрĕ çыннăн туйăнаççĕ.

Çавăн пекех çак иртнĕ 20 çул хушшинче Трубина Мархви пултарулăхĕ те малалла аталанса пычĕ. Унăн «Мучар» тата «Хÿтĕ вырăнта» повеçĕсем чăваш ялĕсем колхоз çулĕ çине тухнă ответлă та паллă тапхăра кăтартаççĕ. Социализм тăвас ĕçре пире класс тăшманĕ чăрмантарса пынине, ăна хирĕç ялти коммунистсемпе комсомолецсем, активистсем кĕрешнине Трубина Мархви яр уççăн сăнласа парать. Тÿрех калас пулать, пирĕн критиксем Трубина Мархви пултарулăхне халиччен те тивĕçлипе хак паман. Тен, çавăнпа та пулĕ, 1935—1936 çулсенчи чи пысăк произведенисенчен пĕри—«Мучар» повесть вулакансем хушшине халиччен те çителĕклĕ сарăлман, 1940 çулхи «Илемлĕ литература» альманахра пичетленнĕ «Хÿтĕ вырăнта» повеçе те уйрăм кĕнеке туса кăларман (ку повеçе уйрăм кăлариччен авторăн, паллах, çĕнĕрен пăхса, тÿрлетсе тухмалла пулнă).

Çав вăхăтрах Трубина Мархви ача-пăчасем валли те чылай паха произведенисем çырать. Унăн «Асăнмалăх, савăнмалăх» кĕнеки пионерсемпе шкул ачисемшĕн чи юратса вулакан кĕнекесенчен пĕри пулса тăчĕ.

Кăçал Трубина Мархви «Ача чухнехи» повесть çырса «Тăван Атăл» альманах редакцине тăратрĕ. Кунта Трубина Мархви хăйĕн биографине мар—пĕтĕм чăваш халăхĕн революцичченхи пурнăçĕнчен илнĕ сăнарсене асра юлмалла сăнласа парать.

Çирĕм çул каялла писательсен пĕтĕм Союзри пĕрремĕш съезчĕ совет литературин тĕп меслечĕ социализмла реализм пулса тăнине палăртса хăварчĕ. Ку, пуринчен ытла, писательсен пурнăçа тĕрĕс тата унăн революцилле ÿсĕмне кăтартса памаллине пĕлтерет. 1934 çултанпа паянхи кунччен хи тапхăра илсен, эпир пĕтĕм совет литератури çак социализмла реализм меслетне пула малалла аталанса пынине пĕлетпĕр. Çирĕм çул хушшинче чăваш совет литератури те, вырăссен, украинецсен, белоруссен, азербайджансен, грузинсен, тутарсен литературисем пекех, ĕçчен çынсен пархатарлă пултарулăхĕ писательсен кĕнекисенчи тĕп тема пулса тăнине кăтартрĕ.

Уйрăм писательсем çинчен сăмах тапратсан, социализмла реализм кашни чăваш писателĕшĕнех пултарулăх меслечĕ пулни палăрать. Прозăпа çыракансенчен çак иртнĕ çирĕм çул хушшинче уйрăмах Трубина Мархвипе С. Эльгер, Илья Тукташпа Кузьма Пайраш, М. Данилов-Чалдунпа Леонид Агаков, В. Долговпа Кузьма Турхан, Хветĕр Уярпа Кузьма Чулкаç, Степан Асланпа Александр Артемьев, М. Кипекпе Н. Ильбек ĕçĕсем çулсеренех сарăлса, малалла çĕкленсе пычĕç.

Чăваш халăх поэчĕ С. Эльгер 1935—1936 çулсенче пикенсех прозăпа çырма пуçлать. Унăн «Вутпа çулăм витĕр», «Шурăмпуç килсен» романĕсем пирĕн çамрăк литературăра паллă та тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ. Автор пурнăçа нумай пĕлекен, нумай сăнанă çын пулни «Вутпа çулăм витĕр» романăн кашни страницинчех палăрать. Пĕрремĕш империализмла вăрçă кунĕсене рядовой салтак куçĕпе ăста сăнласа пани—С. Эльгерĕн пултарулăхĕ нумай енлĕ иккенне пĕлтерет.

«Шурăмпуç килсен» роман (халĕ ăна автор иккĕмĕш хут хушса кăларчĕ), ăсталăх енчен илсен, С. Эльгершĕн çĕнĕ сыпăкри çитĕнÿ пулать. Кунта уйрăмах автор композици тĕлĕшĕнчен нумай ĕçлени, романри уйрăм йĕрсене килĕшÿллĕ çыхăнтарса пыма пĕлни, çакна пула авторăн тĕп шухăшĕ вулаканшăн яр уççăн палăрса пыни курăнать. 1905—07 çулсенчи чăваш ялĕнчи революционерсен сăнарĕсем — романри паха та ĕнентерÿллĕ сăнарсем.

Тÿрех калас пулать, С. Эльгер вырăс литературинчи аслă М. Горький пуçарса янă традицие—ĕçхалăх представителĕсене литературăри тĕп геройсем тăвассине—сума суса, аслă писательтен вĕренсе пыни туйăнать.

Вырăс литературин пархатарлă влиянийĕ ытти чăваш писателĕсен пултарулăхĕнче те сисĕнет. Тĕрĕссипе каласан, çакнашкал влияни, пысăк литературăри опыт, пуян традици пулман пулсан, чăваш совет литератури кĕске вăхăтрах çĕкленме те пултарайман пулĕччĕ.

Вырăс халăхĕн литературинчи чаплă произведенисенчен вĕренсе тата чăваш халăхĕн творчествинчи пуянлăхпа усă курса, Илья Тукташ лирикăлла сăвăсем, «Пурнăç пуçламăшĕ» повесть, «Çĕр каласать» ятлă калавсен циклĕ, «Хĕвел чечекĕ» драма çырчĕ. Çак асăннă произведенисем Илья

Тукташăн икĕ съезд хушшинче тунă чи паллă ĕçĕсем пулса тăраççĕ. «Пурнăç пуçламăшĕ» повесть тема тĕлĕшĕнчен С. Эльгерĕн «Шурăмпуç килсен» романĕпе пĕр пекрех, анчах Илья Тукташ чăваш литературинче пуçласа революци юхăмне хутшăннă чăваш хĕрарăмĕн сăнарне илет, вăл—повеçри тĕп героиня. Çак çулсенчех Илья Тукташ чăваш халăхĕн сăмах халлĕн çӳрекен творчествине пухас тĕлĕшпе те нумай ĕçлерĕ, чăваш литератури учебникĕсем çырчĕ. Пирĕн критика Илья Тукташ пултарулăхне халиччен те тарăн тишкĕрсе хакламан-ха.

Çавăн пекех Кузьма Пайраш калавĕсемпе повеçĕсем тата пьесисем çинчен тĕплĕн çырнă критикăлла статьясем те çук. Кузьма Пайраш пуринчен ытла совет интеллигенцийĕн пурнăçĕпе интересленет, тухтăрсемпе инженерсем çинчен çырать. Унăн пултарулăхĕнче аван ен пур—вăл кирек мĕн пирки çырнă чух та вулакана малалла туртакан сюжет тума пĕлет, çирĕп те тăпăл-тăпăл композицишĕн тăрăшать. Ахаль мар ĕнтĕ Кузьма Пайрашăн «Çул çинче» кĕнекине уйра та, килте те, вăрманта ĕçленĕ чух та, заводра та, колхозра та савăнса вулаççĕ.

К. Пайраш çырма пуçлани часах 30 çул çитет. Вăл малтан комсомол пичетĕнче ĕçленĕ, çамрăксене хаçат ĕçне явăçтарнă, хальхи паллă писательсенчен чылайăшне К. Пайраш литература çулĕ çине тухма пулăшнă. Хăй вăл ун чухне фельетонсемпе очерксем, калавсемпе пьесăсем нумай çырнă. Апла пулин те, унăн чи пиçсе çитнĕ произведенийĕсем — 1934—1954 çулсенче çырнисем.

Чăваш литературин çак çулсенчи активĕнче М. Данилов-Чалдунпа Леонид Агаков пур. Вĕсем иккĕшĕ те Аслă Отечественнăй вăрçăри совет патриочĕсем çинчен нумай çырчĕç. М. Данилов-Чалдун Тăван çĕршыва гитлеровецсенчен тасатассишĕн пыракан çапăçура пуçне хучĕ. Паттăр вилĕмпе вилнĕ писателĕн наследствинче граждан вăрçи çинчен çырнă калавсемпе повеçсем те паллă вырăн йышăнаççĕ.

Леонид Агаковăн Отечественнăй вăрçă умĕнхи «Пĕрре, çуркунне...» повеçĕнче колхоз юхăмĕччĕнхи чăваш ялĕнчи активист Тарас сăнарĕ тухса тăрать. Тарас пек халăх хушшинчи общественăлла ĕçшĕн хыпса çунакансене эпир Аркадий Эсхелĕн калавĕсенче те («Вĕри чĕресем», «Секретарь мухтасан»), Кузьма Турхан романĕнче те куратпăр.

Вăрçă хыççăнхи прозăра паларнă писательсенчен чи малтан Александр Артемьев хăйĕн çар калавĕсенче совет салтакĕсен пархатарлă сăнарĕсене çĕнĕ сасăпа, витĕмлĕ, таса чĕлхепе çырса кăтартнине астутарса хăварас пулать. Асталăх енчен илсен, çамрăк писателĕн чи аван калавĕ—«Ан авăн, шĕшкĕ». Юлашки вăхăтра А. Артемьев паянхи колхоз çамрăкĕсем çинчен чылай пысăк повеçсемпе уйрăм калавсем çырать. Писатель ӳссех пырать.

Кунта çамрăк прозаиксен творчестви çинчен те асăнмасăр иртсе кайма çук. Кусен кашнийĕнех хăй кăмăлланă тема, хăй юратнă герой, хăйне евĕрлĕ стиль.

Çапла ĕнтĕ, писательсен пĕтĕм Союзри пĕрремĕш съезчĕ хыççăн аталаннă чăваш прозинче профессионал-писательсен отрячĕ чăмăртанни паларать. Çитĕнӳсем сахал мар, анчах малашне çулсеренех çĕнĕ романсем, повеçсем, калавсен кĕнекисем тухса тăччăр, вĕсенчен чылайăшĕ вырăсла тата ытти чĕлхесене куçарма юрăхлă пулччăр тесен, кашни чăваш писателĕн мĕнпур вăй-халне, пултарулăхне, асталăхне мобилизацилемелле, хамăр çĕршыври халăхсен малта пыракан писателĕсемпе ăмăртмалла, паха произведенисем çырма тăрăшмалла.

Чăваш поэзи пуянлăхĕ чи малтан К. Ивановпа Çеçпĕл Мишши традицийĕсене тытса пынă Н. Шелепи, С. Эльгер, П. Хусанкай, Митта Ваçлейĕ, Я. Ухсай, И. Ивник, Стихван Шавлы, Александр Алга, Уйăп Мишши, А. Петтоки, Илья Тукташ, Аркадий Эсхель, А. Кăлкан, И. Малгай поэтсем çырнă сăвăллă произведенисенче курăнать. Пирĕн поэзин уйрăмлăхĕ вăл—пысăк формăпа çырнă произведенисем йышлă пулнинче. Чăнах та, С. Эльгерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэмипе «Вунсаккăрмĕш çул» драмине, П. Хусанкайăн «Аптраман тавраш», «Чĕре юрри» поэмисене, Я. Ухсайăн «Çул» романĕпе «Кĕлпук мучи» поэмине, С. Шавлин «Октябрь поэмине». А. Алган «Шыв арманĕ» балладине, Аркадий Эсхелĕн «Амăрткайăк», А. Кăлканăн «Сар Иван» поэмисене илĕрха—кусем пурте сăвăпа çырнă анлă произведенисем.

Пирĕн поэтсем сăнласа панă сăнарсем вулакансене чĕрĕ çыннăн туйăнаççĕ. Чакка, Левен, Смирнов, Аптраман таврашĕсем, Павăл-комсомолец, Чинавье инке, Кĕлпук мучи, Сарпи, Матур Якур—кам пĕлмест çак персонажсене? Кам асăнче юлман-тăр вĕсем?

Чăваш поэчĕсен ăсталăхĕ лирикăлла сăвăсенче те, кĕске юптарусенче те, патриотла поэмăсенче те паларать. Пирĕн поэзи ытти тăван халăхсен литературипе пĕр тан утма тытăнни уйрăм поэтсен кĕнекисем Мускавра вырăсла тухнинчен те курăнать. Юлашки тăватă çул хушшинче Я. Ухсайăн Мускавра виçĕ кĕнеки, П. Хусанкайăн сăвăсен сборникĕ тухрĕ. Çитес çулсенче Çеçпĕл Мишшипе С. Эльгер, А. Алгапа С. Шавлы çырнă произведенисене те Мускавра вырăсла кăларма хатĕрленетпĕр. Кăçал Ленинград поэчĕсем С. Шавлы сăввисемпе поэмисене Шупашкарта кăларма чылай куçарчĕç. Чăваш писателĕн кĕнеки вырăсла тухнине вулакансем пирĕн литературăри уяв вырăнне хурса хапăл тăваççĕ.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче поэзире çамрăк хунав ӳссе хăпарни савăнтарать. Н. Евстафьев, А. Афанасьев, Е. Афанасьев, В. Давыдов, Г. Ефимов, А. Малов, П. Ялгир, М. Хури, Г. Орлов, Г. Лисин, А. Клементьев, М. Волкова, Б. Тихонов тата ыттисем те юлашки вăхăтра пичетре тăтăшах хăйсен сассисене параççĕ.

Писательсен пĕтĕм Союзри иккĕмĕш съезчĕ умĕнхи рапортра чăваш поэчĕсен пултарулăхĕ чи паллă вырăн йышăнса тăрать.

Драматургин 20 çул хушшинчи çитĕнĕвĕсене илсен, П. Осипов, И. Максимов-Кошкинский, Н. Айзман, А. Кăлкан, В. Алагер, А. Эсхель, К. Пайраш, Л. Родионов, В. Ржанов пьесисем пирĕн театрсен репертуарĕнче пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртас пулать.

Чăваш драматургин никĕсне хывакан Ф. Павловăн вилĕмсĕр пьесисем хыççăн, театр сцени çинче таталмасăр пыракан пьесăсем пирĕн сахалтарах вара. П. Осиповăн «Айтар» драминчен пуçне, чăваш драматургин çитĕнĕвне кăтартакан пьесăсенчен И. Максимов-Кошкинскин «Сатурпа Илем» драмине, Н. Айзманăн хăшпĕр пьесисене асăнма пулать. Çак шутах «Нарспи» инсценировка (авторĕсем А. Кăлканпа В. Алагер) тата хăшпĕр комедисем кĕреççĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, чăваш драматургийĕ кая юлса пырать. Кунта, паллах, пĕр вăхăтра драматургсем хушшинче сарăлнă конфликтсăрлăх «теорийĕ» те нумай сиен кӳнĕ. Чăваш совет писателĕсен тăваттăмĕш съезчĕ драматурги жанрĕпе ĕçлекенсем кая тăрса юлнипе килĕшме çуккине, вĕсен ĕçне çитес вăхăтрах çĕнетсе яма кирлине кăтартса хăварчĕ.

Çакна асра тытса, Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленийĕ халĕ пуринчен ытла драматургсен çĕнĕ пьесисене тишкерсе тухас, пьеса çыракан çамрăк авторсене пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлет. Правлени юлашки икĕ уйăх хушшинче çеç Тихăн Петĕркки, В. Васильев, П. Матюхин, Н. Айзман, Г. Пласкин, А. Молодов пьесисене пăхса тухрĕ, «Нарспи» тăрăх çырнă çĕнĕ инсценировка пирки дискусси туса ирттерчĕ.

Малашне драматургсене писательсен союзĕн те, Культура министерствин те, театрсен те ытларах пулăшса пымалла.

Чăваш совет писателĕсен тăваттăмĕш съезчĕ иртнĕренпе пилĕк уйăх çеç çитрĕ пулсан та, çак тапхăрта пирĕн писательсен обществăри активлăхĕ те, творчество ĕçĕ те хăватлăланса пыни палăрчĕ.

Писательсен пĕтĕм Союзри иккĕмĕш съезчĕ, çирĕм çул хушшинчи çитĕнӳсене пăхса тухса, совет литературин малашнехи кун-çулне кăтартса хăварĕ. Малашнехи çитĕнӳсем тата та ытларах, анлăрах, сулмаклăрах пулĕç.

**А. ТАЛВИР.**

# ЧĂВАШ СОВЕТ ЛИТЕРАТУРИНЧИ КРИТИКА ШАЙĔ ÇИНЧЕН

*Иккĕмĕш статья*

Пирĕн илемлĕ литературăра хăшпĕр критиксем ытларах поэтсен творчествине тишкерме юратаççĕ. Паллах, кунта ырă марри ним те çук, çапах та, ку вăл пирĕн литература критикин ĕçĕ-хĕлĕ жанрсем тĕлĕшпе пĕр пек пыманни çинчен калать. Анчах çитменлĕх çавăн пек пулнинче мар. Çитменлĕхсенчен пĕри акă мĕнре: проза çинчен çыракан критиксем те, поэзи çинчен çыракан критиксем те произведенисен содержанийĕ пирки ытларах сăмах хускатаççĕ, вĕсем форма, чĕлхе, стиль ыйтăвĕсене ялан тенĕ пекех «манса» хăвараççĕ, урăхла каласан, ăсталăх ыйтăвĕсене тĕпчемеççĕ. Çакă вăл критика вăйсăр пулнинчен, тĕрлĕ жанрсен уйрăмлăхĕсене çителĕклĕ пĕлменнинчен килет пулмалла. Илемлĕ литературăн специфики шухăшсене тĕрлĕ сăнлăхсемпе (образсемпе) мĕн тери ăста каласа панинче пулса тăрать, ытларах та: унăн специфики, уйрăмлăхĕ çынсен шухăшĕсене, кăмăлĕсене, туйăмĕсене, сисĕмĕсене, чун-чĕрисен хумханăвĕсене, савăнăçĕсене, хуйхи-суйхисене, ĕмĕчĕсене, туртăмĕсене илемлĕ сăмахсемпе, сăнлăхсемпе каласа (çырса) панинче пулса тăрать. Шăпах ĕнтĕ çакăнта (чĕлхе пуянлăхĕнче, сăнлăхсенче) литературăн нацилле уйрăмлăхĕ, нацилле форми палăрать. Çак пĕтĕм пуянлăха: произведенисенчи çĕнĕ шухăшсене, формăсене, уйрăмлăхсене тĕпчесе пĕлесси, вĕсене халăх патне çитересси, ĕççыннисене ăнлантарса парасси, ыррине, илемлине, хитрине юратма, усаллине, ирсĕррине тиркеме, хирĕçлеме, пĕтерме вĕрентесси критика ĕçĕ, тĕрĕссипе каласан, çакă вăл унăн задачи пулса тăрать. Искусствăра, чи малтан литературăра, политикăлла, философилле, историлле тата ытти шухăшсем те пур, анчах вĕсене пурне те илемлĕ-образлă формăпа каланă. Çак форма çынсен чунĕсене, чĕрисене хускатать, ыванннă çынсене хавхаланма, вăйĕсене пухма пулăшать. Сăмахран, поэзин хăватлă вăйĕ çинчен çак тĕслĕх те аван каласа парать. Авалхи Грецире, пĕр халап каланă тăрăх, хаяр вăрçăсенчен пĕринче, вăйлă тăшман хытă хĕснине пула чакса пыракан çар пулăшу ыйтма тытăннă пулать, анчах çар пуçлăхĕсем çапăçса халтан ÿкнĕ, аманса пĕтнĕ çара пулăшу парас вырăнне пĕтĕмпе те пĕр çын çеç ярса панă, тет. Вăл та пулин уксахскер пулнă, анчах уксах салтак ахаль салтак пулман. Вăл поэт пулнă. Уксах поэт салтаксем патне çитнĕ-çитменех юрă шăрантарма тытăннă, тет. Поэт юррине илтсен, унччен хăраса ÿкнĕ, шанчăкне çухатнă салтаксем, пурте кар тăрса, тăшман çинелле арăслансем пек ыткăннă, тăшмана пĕр самант хушшинче аркатса тăкнă, тет.

Ку тĕслĕхре чи малтан юрă хăвачĕ курăнать. Литературăна илес пулсан, унăн обществăри хăвачĕ, халăха вĕрентсе воспитани парас ĕçри хăвачĕ çав пĕр юрă хăватĕнчен темиçе пин хут пысăкрах пулни уççăнах курăнса тăрать.

Литература критикин ĕнтĕ пĕтĕм литературăн, уйрăм произведенисен пĕлтерĕшне курма, тĕрĕс хаклама пĕлес пулать, унсăрăн критика авторитечĕ кирлĕ таран çĕкленеймĕ.

Çак шухăшсене асра тытса, халĕ чăваш литературинчи критика ыйтăвĕсене, уйрăм критиксен юлашки çулсенче поэзи пирки çырнă статьисене кĕскен те пулин пăхса тухар-ха. Вĕсем, çав статьясем, чăвашсен халăхра паллăрах поэчĕсен Н. И. Полоруссов-Шелепин, П. П. Хусанкайăн, Я. Г. Ухсайăн тата ыттисен пултарулăхĕ çинчен çырнă статьясем. Паллă поэтсен творчестви çинчен тăтăшах статьясем тухса тăни вăл—законлă явлени, темелле, вăл—критика шухăшĕ ĕçленине кăтартакан паллă.

«Тăван Атăл» альманахăн 48-мĕш кĕнекинче (1953 ç.) Н. Любимовăн «Н. И. Полоруссов-Шелепин совет саманинчи творчестви» ятлă статьи пичетленсе тухнă. Статья авторĕ малтан поэтăн революци хыççăнхи творчествине кĕскен те пулин «çутатса парас тĕллев» лартни çинчен пĕлтерет. Статьинче вара çутатса панинчен ытларах Н. И. Шелепин тĕрлĕ сăвви-юррисен содержанине каласа панă,—тарăн анализ çук, вырăнĕ-вырăнĕпе çĕршыври пĕр-пĕр событи çинчен е хуçалăх ÿсĕмĕ çинчен каланă та вĕсене поэт сăмахĕсемпе «çирĕплетсе пама» тăрăшнă (хăшпĕр страницăсенче çавăн пек сăмахсен, цитатăсен шучĕ автор каланинчен те ытларах).

Критик каланă тăрăх, Н. Шелепи хăйĕн произведенийĕсене çырнă чухне халăх юморĕпе, сатирипе, вичкĕн те сăнарлă чĕлхипе тата унăн эпосла поэзийĕпе, лирикăлла произведенийĕсен пуянлăхĕпе анлăн усă курнă. Мĕншĕн тесен «патша саманинче пурнăç условийĕсем йывăр пулнă пирки Н. И. Полоруссов-Шелепи вĕренеймен, **çавăнпа та уншăн халăх творчестви тĕп çăлкуçĕ пулса тăнă»** (?). Н. И. Шелепи халăхран вĕренни çинчен, халăх творчествипе ăста усă курни çинчен калани тĕрĕс, анчах çакна шкулта «вĕренеймен» тенипе ăнлантарса пани пачах та тĕрĕс мар. Халăх творчествипе нумай вĕреннĕ писательсем те усă курнă. Сăмахран, вырăссен аслă поэчĕсем А. С. Пушкин, М. Ю. Лермонтов, Н. А. Некрасов тата ыттисем те фольклорпа ăста усă курнă, фольклорпа Л. Н. Толстой та, В. Г. Короленко та усă курнă. Анчах вĕсем пурте нумай вĕреннĕ çынсем пулнă. Пирĕн шутпа, Н. Любимов тезисĕ тĕплĕн шухăшласа пăхмасăр «персе янă» тезис.

Критик Н. Шелепин совет саманинче çырнă сăввисене ырлать, мухтать, çав вăхăтрах вĕсем пирки çакăн пек иккĕлле выводсем тăвать: «Ку сăвăсенче лозунгсем çеç пулин те тата вĕсем техника енчен начартарах пулсан та, Н. И. Полоруссов-Шелепи вулакансен ăсне пуянлатма нумай панă, нумай пулăшнă» (136 стр.). Е тата: «Тÿрех каламалла, унăн ку тапхăрта обществăлла тематикăпа çырнă произведенийĕсем тухсах кайман, çапах та вĕсем ĕççыннисен ăс-тăнне çивĕчлетес тĕлĕшпе нумай усă панă» (137).

Çакнашкал примитивла тезиссемпе выводсем вулакансене пăтраштарма çеç пултараççĕ. Шел пулин те, Н. Любимов статьинче ун пек тĕрĕс мар шухăшсем тата та пур. Çапла ĕнтĕ, критик поэтăн революци хыççăнхи творчествине çутатса парас тĕллеве пурнăçа кĕртеймен.

Юлашки çулсенче поэзи ыйтăвĕпе пичетленсе тухнă ытти статьясене илес пулсан, кунта П. Хусанкайпа Я. Ухсай творчестви çинчен çырнă критикăлла статьясем пирки кăштах чарăнса тăма тивет.

Кăçал П. П. Хусанкай творчестви çинчен икĕ пысăк статья тухрĕ: пĕри вăл—М. Я. Сироткинăн «Чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай» ятлă статьи («Тăван Атăл», 51-мĕш кĕнеке); тепри—Н. Петровăн «Поэт çулĕ» ятлă статьи («Ялав», 3-мĕш №, 1954 ç.).

М. Я. Сироткин статьинче П. Хусанкайăн—пирĕн вăхăтри паллă чăваш поэчĕсенчен пĕрин—литературăри вăтăр çул хушшинчи пархатарлă ĕçне çутатса панă. Автор хăйĕн умне пĕр паха тĕллев лартнă: вăл—П. П. Хусанкайăн творчествине тĕпчесе тухасси, поэт социализмла реализм методне мĕнле вĕренсе пынине, çав методпа мĕн тери ăнăçлăн ĕçленине кăтартса парасси. Пирĕн шутпа, ку задачăна критик татса панă, поэтăн пуян творчествине лайăх тишкерсе тухнă.

Коммунистсен партийĕ, пĕтĕм совет литературине ертсе пырса, чăваш литературине те аталанма пулăшнă, тĕрĕс çул кăтартса пынă. Ку вăл содержанийĕпе социализмла, формипе нацилле культура çулĕ, пролетарилле, социализмла литература çулĕ пулнă. Класс тăшманĕсене çак çул килĕшмен, унăн тĕрлĕ агенчĕсем—троцкистсем, бухаринецсем, буржуалла националистсем—Коммунистсен партийĕн политикине хирĕç темле майсемпе те кĕрешсе пăхнă. «Чăваш буржуазийĕпе кулакĕсен идеологĕсем,—тет М. Сироткин юлташ,—хăйсен шухăш-кăмăлне ĕçхалăхĕ хушшине литература урлă сарас ĕмĕтпе, чăваш писателĕсене тĕрĕс çултан пăрса яма тăрăшнă; вĕсене совет йĕркипе аталанса тĕрекленекен пурнăçа ĕненми тăвасшăн пулнă, чăвашсене аслă вырăс халăхĕнчен пистерме хăтланнă, ĕçхалăхне чăваш çĕршывĕ экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен хăйне уйрăм буржуалла çулпа аталанса пыма пултарать, тесе илĕртме пăхнă».

Пирĕн Хусанкай шăпах ĕнтĕ çак вăхăтра литературăна килсе кĕрет. Малтанхи сăввисенчен пĕринче вăл камшăн ĕçленине, кама мухтанине уççăнах каласа пĕлтерет:

Çÿлерех çĕклен  
Ирĕк мăлатук!  
Сана хĕсĕрлен  
Урăх чĕрлес çук.

Çак кăшт абстрактлăрах сăвăра поэт çулĕн пуçламăшĕ те, малашлăхĕ те палăрса тăнă. «Ирĕк мăлатук» вăл—Аслă Октябрьте пусмăр тĕнчине тĕп тунă, тĕнчен ултăмĕш пайĕнче капитализма аркатса тăкнă, влаçа хăй аллине илнĕ пролетариат сăнарĕ пулнă. Ку сăвва чăваш ĕççыннисем пысăк хаваслăхпа йышăннă. Ăна вуласа тухсанах, вĕсем чăваш литературинче пысăк талантлă поэт ĕçлеме тытăннине туйса илнĕ.

Буржуалла националистсем хăйсен ирсĕр шухăшĕсене литературăра та сарма тăрăшнă. Çав шухăшсенчен хăшĕ-пĕрисем пирĕн çамрăк поэтăн сăввисенче те палăрнă. Çакна пула Хусанкайăн идеологи тĕлĕшĕнчен сиенлĕ «Хури», «Поэтпа миссионер», «Сона» йышши сăвăсемпе поэмăсем тухнă, кайрантарахпа çавăн пек шухăшсен юлашкисем «Саркел» поэмăра сисĕннĕ.

Поэт, çапах та, ирĕк мăлатук шухăшне пĕрмаях асра тытнă, чĕрере усранă. Çак шухăш ăна Коммунистсен партийĕн ретне илсе пынă.

Çакăн пек (е çакăн пекрех) ĕнтĕ М. Я. Сироткинпа Н. П. Петров статьисен тĕп шухăшĕ.

Анчах М. Сироткинпа Н. Петров статьисенче хăшпĕр çитменлĕхсем те палăраççĕ. М. Сироткин статьи темшĕн вырăсларан пĕр-пĕр пуклак чĕлхеллĕ тăлмач куçарнă статья пек туйăнать. Акă, сăмахран, пĕр-ик тĕслĕх: «...Чăваш халăхĕ хăйĕн совет формиллĕ государствăллă пурнăçне аталантарса, çирĕплетсе пынă, наци формиллĕ социализмлă культурине çĕклес тĕлĕшпе ĕçленĕ» (134 стр.). Ку сăмахсене темле чĕлхене мăкăлтаса çырнă (тĕрĕссипе каласан: начар куçарнă!). Çавăнпа та вĕсене ăнланса илме питех те йывăр. Тепĕр вырăнта тата: «Типлă çын сăнарĕ уйрăм йĕрсем çине пайланса вакланнипе произведенири геройсен сăнĕ чухăнланса, сăнсăрланса (?) юлать», тенĕ (140 стр.). Каллех ăнланма йывăр пуплев! Эпир литературăра çĕнĕ терминсем: «сăн», «сăнар», «сăнлăх», «сăн-сăпат» тума тăрăшатпăр-çке, анчах кунта «сăнсăрланса» сăмах, çав терминсенчен пăрăнса, хăйĕн чăн-чăн пĕлтерĕшĕпе тухса тăнă. (Н. И. Ашмарин ăнлантарнă тăрăх: сăнсăр—безобразный, бесстыжий).

М. Сироткин юлташ статьи çакăн пек сăмахсемпе вĕçленет: «Малтанхи çулсенчи идейăлла йăнăшсенчен уйрăлса пырса, илем енчен хăй пултарулăхне ÿстерсе пырса, поэт çапла идейăпа политика тĕлĕшĕнчен аталанса тĕрекленет, **ăсталăх тĕлĕшĕнчен социализмла реализм методне ытларан та ытла алла илсе пырать»** (157 стр.). Пирĕн шутпа, çак пуплеве автор (е куçаракан) тĕрĕсех çырайман: унта социализмла реализм меточĕн пĕлтерĕшне кăштах ансăрлатнă. Пирĕн шутпа, социализмла реализм методне алла илни вăл—пĕр вăхăтрах ăна мировоззрени (ăнлану, шухăш) тĕлĕшпе, ăсталăх тĕлĕшпе алла илнине пĕлтерет, мĕншĕн тесен социализмла реализмăн никĕсĕ—пурнăçа тĕрĕс ăнланса, тĕрĕс кăтартса парасси пулать; ку вăл социализмла реализм меточĕн философилле никĕсĕ марксистла-ленинла мировоззрени принципĕсемпе уйрăлми тачă çыхăнса тăнине пĕлтерет. А. А. Жданов совет писателĕсен Пĕтĕм Союзри Пĕрремĕш съездĕнче çакăн пек каланăччĕ: «...илемлĕ произведенин чăнлăхĕпе историлле конкретлăхĕ ĕççыннисене идея тĕлĕшĕнчен урăхлатас, социализмла воспитани парас задачăпа çыхăнса тăмалла. Илемлĕ литературăпа критикăн çакăн пек меточĕ шăпах эпир социализмла реализм меточĕ тени пулать».

Н. Петров çырнă «Поэт çулĕ» статьян, пирĕн шутпа, пĕр пысăк çитменлĕх пур. Унта, танлаштарарах калас пулсан, «çӳпĕллĕ вырăнсем» сике-сике тухаççĕ. Акă, сăмахран, темиçе тĕслĕх. «Вăтăрмĕш çулсенче пĕтĕм совет ĕçхалăхĕ, империализм вăрçипе граждан вăрçине пула юхăнса пĕтнĕ халăх хуçалăхне ура çине тăратма тăрăшнă хыççăн, ырми-канми тар юхтарса ĕçленĕ, çĕршывра талкăшпех социализм çĕнтерсе пынă»,—тет Петров. Кунта «халăх хуçалăхне ура çине тăратнă тапхăр» 30-мĕш çулсенче пулнă пек тухать («вăтăрмĕш çулсенче» тени тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен халăх хуçалăхне ура çине тăратнă тапхăр—вăл 1921—1925 çç.). Тата çакна асăрхаттармалла: совет халăхĕ çав тапхăрта мĕнле тăрăшнине «ырми-канми... ĕçленĕ» тени те лайăх кăтартса парать, «тар юхтарса» тени ытлашши сăмах, вăл—чĕлхе «çӳппи». Автора «тар» сăмах уйрăмах килĕшет пулмалла. Тепĕр çĕрте вăл ку сăмахпа акă мĕнле усă курать: поэзи Хусанкайшăн «кăмăл хăвачĕ, чĕре сасси, ăс тарĕ (!)», тет (çак статьярах «поэзи—чĕре уççи» тени те пур). Кунта поэзи пĕлтерĕшне, тĕрĕссипе каласан, ансăрлатса янă, янăравлă сăмахсем каласа, унăн обществăлла пĕлтерĕшне витсе хунă.

Поэзи вăл пĕр вăхăтрах «кăмăл хăватне» те, «чĕре сассине» те, халăх шухăш-кăмăлне те, халăх сассине те пĕрлештерсе тăрать, палăртса парать; чăн-чăн поэт творчествинче поэтăн хăйĕн шухăш-кăмăлĕ, хăйĕн ĕмĕчĕпе сасси халăх ĕмĕчĕпе, кăмăлĕпе, шухăшĕпе пĕрлешсе каять, синтез пулса тăрать. Çакăнта ĕнтĕ поэзин вăйĕ, çакăнта ĕнтĕ чăн-чăн поэтăн çынсен кăмăлне, чĕрине хускатакан вăйĕ, унăн обществăри вырăнĕ,— урăхла пулсан, поэт типĕ хăйăр çинчи йывăç пек: вăл ниçтан та нӳрлĕх илеймест, унăн тымарĕсем типсе хăраççĕ, çулçисем сарăхса каяççĕ.

Пирĕн литературăри критикăлла статьясен шайне кăтартса парас тесе, Н. Петров юлташăн статьинчен тата тепĕр тĕслĕх илер-ха. Критик хăйĕн статьин пуçламăшĕнче П. Хусанкайăн 1924 çулта çырнă «Ĕç çинче» ятлă сăввине тишкерсе тухать. Поэтăн çак сăввинче пĕтĕмпе те 12 йĕрке кăна:

Шурăмпуç сенкерĕ
Хыпнă мал енне.
«Тăрах, ачам!» теейрĕн
Мана эс, анне.

Тăрса ура сырайрăм,
Çурăм питĕме,
Йĕс турапа турарăм
Хура çӳçĕме.

Хурçă çурла çакайрăм
Хулпуççи çине.
Хире тухса эп кайрăм—
Ыраш пуссине.

Ку сăвă çинчен Н. Петров: «пирĕн умма социальнăй пурнăçран илнĕ тарăн шухăшлă ӳкерчĕк тухса тăрать», тет. Унтан вара çав «ӳчерчĕке» анализ тума тытăнать: «Умра колхозсем пуçланас умĕнхи ял пурнăçĕ,—тет вăл.— Çутăлман-ха, шурăмпуç мал енне хыпса илнĕ кăна. Акă амăшĕ ачине вырма кайма вăратать (çакна критик сăвва илсе кăтартас умĕн те каласа панă.— В. Д.). Хăйĕн ачине вăл, ăшă ыйăхпа тутлăн çывăраканскере, тăванла юратса, чунтан хĕрхенсе «тăрах, ачам» тет (тăр ĕнтĕ! темест). Пĕр хут кăна мар, икĕ хут кăна та мар вĕсем çапла, хулпуççи çине çурла çакса, иккĕшĕ хире тухса каяççĕ те яра кун тар юхтарса ĕçлеççĕ. Кунта ачан ашшĕ çукки çинчен пĕр сăмах та каламан, çапах та эпир çав ача çурма тăлăх иккенне, вăл пĕртен-пĕр амăшĕпе пурăннине тавçăрса илетпĕр. Сăвва вуланăçемĕн пирĕн умма **мĕскĕнле пурнăçăн мĕскĕнле шăпи тухса тăрать».**

Критик çырнинчен эпир мĕн куратпăр-ха? Критик сăвва цитата вырăнне илет, çав вăхăтрах тата сăвă шухăшне хăйĕн сăмахĕсемпе икĕ хутчен каласа парать. Вăл, сăвă шухăшне малалла «аталантарса», ачапа амăшĕ темиçе хут уя тухса кайни çинчен, «тар юхтарса ĕçлени» çинчен калать, анчах ку сăмахсем пĕтĕмĕшпе калана сăмахсем. Çавăн пекех «Ĕç çинче» сăвăран «мĕскĕнле пурнăçăн мĕскĕнле шăпи» те тухса тăмасть, вăл унта ниçтан та курăнмасть. Çаксем, тĕрĕссипе каласан, сăвва тĕпчемесĕр, сăвăран пăрăнса кайса, ахалех тунă выводсем.

Малалла Н. Петров поэт ăсталăхĕ пирки калана май тепĕр вывод тăвать: «Хусанкайăн малтанхи сăввисенчех поэт хăйне кăна тивĕçлĕ сасăпа калаçма тăрăшнине сисетпĕр», тет.

Пирĕн шутпа, «Ĕç çинче» сăвăра Хусанкайăн «хăйне кăна тивĕçлĕ» сасси илтĕнмест-ха. «Ĕç çинче» сăвă пирки сăмах хускатнă май, критик ăна мĕнле тишкернине кăтартса парас тесе, çакна асăрхаттарас килет: «Ĕç çинче» сăвва вуласа тухсанах эпир Çеçпĕл Мишшин «Ака çинче» ятлă сăввине аса илтĕмĕр:

Кăвак-çут кăваккăн, кăвак кантăк витĕр
Сарă сĕтел урлă урайне ӳксен—
Атте «тăрах» терĕ, ыйхăран вăрантăм,
Карăнса эп тăтăм ăш тӳшек çинчен.

Çак икĕ сăвă хушшинче, пирĕн шутпа, творчествăлла çыхăну пурах: иккĕшĕ те пĕччен хресченсен уй-хирти ĕçĕ çинчен çырнă сăвăсем; унта сăмахсем тĕлĕшпе те пĕр пек вырăнсем сисĕнеççĕ, тĕслĕхрен, «тăрах» тенĕ сăмахсем иккĕшинче те пĕр пекех янраççĕ (критик тем калас шутпа: «Тăр ĕнтĕ! темест», тесе илет?); П. Хусанкай: «çурăм питĕме», тет (Çеçпĕл сăввин малалли йĕркисенче: «çăл шывĕпе пит çурăм», тенĕ); Хусанкай: «Хире тухса эп кайрăм», тет. (Çеçпĕл: «Акă аттепе тухса кайрăмăр акана», тенĕ).

Çак параллельсене эпир мĕн пирки кăтартрăмăр-ха? Вĕсене эпир «Ĕç çинче» сăвă—вĕренмелле çырнă сăвă, унта поэт сасси уçăлсах çитеймен. «Ĕç çинче» сăвă—поэт камран вĕреннине кăтартакан паха тĕслĕхсенчен пĕри. Паллах, вĕренмелле çырнă произведени тăрăх поэтăн ăсталăхĕ пирки калама хĕн. Куратăр-и, критикăн тепĕр вывочĕ те тĕпчемесĕр тунă вывод пулни курăнать! Çапла ĕнтĕ, критикăн яланах произведенире мĕн пуррине тĕпчемелле, ним те шухăшласа кăлармалла мар,— урăхла пулсан, «ăс тарĕ» вырăнсăр юхать.

«Тăван Атăл» альманахра пичетленнĕ хăшпĕр статьясенче пирĕн уйрăм писательсем пĕр-пĕрин ĕçне вырăнсăрах тиркеме пăхни курăнать. Кун пек **статьясен** шутне Илья Тукташ çырнă «Ухсайăн «Кĕлпук мучи» поэми çинчен» ятлă статьи кĕрет («Тăван Атăл», 42-мĕш кĕнеке). Унта поэмăн чăн-чăн çитменлĕхĕсене юлташла кăтартса парас вырăнне тем те пĕр шухăшласа кăларнă. Автор Ухсай поэмине çакăн пек каласа тиркет: «халăх пурнăçĕнчи чи пысăк событисем çинчен Ухсай пĕр сăмах шарламасăр иртсе кайма тăрăшать»; «вулакана пурнăçри тĕп ыйтусенчен пăрса ярать» (149 стр.); «граждан вăрçи картинисене... çăмăлттайлăн, ним ответсăррăн сăнласа» панă, «ку вăл—писателĕн политикăлла йăнăшĕ, тимсĕрлĕхĕ» (151); «произведенин идейăлла шайĕ питех те аялти пусăмра тăрать, кунтан та ытларах,— автор ку кĕнекере сиенлĕ шухăшсем сарать» (157) тата ыт. те.

Çак тĕслĕхсем эпир мĕн калас тенине хăйсемех калаççĕ: критик вĕсене поэта мĕн май килнĕ таран тиркес, хурлас, айăплас тесе çырнă,—çакăн пек вĕсен тупсăмĕ.

И. Тукташ юлташ поэмăри «политикăлла йăнăшсем» çинчен калать. Çав «йăнăшсем» çинчен «Советская Чувашия» хаçатра Н. Любимов критик та çырчĕ. Анчах мĕнле «йăнăшсем-ха» вĕсем?

Акă, критиксем калана тăрăх, çав «йăнăшсенчен» хăшĕ-пĕрисем.

**И. Тукташ кăтартса панă «йăнăш»**: «Мĕн ытларах интереслентерет поэта? Кĕлпук кĕпепе çуралнă,—ку Ухсайшăн пысăк факт, вăл ун çинчен ик-виç страница çырса каять. Кĕлпукăн кăвапи çухалнă,— ку та Ухсайшăн пысăк факт, каллех тем тăршшĕ çырса каймалла. Кĕлпукăн сухалли кăвапа таран ӳснĕ, вăл старшина пулма тивĕç, патшапа юнашар ларса сăн çаптарма пултарать,— каллех поэтшăн пысăк факт, каллех вăл кун çинчен аллăшар йĕрке çырса каять. Кĕлпук тĕлĕкре патшана ларать (сăмах май каласан, çак самантра та вăл пурнăçри чи çивĕч ыйтусене— пусмăр тĕнчине тĕп тăвассине епле майпа пурнăçламаллине кăтартса параймасть)—каллех поэтшăн чăн-чăн событи!» (149 стр.).

**Н. Любимов кăтартса панă «йăнăш»**: «Поэта больше всего интересуют такие маловажные мелочи, как, например, то, что Кельбук родился в сорочке—это для поэта большой факт, и ему посвящены в книге две-три страницы. И кража сорочки также для Я. Ухсая большое событие—ему посвящено целых девять строф... Любуется поэт и длинной бородой деда Кельбука («хоть сейчас же садись он рядом с царем и фотографируйся»).... Дед Кельбук во сне становится царем—и это занимает целую главу в книге. Автор и здесь не сумел разрешить стоявший в то время перед трудящимися вопрос о путях уничтожения царизма и построения справедливого, социалистического общества».

Пире кунта, ыттисемсĕр пуçне, каллĕхе акă мĕн тĕлĕнтерет: çак критиксем мĕнле майпа пĕр пек шухăшлама, пĕр пек çырма, поэта пĕр пек айăплама пултарнă-ши?

Çапах та, Ухсай йăнăшĕ ăçтаха? Критиксем калана тăрăх, Кĕлпук, тĕлĕкре патшана ларнă пулин те, пусмăр тĕнчине мĕнле майпа тĕп тумалли, социализмла общество тумалли çулсене кăтартса параймасть.

Пусмăр тĕнчине тĕп тăвакан, социализмла общество тумалли çулсене кăтартса паракан патша хăçан та пулин историре пулнине никам та курман та, илтмен те, анчах критиксем «Кĕлпук патшана» (тĕлĕкре патшана «тухнă» хресчене) «пусмăр тĕнчине тĕп туманшăн» айăплаççĕ, çакăнта вĕсем поэтăн йăнăшне кураççĕ.

Истори тата акă мĕн кăтартса парать: хресченсем хăйсен пусмăрçисене хирĕç кĕрешнĕ чухне, чăнах та, «хресчен патши» çинчен ĕмĕтленнĕ, «лайăх патша» тупасшăн пулнă. Çакăн пек ĕмĕтшухăш Степан Разин, Емельян Пугачев восстанийĕсене хутшăннă хресченсен те пулнă. И. В. Сталин калана тăрăх, хресчен восстанийĕсен çулпуçĕсем Разинпа Пугачев помещиксене хирĕç пынă, анчах «лайăх патшашăн» тăнă (вĕсем «царистсем» пулнă)[1]. Анчах хресченсен восстанийĕсем, вĕсене ертсе пыракан Разинпа Пугачев пек çулпуççсем тем пек тăрăшсан та, хăйсен тĕллевне вĕçне çитиех пурнăçа кĕртме пултарайман. Хресченсен восстанийĕсем рабочи класс ертсе пырсан çеç ăнăçлă пулма пултараççĕ, анчах ун чухне рабочи класс, унăн партийĕ пулман.

Ухсай поэминчи «хресчен патши»—хресченсен çав ĕмĕтне кăштах сăнласа пани çеç. Кĕлпук тĕлĕкре кăна «патша» пулма пултарнă. Критиксем хресчен «патшине» (çитменнине тата тĕлĕкри патшана) социализмла общество тутарасшăн. Çакă вăл чăннипех те кулăшла япала. Тĕрĕссипе каласан, кунта поэтăн нимле йăнăш та çук, критиксем хăйсем йăнăшаççĕ.

И. Тукташпа Н. Любимов: «Ухсай хăй поэминче иртнĕ **ĕмĕр вĕçĕнчи** чăваш ялĕ çинчен çырать. Ку тапхăрта Российăра, çав шутрах чăвашсем хушшинче те, **капитализм аталанма тытăннă.** Хресченсем ытларан та ытларах **сийленме пуçланă** (курсив пирĕн.— **В. Д**.). Кулаксем чухăнсемпе батраксене эксплуатацилесси вăйланнă. Чухăнсен çĕрĕсем ытларан та ытларах çĕрме пуянсен аллине куçнă. Ялта класс кĕрешĕвĕ çивĕчленсе пынă. Чухăнсем çĕр улпучĕсемпе кулаксене хирĕç аллисене сенĕксемпе çавасем, пуртăсемпе рычаксем тытса çапăçнă. Пĕтĕм çĕршыв тăрăх пирвайхи вырăс революцийĕн хумĕсем сарăлса пынă.

Çак тĕп ыйтусенчен пĕрне те Ухсай Яккăвĕ хăй произведенийĕнче çивĕччĕн кăларса лартман...» — теççĕ (148 стр.).

Ку сăмахсене чăн-чăн истори енчен, йĕркеллĕ логика енчен пăхса тухсан, каллех поэт йăнăшĕ мар, критиксен йăнăшĕ курăнать. Российăра капитализм XIX ĕмĕр вĕçĕнче мар, унччен малтанрах аталанма тытăннă. Маркспа Энгельс калана тăрăх, Российăшăн XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш пайĕ пĕтĕмĕшпех капитализм аталаннипе палăрса тăрать. Çак процеса В. И. Ленин хăйĕн «Российăра капитализм аталанни» ятлă кĕнекинче питех те тĕплĕн кăтартса панă. Российăра капитализм аталаннине народниксем çеç курман, мĕншĕн тесен вĕсем чăнчăн историе пĕлмен, ăнланман, хăйсен идеалистла теорийĕсене пула, ăнланма та пултарайман.

Хресченсем те нумай малтан

[1] И. В. Сталин. Сочиненисем, 13 том, 113 стр.

çийленме пуçланă. Хуласенче рабочисен йышĕ ÿснĕ. Класс кĕрешĕвне рабочисем ертсе пыма тытăннă. Çĕршывра революци аталанса пынă, анчах вăл 1905—1907 çулсенче çеç пулса иртнĕ (çавăнпа та çак вăхăтчен унăн хумĕсем «пĕтĕм çĕршыв тăрăх... сарăлма» пултарайман).

Çак процесс, урăхла каласан, чăвашсем хушшинче капитализм аталанни, пĕтĕм Российăра капитализм аталаннипе çыхăнса тăрать. Чăваш халăхĕ пур тĕлĕшпе те Россия çулĕпех пынă; вăл Россия варринче, Россия халăхĕсен йышĕнче пулнă май, унăн Россия çине тапăнса килнĕ тăшмансене хирĕç те вырăс халăхĕпе пĕрле, Российăри ытти халăхсемпе пĕрле, кĕрешмелле пулнă. Вырăс халăхĕн тулашри тăшманĕсем (çав вăхăтрах) Российăри ытти мĕнпур халăхсен тăшманĕсем пулнă; вырăс халăхĕн шалти тăшманĕсем (патша йĕрки, помещиксем, капиталистсем, халăх ĕнси çинче ларакан тĕрлĕ йышши чиновниксем, пупсем тата ыт. те) чăвашсемшĕн те хаяр тăшмансем пулнă. Пирĕн халăха яланах паттăр вырăс халăхĕ пулăшнă, вăй панă, хавхалантарнă. Халăхсен çак пĕрлехи кĕрешĕвне, кун-çулне, вĕсен пурнăçĕн пĕрлехи процесне эпир яланах палăртатпăр, палăртма тивĕç те.

Çакна эпир 1905—1907 çулсенчи революци историйĕнчен аван куратпăр: вырăс халăхĕ хăйĕн шалти тăшманĕсене хирĕç кĕрешĕве çĕкленсен, пирĕн çĕршыври ытти халăхсем те революцилле кĕрешĕве хутшăннă; революцин хăватлă хумĕсем чăвашсем хушшинче те сарăлса кайнă. Российăна çакăн патне унăн халăхĕсен паттăр вăйĕ çултан-çул ÿссе, çитĕнсе пыни илсе çитернĕ. Кĕрешÿ пуçĕнче, революци пуçĕнче рабочи класс тăнă.

Я. Ухсай хăйĕн «Кĕлпук Мучи» поэмине çырнă чухне çак ыйтусене ятарласах çутатса парас тĕллеве тытса пыман (вĕсем уйрăм кĕнеке çырмалли тема пулса тăраççĕ). Çавăнпа та Ухсая поэмăра çырман япаласемшĕн ятлани вырăнсăр япала пулса тăрать. «Ку çук та, вăл çук», тесе критиклени—юрăхсăр меслет. Произведение тишкернĕ чухне унăн пахалăхне, чăн-чăн çитменлĕхĕсене тĕпчесе кăтартас пулать, автора пулăшас тĕллевпе ĕçлес пулать, мĕнле те пулин «критикăлла стандарт», мĕнле те пулин вилĕ шаблон е канон шухăшласа кăлармалла мар. Критиксен чăн-чăн пурнăçа лайăххрах пĕлмелле, астусах тăмалла: пурнăç йывăçĕ, поэт калашле, вăл ĕмĕрех чĕрĕ, ĕмĕрех ем-ешĕл! Поэтсен те, критиксен те пурнăç йывăçне куçран çухатмалла мар, унăн шавне, кĕввине итлемелле; вĕсен юррисенче, статьисенче яланах пурнăç кĕвви, пурнăç сасси илтĕнсе тăмалла.

Альманахăн 50-мĕш кĕнекинче пичетленнĕ Л. Терентьев статьине илес пулсан, тÿрех çапла калас пулать: вăл—нигилистла статья; ăна автора пулăшас тесе мар, унăн нумай çул хушшинче тăрăшса çырнă «Çул» романне пĕтĕмпех тиркесе тăкас тесе çырнă.

«Çул» романа, 1952 çулта Мускавра вырăсла куçарса кăларнăскере, вулакансем хапăл туса йышăнчĕç, центрта тухса тăракан илемлĕ литература журналĕсем ăна паха произведени тесе хакларĕç. Сăмахран, «Знамя» журналта К. Северова критик «Çул» çинчен çакăн пек çырать: «Шолоховпа Твардовский, Ставскипе Панферов, Лордкипанидзепе Стельмах, Лацис, Саксепе Леберехт произведенийĕсем пирĕн литературăри чи паха произведенисен шутне кĕчĕç, вĕсене совет вулаканĕсем лайăх пĕлеççĕ. Çав произведенисен ретне Яков Ухсай кĕнеки те кĕрет... «Çул» поэма—социализм вăхăтĕнчи пурнăçăн чĕрĕ туйăмĕпе хавхаланса çырнă произведени, вăл унăн авторĕн ÿсĕмне çеç мар, тата пĕтĕм чăваш совет литературин ÿсĕмне те кăтартса парать».

Анчах «Тăван Атăл» альманах редколлегийĕ, Л. Терентьев çырнă «Яков Ухсайăн «Çул» романĕ статьяна ним сăмахсăр пичетлесе кăларнăскер, ку роман пирки пачах урăхла шутлать пулмалла. Ана, çак поэтăн «Кĕлпук мучи» поэмине «пĕтерсе хунă» пекех, «аркатса тăкнă», автора «йăнăшсем» тунăшăн айăпласа пĕтернĕ.

Статья пуçламăшĕнче Л. Терентьев хальхи вăхăтра сăвăлла роман çырма юранипе юраманни çинчен «философилеме» шут тытнă. «Пирĕн вăхăтра,—тет критик,—сăвăлла роман çырасси чăнах та пит хăюллă та кăштах тĕлĕнтерекен ĕç ĕнтĕ. Юлашки вăхăтра сăвăллă роман çырмалăх пултарулăхпа тÿсĕм тупакан поэтсем вырăс литературинче те курăнсах каймаççĕ-ха». Мĕншĕн çавăн пек-ши? Мĕншĕн тесен ăна генилле Пушкин çеç çырма пултарнă. Çапла «философла» калаçкаланă хыççăн автор тĕрлĕ влиянисем пирки çырма тытăнать. Вăл каланă тăрăх, Ухсай романĕ форма енчен А. С. Пушкинăн «Евгений Онегин» романĕ пек, содержани енчен М. Шолоховăн «Уçнă çерем» тата А. Твардовскин «Мурави çĕршывĕ» произведенийĕсене аса илтерет. Çапла вара, критик «Çул» роман авторĕн творчествăри хăйне евĕрлĕхне пачах та курмасть, ăна унтан-кунтан тĕрлĕ татăксем пухкаласа çыракан поэт туса хурать. Хăй çав вăхăтрах ку роман «тухни... çинчен... тĕплĕн калаçмасăр ирттерсе яма ниепле те май çук» тет, анчах унăн статьинче, чăннипе илсен, пĕр ыйту пирки те тĕплĕн калаçни çук.

Критик, романăн содержанине кăштах каласа панă хыççăн, поэта романри геройсем пирки айăплама тытăнать, пуринчен ытла Павăл ятлă герой пирки вăрçса çырать. Поэта вăл: Павăл «ытла та ăслă», тесе айăплать. «Чăнах та,—тет вăл,—мĕн кăна пĕлмест пуль Павăл: тракторсен ĕçне пĕлет (трактористсен ĕçне темелле пулнă мĕн.—В. Д.), вырăсла та пит лайăх калаçать..., вăлах пултаруллă организатор, принциплă коммунист, вăйлă теоретик. Хăш вăхăтра тата ăçта вĕреннĕ вăл?» Юлашкинчен вара, критик: «романри герой чĕрĕ çын мар, этемĕн чи лайăх пахалăхĕсен пуххи çеç», тесе хурать (118 стр.).

Çакăнта илсе кăтартнă йĕркесен тĕп шухăшĕ мĕнле-ха? Вĕсен тĕп шухăшĕ çакăн пек: геройăн «чĕрĕ çын» пек пулас пулсан, йăнăшсем тумалла, унăн чунне яланах темскер ыраттармалла, чĕрине темскер пĕрмаях вăркатса тăмалла,—çакăн пек пулсан çеç вăл «тулли» герой пулма пултарать. Тĕрĕссипе каласан, Л. Терентьев кунта «положительнăй героя» хирĕç пырать, пирĕн пурнăçра пур тĕлĕшпе те малта пыракан рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем, çамрăксем, лайăх герой пулма тивĕçлĕ çынсем пулма пултараймаççĕ, тесе ĕнентерме тăрăшать. Паллах, кун пек шухăшпа килĕшме çук: совет çыннисем хушшинче çавăн пек пур тĕлĕшпе те лайăх çынсем, Тăван çĕршывшăн, халăхшăн, государствăшăн, партишĕн чун-чĕререн тăрăшса ĕçлекен патриотсем, темĕн чухлех. Пирĕн çĕршывра Корчагин, Мересьев, Воропаев, Тĕркин, Зоя Космодемьянская, Олег Кошевой, Уля Громова, Сергей Тюленин, Любовь Шевцова, Иван Земнухов тата ытти геройсем совет çыннисемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче тăраççĕ. Ун пек çынсем пирĕн тата та нумай. Çакăн пек совет çыннисене, вĕсен ĕçĕсене писательсен хăйсен произведенийĕсенче кăтартса памалла,—акă мĕнле задача тăрать пирĕн литература умĕнче.

«Положительнăй герой», ырă тĕслĕх паракан герой, паллах, çитменлĕхсемсĕр çын сăнарĕ мар, вăл пачах та йăнăшман çын сăнарĕ те мар. Сăмахран, «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» романăн тĕп геройĕ Павел Корчагин—ырă тĕслĕх паракан герой пулни пуриншĕн те паллă, совет çамрăкĕсем Корчагинран ырра вĕренеççĕ, çирĕп шухăшлă пулма, паттăр пулма вĕренеççĕ. Павел Корчагин чăнчăн пурнăçран илнĕ герой, вăл чĕрĕ çынсем пекех. Корчагинăн çитменлĕхсем те пулнă. Ытларах та çак хастар çамрăкăн, паллă геройăн пуçне хăшпĕр самантсенче «хăрăвçăлăх» шухăшĕсем те пырса кĕркеленĕ. Çакна пула вăл хăйне хăй вĕлересси çинчен те шухăшласа пăхнă. Анчах çавăн пек шухăшсем унăн пурнăçĕнче, унăн характерĕнче тĕп вырăнта тăмаççĕ. Унăн характерĕнче тĕп вырăн йышăнаканни—вăл йывăрлăхсене çĕнтерсе пыни, ĕçре, кĕрешÿ çулăмĕнче ÿсни, тĕреклени, халăх интересĕсемшĕн, Тăван çĕршыв кун-çулĕшĕн малти ретре тăрса кĕрешни. Н. Островский хăйĕн кĕнекинче паттăр совет çамрăкĕсен сăнарне панă, вĕсен çирĕп характерне, ĕмĕчĕсене уçса кăтартнă. Çапла ĕнтĕ, пĕтĕм халăх ĕçĕнче, кĕрешÿре ÿсекен, йывăрлăхсене çĕнтерсе пыракан, тăшмансене хĕрхенмен, пуласлăхшăн, çитес çутă кунсемшĕн, коммунизм идеалĕшĕн хăйне те, хăйĕн пурнăçне те шеллемен çынсен паллисене, вĕсен характерĕсене пĕрлештерсе тăракан герой — вăл шăпах ырă тĕслĕх кăтартакан герой, совет çыннисем чун-чĕререн юратакан герой.

«Положительнăй герой» ыйтăвне хускатнă май хăшпĕр юлташсем «идеалла герой» тенĕ термин шухăшласа кăларчĕç. Çак термина («теорие» теме те юрать) тĕрĕс ăнланас пулсан, вăл çакна пĕлтерет: «идеалла герой»—ырăран та ырă, пахаран та паха, тасаран та таса, ăслăран та ăслă «герой» иккен. Тĕрĕссипе каласан, вăл пачах та ÿсмест, йывăрлăхсемпе те кĕрешмест: вăл мĕнле пулнă—çавăн пекех юлать. «Литература хаçатĕнче» Б. Рюриков юлташ питех те тĕрĕс çырчĕ: «идеалла герой»—конфликтсăрлăх «теорийĕ» патне туртакан шухăш; конфликтсăрлăх «теорийĕ» халĕ те литературăра упаленсе çÿреме хăтланать; ку чухне вăл «идеалла герой» тумне тăхăнса тухасшăн.

Чăн-чăн пурнăçран илнĕ геройсем çеç литературăра пурăнма пултараççĕ. Совет литератури—вăл пурнăçа чи туллин, чи тĕрĕс, чи лайăх кăтартакан литература, вăл—чи малта тăракан, чи тарăн шухăшлă, чи пуян литература. Унăн геройĕсем—çĕнĕ самана геройĕсем, паттăр çынсем, коммунизм тăвакан çынсем.

Малалла тата акă мĕн асăрхаттармалла: Павăл çинчен вăл «хăш вăхăтра тата ăçта çакăн пек вĕреннĕ?» тенипе критик автора натурализм çулĕ çине тĕртет, урăхла каласан, геройăн кашни утăмне, кашни ĕçне, ĕнер, паян мĕн тунине, ăçта вĕреннине, ăçта вĕренменнине тата ыттине те çырса пама хушать. Ку вăл типизаци çулĕ мар, мĕншĕн тесен типизаци çулĕ геройăн паллă, характерлă, типлă ĕçĕсене илме, вĕсене сăнласа пама, хаклама хушать, малта пыракан идейăсен çуттинче кăтартма хушать. Социализмла реализм литератури ĕнтĕ шăпах çавăн пек тăвать.

«Çул» романра илсе кăтартнă «ялта кулаксем çук», «класс кĕрешĕвĕ çук», тет Л. Терентьев (118 стр.). Çавăнпа имĕш «унта хресченсем колхоза чăрмавсăр тата мирлĕн кĕреççĕ» (119 стр.).

Вулакансем вара пачах урăхла калаççĕ: «Ухсай коллективизаци тапхăрĕнчи чăваш ялĕнчи класс кĕрешĕвне çав тери уçăмлăн сăнласа парать»,—тесе çырать Красноярск крайĕнчен И. Горшков. Ростов облаçĕнче ĕçлекен В. Лебедев агроном: «Автор нумай чăваш хресченĕсен пурнăçĕнче пулса иртнĕ чи чаплă та пысăк событие—вĕсем колхозсене пĕрлешсе çĕнĕ пурнăç çулĕ çине тăнине тĕрĕс те пултаруллăн кăтартса парать», тет. (Ку тĕслĕхсене эпир «Чăваш писателĕсен вырăсла куçарнă кĕнекисем» ятлă статьяран илтĕмĕр. «Коммунизм ялавĕ» 203-мĕш №-рĕ, 13. X. 54 ç.).

Пирĕн шутпа, вулакансем тĕрĕс калаççĕ. Вĕсем литературăна хăшпĕр критиксенчен ытларах ăланни, юратни курăнать.

Вулакансен сăмахĕ — писателе вырăнсăр ырласа тăкас е хуралса пăрахас тесе каланă сăмах мар. Произведени паха пулсан, килĕшсен, вулакан ун çинчен ырă сăмах калать; произведени начар пулсан, килĕшмесен — вулакан кÿренсе çырать.

Пирĕн пурин те чăваш литературин парти çулĕ çинче тăракан критикине, социализмла литература жанрĕсенчен пĕри пулса тăракан марксистла-ленинла критикăна вăйлатассишĕн, унăн теорилле шайне çÿлерех çĕклессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Литература критикин теорилле шайне вăйлатас, çÿлерех çĕклес тесен, критиксен ĕнтĕ ăсталăх ыйтăвне те манмалла мар, писательсен чĕлхи мĕн тери пуян пулнине тĕпчемелле, вĕсен стилĕн уйрăмлăхне кăтартса памалла. Критиксен халăх шухăшне, общество шухăшне палăртмалла, малта пыракан наука вĕрентĕвне ăса илсе ĕçлемелле, Коммунистсен партийĕн кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртсе пымалла.

Халĕ ĕнтĕ чăваш литературинче критика валли мĕн кирли пур те пур, ĕç те çителĕклех. Чăваш прози те, поэзийĕ те аталансах пырать пулсан, драматурги те вăй илет пулсан, критика та вăй илмелле, вăл аталансах, тĕреклленсех пымалла,—эппин шансах тăрар: шăпах çавăн пек пулĕ, пирĕн литература критики авторитетлă та витĕмлĕ пулĕ!

**В. ДОЛГОВ.**

# ЛУ СИНЬ ПРОИЗВЕДЕНИЙĔСЕМ ЧĂВАШЛА

**Китай халăхĕн наци** ирĕклĕхĕшĕн пыракан историллĕ кĕрешĕвĕнче Китайри революциллĕ литература паллă та чыслă вырăн йышăнса тăрать. Революциллĕ литература Китай халăхне йывăр кĕрешӳре çĕнтерӳсем тума хавхалантарса пынă.

Китайри революциллĕ литературăна пуçарса яраканĕ Лу Синь пулнă. Вăл хăйĕн тăван çĕршывĕн нумай ĕмĕрсем хушшинчи историйĕпе культурине тĕпчесе вĕреннĕ, Китай халăхĕн аслă та вилĕмсĕр писателĕсен прогрессивлă традицийĕсене асра тытса малалла аталантарнă Китай халăхĕн нумай ĕмĕрсем хушшинчи историйĕпе культурине пĕлни ăна Китайри революциллĕ искусствăна пуçарса яма май панă, çĕнĕ искусствăна аталанма тĕрĕс çул кăтартса пама пулăшнă.

Лу Синь 1881 çулта Чжецзян провинцине кĕрекен пысăках мар Шаосин ятлă уезд хулинче çуралнă. Лу Синь—писателĕн литературăри ячĕ (псевдоним), унăн чăн ячĕ Чжоу Шу-жэнь пулнă. Лу Синь ятпа писатель 1918 çулта çырма пуçланă, çав çул унăн «Асран кайнă çын çырса пыни» ятлă пĕрремĕш калавĕ пичетленсе тухнă.

Лу Синь литературăра ĕçлеме 1903 çулта пуçланă: вăл «Чжэцзянский прилив» журнал валли статьясем çырнă, Жюль Вернăн «Уйăх çине вĕçни» романне куçарнă тата ыт. те. Малаллахи çулсенче Лу Синь Китай халăхĕн классикла литературине лайăх пĕлекен Чжан Тай-ян ертсе пынипе Китай литературине вĕренме тытăнать, ытти чĕлхесенчен кĕнекесем куçарать, редактор пулса ĕçлет. 1909 çулта Лу Синь «Урăх чĕлхерен куçарнă калавсен» икĕ кĕнекине кăларать, ку кĕнекесене вырăс писателĕсен произведенийĕсем те кĕнĕ.

Лу Синь творчестви Китай историнчи чи паллă юхăм—уйрăмах Япони империалисчĕсене хирĕç пыракан 1919 çулти «Майăн 4-мĕшĕнчи юхăм» умĕн чечекленсе аталанма пуçлать. Çак юхăм, студентсен демонстрацийĕсенчен пуçланса кайса, Китай культурине аталанма çĕнĕ çул уçса панă.

Лу Синь кивĕ общество арканса пынине курнă, «çĕнĕ» общество çинчен ĕмĕтленнĕ, анчах çак «çĕнĕ» общество мĕнле пулмаллине, «çĕнĕ» общество туса хурсан, пурнăç е усал, е лайăх пулассине пĕлмен. «Октябрь революцийĕ хыççăн çеç эпĕ çĕнĕ обществăна тăваканни пролетариат пулнине пĕлтĕм»,—тесе çырать вăл.

Майĕпен вăл, социализм идейисене ăнланса илсе, пуласлăх халь кăна çуралнă пролетариат аллинче пулма тивĕçлине курнă. Лу Синь Китай литературине çĕнĕ шухăшсемпе çĕнĕ сăнарсем кĕртнĕ, литературăна ĕçхалăх пурнăçĕпе çыхăнтарнă, ăна кивĕ тĕнчене аркатакан, пуласлăхшăн кĕрешекен хăватлă хĕçпăшал туса хунă. Лу Синь произведенийĕсенче нумай асап тӳснĕ Китай халăхĕн шухăш-кăмăлĕ палăрса тăрать.

Китайри Коммунистсен партийĕн «Синьхуажибао» хаçачĕ. Лу Синь çуралнăранпа утмăл çул тултарнине палăртса (1936 ç.), çапла çырнă: «Лу Синь— халăх писателĕ. вăл халăх массисем валли çырнă, яланах халăхпа пĕрле пулнă... Лу Синь ячĕ çĕнĕ культура тăвас юхăмăн чаплă ялавĕ пулса тăтăр. Çав ялавпа эпир палăртса хунă тĕллев патне çитме пултаратпăр».

Лу Синь çырнă паллăрах кĕнекесем çаксем: «Йыхрав», «Çухалса çӳрени», «Хир курăкĕсем», «Ашă çил», «Вил тăпри», «Хуагай» тата ыт. те. Асăннă кĕнекесене кĕнĕ повеçсемпе калавсенчен нумайăшне ытти халăхсен чĕлхине куçарнă.

Чăваш АССР государство издательстви нумаях пулмасть Лу Синь калавĕсене чăвашла куçарса кĕнеке туса кăларчĕ. Кĕнекене пĕтĕмпе вуникĕ калав кĕнĕ, вĕсен шутĕнче писателĕн 20—30-мĕш çулсенче çырнă «Кун И-цзи», «Пĕр пĕчĕк ĕç», «Таван ял», «Ялти спектакль», «Хупахра», «Телейлĕ çемье» калавĕсем пур. Калавсенчен нумайăшне çамрăк переводчиксем куçарнă.

Лу Синь произведенийĕсен уйрăмлăхĕ вăл пурнăça пĕлсе тĕрĕс сăнласа панинче. Вĕсене вуласа эпир кивĕ Китайри ĕççыннисен нушаллă пурнăçĕ çинчен пĕлетпĕр. Писатель произведенийĕсем урлă эпир вăл пусмăрта пурăнакан халăха юратнине, ăна шелленине, çĕнĕ пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнине куратпăр.

Чăвашла тухнă кĕнекене кĕнĕ «Кун И-цзи», «Пĕр пĕчĕк ĕç», «Тăван ял», «Ялти спектакль» калавсене вуланă чух писатель кĕскен те чуна тивмелле çырма пултарни, ик-виç сăмахпах сăнарсене уçса пама пĕлни куç умне тухса тăрать. Пурнăçран илнĕ пĕчĕк картинăсем урлă писатель пысăк шухăша уçса парса, çынсен чĕрине хумхантарать. Çакна эпир уйрăмах «Тăван ял» калавра куратпăр. Ку калавра пултаруллă писатель çирĕм çул хушши тăван ялĕнче пулса курман çыннăн шухăш-кăмăлне уçса парать, чухăннăн тата салхуллăн курăнса ларакан ялсене сăнлать, хăйĕн ача чухнехи пурнăçĕ çинчен аса илсе каласа парать. Писатель тăван ялĕнчи пурнăç йĕркисене, йăлисене ĕненмелле çырса кăтартать. Ача чухнехи юлташĕ Жунь-ту çинчен каласа пани вулакансене пĕтĕм чĕререн пăлхантарать. Тинĕс хĕрринче ӳснĕ çивĕч те пултаруллă ачана вулакан малтанах юратса пăрахать, кайран вара, йывăр пурнăç айне пулнă Жунь-туя курса, ăна шеллет. Писатель калавне халăхшăн телейлĕ те ирĕклĕ пурнăç пулма тивĕçли çинчен калакан сăмахсемпе вĕçлет.

«Пĕр пĕчĕк ĕç» ятлă пысăках мар калавĕнче Лу-Синь обществăри чи правасăр рикшан пархатарлă ĕçĕ çинчен çырса кăтартать. Çулпа васкаса пынă чух, асăрхамасăр, рикша пĕр хĕрарăма урапипе таптаса каять Анчах вăл ответ тыттарассинчен хăраса тармасть, çав хĕрарăма, урапа çинче ларса пыракан интеллигента тĕлĕнтерсе, ура çине тăма пулăшать, вара полици участокне леçсе хăварать.

«Мана сасартăк тĕлĕнмелле туйăм çавăрса илчĕ,—тет автор,—çул çинчи тусанпа витĕннĕ рикша кĕлетки ӳснĕ пек туйăнчĕ, манран уйăрălса пынăçем вăл пысăкрах та пысăкрах курăнчĕ... Рикшаран темĕнле вăй тухса тăрать, çак вăй мана пăвать, тарăна пытаннă манăн «пĕчĕк чуна» ăшăмран тĕртсе кăларма тăрăшнăн туйăнать».

«...Çак пĕчĕк ĕç,— вĕçлет писатель калавне,—манăн куç умĕнчен татăлмасть, мана вăтантарать, лайăхрах пулма хушать; вăл мана тĕреклетет, манăн шанăçа çирĕплетет».

«Кун И-цзи» калав Лу Синь çырнă лайăх произведенисенчен пĕри шутланать. Ăна писатель калаври тĕп сăнар ятне панă. Кун И-цзи — арканса пыракан феодальнăй стройри пурнăçран юлнă интеллигентăн типĕ, вăл кулăшла, вăйсăр, телейсĕр çын. Ун чухнехи пурнăç йĕркисем ăна çĕр çумнех лăпчăтса хунă, вăл никамран та пулăшу кĕтме пултараймасть. Çавăнпа Кун И-цзи хăйĕншĕн тата хăй пек ытти çынсемшĕн кĕрешесси пирки, тискер пурнăç йĕркисене хирĕç тăрасси пирки шухăшласшăн та туйăнмасть. Анчах вулакан Кун И-цзийĕн тата унăн шăпинех кĕтекен ытти çынсен пек пурнăç яланах пулма пултарас çуккине, пурнăçра улшăну пулма тивĕçлине туять.

Писателĕн кашни калавĕнче хĕн-хур айĕнче нуша курса пурăнакан халăхăн пурнăçĕ тухса тăрать. Вулакан авторпа пĕрле халăха тискер пусмăрлакан обществăлла строя курайми пулать. Чăвашгосиздат, Лу Синь калавĕсене чăвашла куçарса кăларса, питĕ пысăк ĕç тунă. Вĕсем урлă пирĕн тăван халăх Китай халăхĕн иртнĕ пурнăçĕ, хăйĕн иртнĕ пурнăçĕ пекех, пусмăрлă та тертлĕ пулнине курать, унăн чĕринче Китай халăхĕпе тăванла туйăм çуралать.

Кĕнеке çинчен çырнă чух, юлашкинчен, çакна каласа хăвармалла. Кĕнекене пухса хатĕрлекенĕ хăйĕн ĕçне вĕçне çитереймен пек курăнать. Темĕн сăлтавпа писателĕн «Асран кайнă çын çырса пыни», «А-Кью пурнăçĕ çинчен çырса кăтартни» ятлă калавĕсем кĕнекене кĕмесĕрех юлнă. Асăннă калавсем Лу Синь творчествинче уйрăмах паллă та пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Лу Синь произведенийĕсем чăвашла тухни пысăк событи пулса тăрать, мĕншĕн тесен «литература халăхсене пĕр-пĕринпе темрен те лайăхрах паллаштарать» (М. Горький).

Чăвашгосиздатăн пуçарнă лайăх ĕçе малалла та туса пымалла. Китай халăхĕн ытти писателĕсем çырнă произведенисене те чăвашла куçарса кăларма тăрăшмалла.

**Н. ИВАНОВ.**

## ПĔР АКТЛĂ ПЬЕСĂСЕМ

Чăваш АССР государство издательстви юлашки вăхăтра художествăлла пултарулăх кружокĕсем валли пĕр актлă пьесăсем пичетлесе кăларчĕ.

**Н. Терентьев.** Ĕлĕкрен туслисем. Комеди. 16 стр., тиражĕ 2000 экз., хакĕ 40 пус.

**К. Пайраш.** Кинемей. 20 стр., тиражĕ 2000 экз., хакĕ 45 пус.

**С. Агранович, И. Листов.** Хаклă вăхăт. Вырăсларан Н. Амурцев куçарнă. 20 стр., тиражĕ 2000 экз., хакĕ 45 пус.

**С. Павлов.** Хаклă хăна. 20 стр., тиражĕ 2000 экз., хакĕ 55 пус.

**А. Александров.** Баланс тухрĕ. 16 стр., тиражĕ 2000 экз., хакĕ 30 пус.

**Г. Мухтаров.** Туссем. 20 стр., тиражĕ 2000 экз., хакĕ 45 пус.

**Н. Айзман.** Ăмăртупа юрату. 28 стр., тиражĕ 2000 экз., хакĕ 65 пус.

**Г. Пласкин.** Хӳри вĕçне туй килсен. 20 стр., тиражĕ 2000 экз., хакĕ 45 пус.

# ЧĔЛĔМ КАВĔРЛИ КАЛАВĔСЕНЧЕН

## ИРĔКСĔРТЕН ПУЛĂÇА ТУХНĂ ÇЫН

Пушă вăхăтра эпĕ пулла çӳреме юрататăп. Паян та акă кӳлĕ хĕррине килсе лартăм, анчах темшĕн пулă хыпмасть: темиçе уланкă тата пĕр-икĕ кăртăш çеç тытрăм.

Пулли сахал, çапах та эпĕ шӳрпе пĕçерсе çиме шутларăм. Ан тив ĕнтĕ, шӳрпи шĕвĕ пулсан та, пуллине хам тытнă, шӳрпине уçă çĕрте, пулă ишсе çӳрекен шывпа пĕçерем, терĕм...

Пулла тасатса пĕчĕк витрене ятăм та, вут чĕртсе, шӳрпе пĕçерме çакрăм.

Шыв ăшăнма çеç тытăннăччĕ, вут çути патне пĕр çын пырса тухрĕ: ваткăллă тумтир тăхăннă хăй, сăран картузпа, уринче—резина атă. Ман пата çитсенех, вăл вăлта хуллисене хăва тĕмĕ çумне тирпейлĕ тăратрĕ, сумкине те хывса туратран çакса ячĕ.

— Вут çути курса килтĕм,— терĕ вăл.—Юрать пуль те?.,

— Мĕншĕн юрамасть пултăрха?.. Лар та, килти пекех пул,— терĕм эпĕ.

— Санăн шӳрпе пиçеймен-и-ха?

— Çук, халь ăшăнса та çитеймерĕ-ха.

— Тен, пая кĕрес мар-и?— сасартăк ыйтрĕ вăл.—Манăн сакăр кăртăшпа виçĕ уланкă тата пысăках мар шампа пур...

Эпĕ нимĕн иккĕленсе тăмасăрах килĕшрĕм.

Вăл пуллине тасатса таврăнчĕ те манăн витрене ячĕ.

Пулăç тепĕр пулăçа тĕл пулсан, вĕсем çавăнтах юлташланса каяççĕ, пĕр-пĕринпе темĕн çинчен те тус пек калаçаççĕ, пĕр хуранта шӳрпе пĕçерсе çиеççĕ, пĕр кружкăран чей ĕçеççĕ.

Шӳрпе вĕренĕ хушăра эпĕ те тин килнĕ çынпа çавăн пекех паллашрăм. Унăн тумтирĕнчен бензинпа çу шăрши пенĕ тăрăх, вăл шофер пулмалла, тесе шутларăм.

Эпир çанталăк çинчен, ун çинчен, кун çинчен калаçкаласа, витреренех пулă шӳрпи çиме тытăнтăмăр.

Манăн юлташ пулă шӳрпине пĕр-икĕ кашăк ăсса сыпрĕ те кашăкне сумкине чикрĕ.

— Çук, пултараймастăп,—терĕ вăл.

— Мĕнле апла?—ыйтрăм эпĕ.

— Пулла та, пулă шӳрпине те çиместĕп эпĕ...

— Ан тĕлĕнтер!.. Пулăç пулăран ютшăнать!., Тĕлĕнмелле!

— Çапла çав,— тесе сумкинчен помидор кăларчĕ те, ăна тăвар çине пуçа-пуçа, çăкăрпа çиме тытăнчĕ.

Эпĕ хăйне пӳлменнине кура, вăл хĕрсе кайсах калаçать:

— Эпĕ çеçенхир тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ çын. Вуникĕ çула çитиччен юхакан шыва пачах та курман. Чĕрĕ пулла вара пĕр курçирĕм çулалла çитсен тин куртăм, унччен пулă шывра пурăннине те вуланă кĕнекесем тăрăх çеç пĕлнĕ..,

Эпĕ тĕлĕннипе ним калама аптрарăм.

— Итлеме кăмăл пулсан,—терĕ вăл малалла,— хам мĕнле майпа пулăçа тухни çинчен те каласа парам-ха сана... Пулла çӳреме те эпĕ государство укçи-тенкипе вĕрентĕм вĕт...

— Мĕнле апла?

— Çаплах... Таврăнтăм ĕнтĕ çартан, паллах, вăрçă пĕтнĕ хыççăн. Хăналантăм ялта пĕр-икĕ эрне. Ĕçсĕр йăлăхсах çитрĕм. Аçта каяс-ха?.. Манăн икĕ специальность: тракторист тата шофер. Тракторпа эпĕ тупăсем, грузсем турттарнă, анчах акасуха туса курман. Хулана кайса пĕр-пĕр çĕре шофера кĕме шут тытрăм. Килсе кĕтĕм, хваттер те пачĕç мана. Халĕ те çавăнтах ĕçлетĕп. Кунта, эпĕ ĕçе кĕнĕ çĕрте, çăмăл автомашина пурччĕ, машини самай çĕнĕскерччĕ, анчах те тыткалама пĕлменнипе, те урăх сăлтавпа чылаях лутăркаса тăкнăччĕ ăна. Унпа пирĕн пуçлăх ларса çӳретчĕ, машинăна типтерлĕ те таса тытса усрама хушатчĕ. Çур çул ĕçлерĕм: пушă вăхăтра машина çуначĕсене тӳрлетрĕм, лакпа сăрласа çутатрăм, ăшчикне те сӳтсе юсарăм.

Кĕркунне енне пирĕн пуçлăха аслăрах вырăна куçарчĕç, ун вырăнне пирĕн пата çĕнĕ пуçлăх ячĕç... Çапла, çĕнĕ пуçлăхпа çӳрерĕмĕр. Пылчăкне-лаприне, хĕллехи кĕртне пăхмасăр, районсене те кая-кая килетпĕр, тепĕр чухне пире буксирласа та таврăнаççĕ. Шăпах та хĕл варринче манăн машина нумайлăха стройран тухрĕ: передача шестернисем тĕпренсе пĕтрĕç.

Чĕнтерчĕ мана пуçлăх.

— Ну, машина мĕнле?—ыйтрĕ вăл.

— Япăх-ха,—тетĕп,—икĕ шестерне çĕнĕрен тутарас пулать.

— Акă мĕн,—терĕ вăл, приказ панă пек, хыттăн.—Машинăна списать тăватпăр...

— Мĕншĕн?..—тĕлĕнсе ыйтрăм эпĕ.—Вăл халĕ лайăх машинаçке!.. Çав шестернĕсене лартсан, юсамасăрах тепĕр çулталăк йĕркеллĕ çӳреме пултарать...

— Эсĕ ăна списать тума хатĕрле,—терĕ вăл, эпĕ каланине илтмен пек.—Часах акă комисси чĕнсе килетпĕр...

— Мĕнле хатĕрлемелле-ха манăн ăна списать тума?—ыйтрăм унран.

Пуçлăх мана ăнлантарса пачĕ:

— Хатĕрле, тĕсрен яр машинăна. Анчах асту,—пуçлăх сасартăк самантлăха пӳлĕнсе ларчĕ.—Унăн моторĕ лайăх вĕт-ха?

— Питĕ лайăх...

— Асту: моторне эпир кимĕ çине лартатпăр. Списать тума хатĕрленĕ чухне те, списать тунă хыççăн пăснă чухне те кимĕ валли юрăхлă пайĕсене пĕрне те ан тив...

Укĕнтĕм эпĕ кабинетран тухсан: хам пирки ыйтса пĕлменшĕн ӳкĕнтĕм. «Машина пулмасан, мана мĕншĕн ĕçре тытса усраччăр-ха»,—терĕм хама-хам.

Çапах та машинăна списать тума хатĕрлерĕм. Кĕçех комисси те пырса акт çырса кайрĕ. Кĕскен каласан, эпир пуçлăхпа калаçнă хыççăн уйăх та иртмерĕ—пирĕн машинăна списать тума приказ пачĕç.

Часах кимĕ кăшкарне те картишне кӳрсе килчĕç.

Мана каллех пуçлăх чĕнсе илчĕ.

— Кимми пирĕн акăш пек шурă, ухă йĕппи пек хăвăрт каяканскер пулмалла. Ун пек кимĕсем çулла Атăл хĕрринче пурччĕ, вĕсене шыраса тупса кайса пăх: мĕнле тунă вĕсене...

Пĕр килнĕ пек чухне тесе, эпĕ унран хам пирки ыйтса пăхма шут тытрăм:

— Манăн урăх вырăн шырамалла-и вара?—терĕм эпĕ ăна.

— Мĕншĕн?

— Машина çук, сире шофер та кирлĕ мар пуль...

— Кам каларĕ ăна сана? Машина çук-тăк, кимĕ пулать... Эсĕ, акă мĕн... Каларăм сана: кимĕсене кайса кур, вĕсене мĕнле тунине тĕплĕн пăхса тух, унтан ху та хамăр кимме юсаса йĕркелеме, ун çине мотор вырнаçтарса лартма тытăнăн. Хăшпĕр ĕçсене тума сана кирлĕ çынсем те тупса парăпăр.

Кимĕпе икĕ уйăх ытла аппалантăм: тулашне йĕс шуçтимĕр сăрса, чăлт шурă белилăпа сăрларăм, мотор вырнаçтарса лартрăм...

Эпĕ мĕнле ĕçленине пуçлăх кашни кунах пыра-пыра пăхатчĕ, кăтартусем паратчĕ, кирлĕ япаласем туянма, пĕр-пĕр деталь тутарма укçа шеллесе тăмастчĕ. Хама та шофер тесех ĕç укçи тӳлеççĕ.

Атăл пăртан тасалсан, моторкăна шыва кайса ятăмăр, каллех тĕрĕслесе пăхрăмăр: лайăх ишет, хăвăрт пырать.

Кĕçех манăн пурнăç йĕрки те пачах улшăнса кайрĕ: эрнере пĕр талăк ĕçлетĕп те ултă кун нимĕн те тумастăп. Моторка пире эрнере пĕр кун çеç кирлĕ-мĕн. Мĕншĕн?.: Ара, пирĕн пуçлăх пулăç иккен. Шăматкун вĕсем, иккĕнвиççĕн пухăнса, ĕçме-çиме илсе, кимĕ çине лараççĕ те çĕр выртмалла пулла яра параççĕ. Вĕсемпе пĕрле эпĕ те моторист пулса каятăп. Çу каçах çапла çӳрерĕмĕр. Вĕсем пулă тытма саланса пĕтеççĕ, эпĕ вара моторка çине тăсăлса выртатăп та ыйăха çаптаратăп... Хăйсемпе пĕрле вĕсем мана апат çитереççĕ, черкке те тыттаркалаççĕ.

— Мĕнле-ха эсĕ пулăпа пĕртте интересленместĕн?—ыйтрĕ манран пуçлăх пĕрреччен.

— Пĕлместĕп эпĕ, нихçан та тытса курман,—терĕм эпĕ.

— Хăтланса пăх,—терĕ вăл мана. Вăлта та пачĕ.

Пуçларăм вара пулă тытма. Вăлта хулккине пăхса ларма питĕ селĕм-мĕн. Вĕренсе кайрăм вĕт, усал йăлана хăнăхнă пекех, хăнăхса çитрĕм алла вăлта тытса ларма. Халĕ ĕнтĕ эпĕ, эрнере пĕрре пулла каймасан, хама валли вырăн та тупаймастăп,—терĕ вăл.

Вăл каласа пани мана питĕ тĕлĕнтерчĕ: эпĕ ăна ыйтусем те паркаларăм, вăл вара çав кимĕ государствăна вăтăр пин тенкелени çинчен каласа пачĕ.

Çапла ĕнтĕ, хаклă вулаканăм, государство шучĕпе те пулăçа тухма пулать иккен. Паллах, кунта ман çĕнĕ юлташ айăплă мар, унăн «ырă» пуçлăхне вăлтана çаклатмалла!

ЯЛАВ № 11 (107)
НОЯБРЬ — 1954

ЕЖЕМЕСЯЧНЫЙ ЛИТЕРАТУРНО-ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ И ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКИЙ ЖУРНАЛ СОЮЗА СОВЕТСКИХ ПИСАТЕЛЕЙ ЧУВАШИИ
ИЗДАТЕЛЬ: ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО.

Редколлегия: М. Романов (отв. редактор), В. Алагер, А. Артемьев, В. Долгов, И. Тукташ, Я. Ухсай, С. Шавлы.

*Рукописи не возвращаются.* Тех. оформление И. Григорьева.

НТ 00419. Подписано к печати 29/XI-1954. Объём 6,165 п. л. Заказ 2989. Тираж 4900 экз. Цена 2 руб.

Адрес редакции: Чувашская АССР, г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 1. Телеф. № 8—36.
Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.




## *1955 ҫулшӑн „Ялав“ журнал ҫырӑнса илӗр!*

# „Я Л А В“

ЧӐВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛӖСЕН СОЮЗӖ УЙӐХРА ПӖРРЕ КӐЛАРАКАН ИЛЕМЛЕ ЛИТЕРАТУРАПА ОБЩЕСТВАЛЛА-ПОЛИТИКӐЛЛА ЖУРНАЛ.

**ЖУРНАЛ ХАКӖ:**

ҪУЛТАЛӐКА—24 ТЕНКӖ; УЙРӐМ НОМЕРӖ—2 ТЕНКӖ

*Подпискӑна „Союзпичетӗн“ пур уйрӑмӗнче те йышӑнаҫҫӗ.*

**Пурте „Ялав“ журнал ҫырӑнса илме васкӑр!**


Ж.Д.
49